К 83.39(=чув)
М 20
Ч-41506

Николай Малышкин

# ЕЛЧĔК ЕНĔН ПУЛТАРУЛĂХ ÇЫННИСЕМ

Çĕрпÿ — 2000 çул

Национальная библиотека ЧР
4-041506

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Николай Малышкин

# ЕЛЧĔК ЕНĔН ПУЛТАРУЛĂХ ÇЫННИСЕМ

Çĕрпӳ — 2000 çул

УДК 894.344.0+7.0
ББК 83.3 (2Рос=Чув)+85
М20

Рецензентсем:

**А. А. Трофимов**: искусствоведени докторĕ
**Г. Ф. Юмарт**, аслă ăслăлăх ĕçтешĕ

Кĕнекене редакцилесе йĕркелекенĕ **А. А. Николаева**

ПРОВЕРЕНО
20 СО 21 МАР 2017

**Малышкин Н.Ф.**
М20 Елчĕк енĕн пултарулăх çыннисем.— Çĕрпÿ, 2000 ç.
— 144 стр.

Кĕнекене Елчĕк районĕнче çуралса ÿснĕ çыравçăсем, сцена ăстисем, ÿнерçĕсем кĕнĕ. Унта вĕсен кун-çулĕ, пултарулăхĕ çинчен çырса кăтартнă.

4-41506

Лицензия ЛР № 040992 от 28 июля 1999 г.

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

# ЧЫС, МУХТАВ СИРЕ, ЕЛЧĔКСЕМ!

*Николай Карлин*

Елчĕк енĕ ĕлĕкрен илемлĕ.
Чăн тӳперен илĕртет хĕвелĕ.
Пăла шывĕн хумĕсем
Кĕвĕлеççĕ юрăсем.
Эх, мĕнле хитре вырăнсем!
Чыс, мухтав сире, елчĕксем!

Елчĕк енĕн çыннисем тĕреклĕ,
Халăх çинче яланах хисеплĕ.
Пуç таймалăх ватăсем,
Савăнмалăх çамрăксем.
Эх, мĕнле маттур ачисем!
Чыс, мухтав сире, елчĕксем!

Елчĕк енĕ пурлăхран чухăн мар,
Ырă çынна пехиллет пархатар.
Ĕçре ылтăн алăсем —
Юрă-ташă ăстисем.
Эх, мĕнле патвар ентешсем!
Чыс, мухтав сире, елчĕксем!

# УМСĂМАХ

Чĕмпĕрти чăваш шкулне чăннипех те халăх шкулĕ, чăваш культурин сăпки теççĕ. Чăвашсемшĕн вăл пĕрремĕш университет, консерватори, ӳнер шкулĕ. **Иван Яковлевич Яковлев** (1848—1930) тата унта вĕренекенсенчен чылайăшĕ çут ĕçне, культурăна, ăслăлăха аталантарас енĕпе чапа тухнă. Паллă педагог 400 ытла чăваш шкулĕ уçнă. Вăлах Елчĕкре икĕ класлă, Кивĕ Эйпеçĕнче пĕр класлă шкулсем йĕркеленĕ, 1891 çулта Аслă Елчĕкре шкул çурчĕ туса лартма пулăшнă. Унăн çамрăк чухнехи çывăх юлташĕ, пĕрремĕш вĕренекенĕ тата пулăшаканĕ **Алексей Васильевич Рекеев** (1848—1932), 1882 çулта Кивĕ Эйпеçри чиркĕве ĕçлеме кĕнĕ, шкулта вĕрентнĕ. Вăтăр пилĕк çул, пенсие тухиччен вăй хунă. Мĕн виличченех, вăл чăваш халăхне çутта кăларассишĕн, унăн культурине ӳстерессишĕн тăрăшса пурăннă. Хăйĕн укçи-тенкипе сакăр шкул тытса тăнă. Алфавит, букварь йĕркелеме хутшăннă. Шупашкарти наци музейĕнче А.Рекеев ячĕпе кивĕ эйпеçсем янă 350 çыру упранать.

**Игнатий Иванович Иванов** (1848—1885) та Тутарстанри паллă чăваш ялĕнчен — Кăнна Кушкинчен. 1876—1883 çулсенче Курнавăш шкулĕнче вĕрентнĕ. Чире пула вăхăтсăр тухса кайма тивнĕ. Букварь валли тутарларан текстсем куçарнă, 14 калав, пĕр очерк хайланă.

Кĕçĕн Пăла тăрăхĕнче **Михаил Данилович Данилова** (1881—1937) астăвакансем те пур. Тăвай районĕнчен тухнă çамрăк Пасарлă Елчĕкре (хальхи Елчĕк) мăшăрĕпе пĕрле вунă çул хушши учительте ĕçленĕ. Раççейри малтанхи революци тапхăрĕнче вырăнти революционерсен юхăмне хастар явăçнă. Совет тапхăрĕнче шкулсенче, пичетпе музей ĕçĕсенче чылай тăрăшнă. 1912 çулта «Вĕри çĕлен» кĕнеке кăларнă, 1932 çулта «Нарспи» поэмăна инсценировка тунă. Н.Гоголĕн «Ревизор», Л.Толстойăн «Пур инкек

те çавăнтан» камичĕсене куçарнă. Елчĕкре çаван пекех Комсомольски районĕнчи Нĕркеçре çуралнă пултаруллă вĕрентекен **Клементий Степанович Скворцов** та ĕçленĕ.

В.И.Ленин ашшĕ — **Илья Николаевич Ульянов** (1831—1886) — Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи халăх шкулĕсен директорĕ пулнă. Çавна май чăваш ене те сахал мар килсе çӳренĕ. 1876 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнче Лаш Таяпари шкулта пулса ĕçлĕ сĕнӳсем-хушусем хăварнă.

**Николай Иванович Золотницкий** (1829—1901) Аслă Елчĕк шкулĕн шăпипе интересленсе тăнă, пĕрикĕ хутчен яла та килнĕ. Малтанхи директорĕпе Ефим Петрович Петровпа (Пичугинпа) тачă çыхăну тытнă.

«Çеçен хирлĕ» Елчĕк çĕрĕ ытти çĕрте çуралса ӳснĕ çыравçăсене те хапăлланă. Хĕрӳллĕ революционер, вутçулăмлă сăвăç-публицист **Тайăр Тимкки** (1889—1916) çамрăклах патша тытăмне хирĕç кĕрешĕве тухма хăраман. Хăюллă шухăшсемпе ĕçсем ăна Елчĕке те илсе çитернĕ. Кунта вăл литература, листовкăсемпе прокламацисем салатнă. Социал-демократсен кружокĕсенчи хастарçăсемпе вăрттăн калаçу пуçарнă.

1909—1910 çулсенче **Илле Тăхти** (1889—1938) пасарта кĕнекесем сутма кăмăлланă.

1919 çулхи ака уйăхĕнче **Çеçпĕл Мишшине** (1899—1922) тата ытти хăш-пĕр çамрăксене кунти тăрăха янă. Хресченсен пухăвĕсенче ăнлантару ĕçне туса ирттернĕ, парти ячейкисем йĕркеленисĕр пуçне, яш-кĕрĕме ком-сомола пĕрлештерме хатĕрленĕ. Каярахпа, 1920 çулхи çу уйăхĕн 8-мĕшĕнче, районта комсомол ушкăнĕ чăмăртаннă.

Чăвашсен 20-мĕш çулсенчи паллă критикĕ тата прозаикĕ **Исаев Мĕтри-Авраль** (1905—1930) 1927 çулта парти райкомĕн агитаципе пропаганда пайне ертсе пынă.

**Митта Ваçлейĕ** (1908—1957) Чĕмпĕрти педагогика техникумĕнче Совет Союзĕн Геройĕпе **Александр Филипович Беляевпа** (1908—1943) вĕреннĕ. Пĕрле виçĕ-тăватă хутчен те район центрĕнче пулнă. Вĕсене иккĕшне те сăмахлăха чунтан парăнни çывăхлатнă. Александр Филиппович ытларах прозăна юратнă, Митта — поэзие.

«Ют» çёртен килнĕ вĕрентекенсен, çыравçăсен пултарулăхĕ хамăр енчи ытти яшсене те хавхалантарнă-тăр — ăсталăх вучахĕнче пиçĕхсе нумай ентеш пурнăçăн анлă çулĕ çине тухнă: медицина ăслăлăхĕсен докторĕ **Ю.С.Сергеева** (1900—1949),**Г.Н.Волков**, **Х.М.Миначев**, **И. Н. Никитин** академиксем, СССР халăх учителĕ **П.Н.Чернов**, чăвашсен пĕрремĕш Олимп паттăрĕ **А.В.Игнатьев** (1930—1998), Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ артистки **В.И.Голубева**, Узбек Республикин тава тивĕçлĕ артистки **Л.А.Шакова**, Чăваш Республикин халăх художникĕ, Чăваш республикин К. В. Иванов ячĕллĕ Патшалăх премийĕн лауреачĕ **В.И.Агеев**, Чăваш республикин халăх артисчĕсем **М.Г.Бикулова** (1919—1985), **И.О.Молодов** (1905—1999), **И.И. Христофоров**, СССР Патшалăх премийĕн лауреачĕ **А.И.Сурков**, Ленин премийĕн лауреачĕ **П.А.Перепелкин**, Чăваш Республикин Çамрăксен патшалăх премийĕн лауреачĕ **В.В.Трофимов** т. ыт. те.

Сăмахлăхпа ăслăлăх лаççинче хастарлă вăй хунисен вăрлăхĕ ыттисенче те никĕсленнĕ. Ку кĕнеке вĕсен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе кĕскен паллаштарать. Материалсене пухса çырма пулăшнăшăн Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн ăслăлăх ĕçтешĕсене Г.Ф.Юмарта, В.Г.Харитоновăна, искусствоведени докторне А.А.Трофимова, районти историпе тăван тавралăх музейĕнче ĕçлекен В.Г.Вастуловăна, Г.А.Адюковăна, А.А.Николаева редактора чĕререн тав тăватăп.

...Район халăхĕ ĕлĕк-авалтан çĕр ĕçлекен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен ĕçчен кăна мар, юрлама-ташлама, сăвă-кĕвĕ калама, юмах-халап яма та ăста пулнă. Çавăнпа ăс-хакăлпа культура никĕсĕн пултаруллă çыннисене пĕлме тивĕçлĕ эпир. Ку кĕнеке чăваш чĕлхипе литературине, тăван ен культурине вĕрентекенсемшĕн, вулав тата культура çурчĕсенче ĕçлекенсемшĕн уйрăмах вырăнлă пулма кирлĕ.

# ÇЫРАВÇĂСЕМ



## АЛЕКСЕЕВ БОРИС АЛЕКСЕЕВИЧ

**Борис Алексеевич Алексеев (Альбор)** 1913 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче Хĕрлĕçыр ялĕнче çуралнă. Ашшĕ 1920 ç. граждан вăрçинче пуçне хунă. Тăрмăшри пуçламăш, Кĕçĕн Елчĕкри çичĕ çул вĕренмелли (1924—1931) шкулсенчен вĕренсе тухать. Патăрьелĕнчи педагогика техникумĕнче (1932—1935) вĕреннĕ тапхăрта халăх ĕçне хастар хутшăнать, стена хаçачĕн редакторĕ, сăмахлăх кружокĕн ертӳçи пулать.

1935 ç. кăрлачран пуçласа Комсомольски районĕнчи Нĕркеçри шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет, темиçе шкулсен пĕрлештернĕ профсоюз комитетне ертсе пырать.

— Çав тери интереслĕ вĕрентетчĕ, нумай вулатчĕ. Ӳкерчĕксем тума ăстаччĕ, ăна кура ачасем те сăвăсем çырма пуçларĕç, — тет Валентина Минеева журналист.

1939—1941 çç. — Патăрьелĕнчи 1-мĕш вăтам шкул учителĕ. «Альбор» псевдонимпа «Сунтал» журналта, «Çамрăк большевик», «Авангард», «Колхоз ялавĕ» хаçатсенче сăвăсем пичетлет. «Виçĕ хулăн тетрадьреччĕ унăн хайлавĕсем», — çырать учительте, директорта ĕçленĕ С.И.Ичанкин. Ĕçленĕ хушăрах Б.Алексеев Мускаври М.Горький ячĕллĕ писательсен институтĕнче пĕлĕвне малалла тăсать.

1941 ç. учительсемпе, аслă классенчи ачасемпе пĕрле ăна та Улатăр районне окопсем чавма ярассĕ. Пушă вăхăтра тĕне хирĕçле калаçусем ирттерет. Çавăнпа ăна турра ĕненекенсем питĕ курайман. Çак сăлтава пула раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче вăл пурăнакан килĕн хуçи ăна пуртăпа çапса вилмеллех амантать. Пирвай ӳтне Патăрьел шкулне илсе пыраççĕ, унтан Хĕрлĕçыра илсе килсе пытараççĕ.



# АНДРЕЕВ ОЛЕГ ФЕДОРОВИЧ

**Олег Федорович Андреев (Афалек Энтепе)** 1950 çулхи авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче Энтепе ялĕнче çуралнă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн хими факультетне (1969—1973), Чулхулари партин аслă шкулне (1980—1982) пĕтерет. 1973—1975 çç. Аслă Пăла Тимешĕнчи вăтам, Энтепери сакăр çул вĕренмелли шкулсенче учительте, 1975—1976 çç. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕнче ĕçлет. Совет Çарĕнчен таврăнсан каллех комсомол ĕçне пуçăнать, малтан пай пуçлăхĕ, унтан пĕрремĕш секретарь. Пултарулăхне кура пысăк вырăнсене шанса параççĕ: КПСС райкомĕн организациллĕ пай пуçлăхĕн, секретарĕн, пĕрремĕш секретарĕн тивĕçĕсене 1981—1991 çç. туса пырать. 1991 çултанпа — тăван ялĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорĕ.

О.Андреев — РФ Çыравçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1993). Чăваш енре тухса тăракан хаçат-журналсенче çеç мар, Тутарстанра, Пушкăртстанра та тăтăшах пичетленеççĕ унăн сăввисем. 1988 ç. «Çулшырав», 1989 ç. «Хутăш вăрман», 1991 ç. «Киле таврăнни» кĕнекесем кăларать. Унсăр пуçне унăн тарăн шухăшлă, философиллĕ сăввисем çак сборниксенче тухнă: «Çĕнĕ кĕвĕ» (1975, 1976), «Юратнă кĕнекесем» (1975, 1989), «Çеçпĕл çеçкисем»(1984).

О.Андреев темиçе хутчен райсовет депутатне суйланнă. Ăна ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе (1980) наградăланă.

**О. Андреев** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Л. Волков.** Çамрăксен сасси. — Коммунизм ялавĕ, 1985, кăрлач,1.

**А. Артемьев.** Чуна уçса ăшпиллĕн калаçар-и? — Тăван Атăл, 1985, 6 №.

**В. Энтип.** Время свершений. — Молодой коммунист, 1985, июнь, 15.

**В. Эктел.** Тĕшши мĕн тути. — Тăван Атăл, 1988, 8 №.

**В.Енĕш**. Поэт — çутçанталăк чури. — Колхоз ялавĕ, 1991, утă, 27.

# АФАНАСЬЕВ ПЕТР ОНИСИМОВИЧ



**Петр Онисимович Афанасьев** 1874 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕнче Элекçей Тимешĕнче çуралнă. Кивĕ Эйпеçĕнчи пуçламăш шкула пĕтерсен (1887) Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен шкулта вĕренет. Кĕçĕн Елчĕкри, Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пĕкĕлме уесĕнчи Рунгино ялĕнчи пуçламăш шкулсенче ĕçлет. Ун хыççăн Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕн 4-мĕш класне вĕренме кĕрет, 1899 ç. ăна 1-мĕш разрядпа вĕренсе пĕтерет. Çав çулах Мускаври тĕн академийĕн сăмахлăх уйрăмĕн студенчĕ пулса тăрать. «О школьно-просветительной системе для инородцев Поволжья» темăпа кандидат диссертацийĕ хатĕрлет.

Ăна 1914—1915 çç. «Министерство народного образования» журналта пичетлет.

1903 ç., академи пĕтерсен, П.Афанасьев Чĕмпĕрти чăваш учителĕсене хатĕрлекен шкулта вырăс чĕлхи вĕрентет. 1905—1909 çç. Рязаньти, пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланиччен Мускав кĕпĕрнинчи Поливановăри учительсен семинарийĕнче вăй хурать.

Çак тапхăрсенче вĕрентӳпе ăслăлăх ĕçне тӳрремĕнех пуçăнать. 1910 ç. «Для народного учителя» журналта унăн пĕрремĕш ĕçĕ кун çути курать. Вĕрентӳ, пĕлӳлĕх меслечĕ енĕпе çырнă малаллахи статьясем «Вестник воспитания»,«Родной язык в школе»,«Педагогический вестник» тата ытти журналсенче те пичетленеççĕ. Октябрьти революци хыççăн кăна 40 ытла вĕренмелли кĕнеке, пособи кăларать.

1914 ç. П.Афанасьева Ярославльти учительсен институтне куçараççĕ. 1918 ç. пуçласа мĕн виличчен Мускаври аслă шкулсенче тата тĕпчев институтĕнче вăй хурать. В.И.Ленин ячĕллĕ пединститут (халĕ университет) профессорĕ, педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ, педагогика ăслăлăхĕсен Академийĕн аслă наука сотрудникĕ, вырăс чĕлхин паллă пĕлӳлĕх меслетçи пулса тăрать.

1925—1930 çç. Мускаври Тĕп педагогика лабораторине ертсе пырать. Вырăс чĕлхин пĕлӳлĕх меслечĕ тĕлĕшпе чылай ăсчах хатĕрлет. 20—30-мĕш çулсенче вăл тӳрреммĕн хутшăннипе пуçламăш тата вăтам шкулсем валли хатĕрленĕ вырăс чĕлхи программисем пичетленсе тухаççĕ.

Вăл пĕтĕм чăваш культурине аталантарассишĕн кĕрешет. 1927 ç. Мускавра чăваш еткерлĕхне тĕпчекен общество тăвас ĕçе хастар явăçать, ăна ертсе пырать. Унăн уйрăмĕсем Хусан, Уфа, Чĕмпĕр, Самара, Пăкăрăслан хулисенче йĕркеленеççĕ, тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ.

П.Афанасьев 1944 çулхи çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче Мускавра вилнĕ.

Кĕнекесем:

«Методические очерки о преподавании родного языка», М., 1914; «Методика родного языка», М.,1921; «Активно-трудовой метод обучения», М., 1924; «Методика родного языка в трудовой школе», Л., 1924; «Путеводитель по вопросам преподавания родного языка в трудовой школе», М., 1924; «Родной язык в трудовой школе», М., 1924; «Русский язык в комплексной системе преподавания» 1—6 изд., М., 1924—1928; «Краткая методика родного языка», 1—6 изд., Л.М., 1925; «Читай, пиши, считай», М., 1925; «Методы обучения грамоте в связи с комплексной системой», М., 1926; «Методика русского языка в образцах и проработках», М., 1930; «Методика русского языка в школах повышенного типа», М., 1930; «Как обучать письму в школе 1-й ступени», М., 1932; «Как

подготовиться к уроку», М., 1932; «Как преподавать грамматику в начальной школе», М., 1932; «Методика чтения и работы с книгой в начальной школе», М., 1932; «Обучения грамоте», М., 1932; «Объем знаний и навыков по русскому языку в школе 1-й ступени и методы проработки», М., 1932; «Русский язык в начальной школе», М., 1933; «Методика русского языка», М., 1934, 1938; «Учебник русского языка для чувашской начальной школы», Ч., 1935; «Методические указания к русскому букварю для нерусских школ», М., 1938; «Учебник русского языка для начальной школы»(Соавтор И.Н.Шапошников), М., 1938; «Хрестоматия по истории методов преподавания русского языка в начальной школе», М., 1941; «Методика русского языка в средней школе», М., 1-е изд., 1944; 2-е изд., 1947.

**П. Афанасьев** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**С. Редозубов.** Петр Онисимович Афанасьев. — В сб.,«Методисты советской начальной школы». М.,1958.
«Педагогическая энциклопедия». Т. 1, М., 1964, с. 151.

**В. Сейфуллин.** Соотношение формального и материального образования в Симбирской чувашской школе.—В кн.:«И.Я.Яковлев. Воспоминания». Ч., 1971.

**П. Сидоров.** Ученăй-педагог. — Колхоз ялавĕ, 1972, юпа, 7.

**П. Сидоров.** Мухтавлă пурнăç. — Колхоз ялавĕ, 1974, нарăс, 12.

**Г. Александров. Ю. Смирнов.** Чуваши в дореволюционных учебных заведениях. Ч., 1994, с. 37—39.

**А. Симулин.** Профессор-русист из чувашской глубинки. — Советская Чувашия, 1994, март, 31.

**Г. Александров, П. Васильев.** Видный методист русского языка. — Народная школа. Ч., 1994, № 2—3.



# ВОЛКОВ ГЕННАДИЙ НИКАНДРОВИЧ

**Геннадий Никандрович Волков** (Кашкăр Хуначи) — Раççей Вĕрентӳ академийĕн членĕ. Вăл 1927 çулхи юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче Аслă Елчĕкре çуралнă. 1935—1945 çç. ялти тата Елчĕкри шкулсенче вĕренет. Аттелĕх вăрçи тапхăрĕнче (1943—1945) — Ленин ячĕллĕ колхозри уй-хир бригадин бригадирĕн пулăшаканĕ, машинăпа трактор бригадин бригадирĕ.

1945—1949 çç. Чăваш патшалăх педагогика институчĕн физикăпа математика факультетĕнче, 1949—1952 çç. Хусанти педагогика институчĕ çумĕнчи аспирантурăра пĕлĕвне ӳстерет.

Г.Волков 1950—1954 çç. Хусанта арçынсен çичĕ çул вĕренмелли шкулĕнче физик, Чăваш патшалăх педагогика институчĕн педагогика кафедринче аслă преподаватель пулса ĕçлет. 1954—1957 çç. — институт доцентчĕ, аслă наука сотрудникĕ, 1967—1971 çç. — наука ĕçĕсен проректорĕ.

Профессор каярахпа РСФСР Çутĕç министерствин Наукăпа тĕпчев институчĕн педагогика секторĕн пуçлăхĕнче, Эрфуртри (ГДР) Теодор Нойбауэр ячĕллĕ аслă шкулта (1979—1982) педагогикăпа психологи секцийĕнче тăрăшать. 1984—1991 çç. Мускаври наци шкулĕсен тĕпчев институчĕн, 1992 çултанпа Раççейри Вĕрентӳ академийĕн этнопедагогика лабораторийĕсене ертсе пырать.

Г. Волков — РСФСР Педагогика обществин чăваш уйрăмĕн Президиумĕн членĕ (1961—1973), педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ (1967), Аслă аттестаци комиссийĕн

членĕ, РСФСР Çыравçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1982), çичĕ Диссертаци канашĕн членĕ.

Ăна çакăн пек наградăсем тата хисеплĕ ятсем панă: К.Д.Ушинский ячĕллĕ преми лауреачĕ (1967), «РСФСР çут ĕç отличникĕ» (1967), «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль (1970), ВЛКСМ Тĕп комитечĕн Хисеп грамоти (1970), Я.А.Коменский ячĕллĕ музейăн асăну медалĕ (1970), К.Д.Ушинский медалĕ (1977), ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамоти (1977), Эрфурт университетĕнчи Гердерăн ылтăн медалĕ (1982), Эрфурт университечĕн хисеплĕ докторĕ (1984), ЧАССР тава тивĕçлĕ учителĕ (1987), Саха (Якути) Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, Кăркăсстан çут ĕç отличникĕ, Н.К.Крупская медалĕ, «Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ» (1997). Г.Волковăн пĕрремĕш хайлавĕ («Манăн асанне») 1946 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче «Чăваш коммуни» хаçатра пичетленнĕ. Халĕ вăл — çĕршер-çĕршер статья авторĕ.

**Кĕнекисем:**

Чăвашла:

“Туслăхра—вăй”,Ш.,1952;“Шкул ачисене ялхуçалăх ĕçĕсене юратма вĕрентесси”,Ш.,1956; “И.Я.Яковлев — чăваш халăх педагогĕ”,Ш., 1959; “Вăрăм алă”, Ш.,1960; “Шăллăмсемпе йăмăксем”, Ш., 1963; “Пурнăç тыткăчи”, Ш.,1966; “Юманпа хĕвел”, Ш., 1976; “Тăван сăмах” (соавторĕ Л.И.Михайлова), Ш., 1989.

Вырăсла:

“Политехническое обучение в сельской школе”, Ч., 1957; “Чувашская народная педагогика”, Ч., 1958; “Коллектив сельской школы на творческом пути”, Ч., 1958; “Сказки и рассказы бабушки”, Ч., 1959; “О традициях чувашского народа в эстетическом воспитании”, Ч., 1965; “Этнопедагогика чувашского народа”, Ч., 1966; “Трудовые традиции чувашского народа”, Ч., 1970; “Этнопедагогический очерк”, Ч., 1970; “И.Я.Яковлев и его школа”, Ч., 1971; “Этнопедагогика”, Ч., 1974; “К.Д.Ушинский и современные проблемы просвещения”, Ч., 1974; “Прогрессивные традиции

народной педагогики в опыте А.С.Макаренко, М., 1978; "Созвездия земли", Ч., 1979; "Сознательная дисциплина — неотъемлемое качество будущего воина", Майкоп, 1987; "Педагогика жизни, мир детства, царство мудрости", Ч., 1989; "Современное функционирование народной педагогики как феномена демократии и гуманизма в сфере воспитания", Ч., 1993; "Воспитание любви к сельскохозяйственному труду у школьников", Ч., 1996; "Судьба патриарха", Ч., 1998.

**Г. Волков пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:**

**А. Алексеев.** Шăллăмсемпе йăмăксене халалласа çырнă кĕнеке. — Ялав, 1963, 12 №.

**А. Гордин.** Слово о народной педагогике. — Воспитание школьников, 1967, № 4.

**Е. Молоствов.** Профессор тополĕсем. — Колхоз ялавĕ, 1972, çĕртме, 27.

**С. Соловейчик.** Народный, педагогический. — Семья и школа, 1979, № 4.

**П. Сидоров.** Пирĕн ентеш — ученăй — ГДРта. — Колхоз ялавĕ, 1980, çу, 24.

**Е. Васильев.** Исследователь народной педагогики. — Учительская газета, 1982, сентябрь, 27.

**В. Иванов.** Чебоксары — Эрфурт — Берлин. — Учительская газета, 1983, октябрь, 13.

**Д. Егоров, П. Матвеев.** Çĕршывăн мухтавлă ывăлĕ. — Пионер сасси, 1987, юпа, 31.

**Е. Васильев.** Тăван халăх ячĕпе. — Тăван Атăл, 1987, 10 №.

**П. Печков.** Тăван шкул ĕлĕк тата халĕ. — Колхоз ялавĕ, 1991, юпа, 5.



# ДОБРОХОТОВ НИКОЛАЙ СЕРГЕЕВИЧ

**Николай Сергеевич Доброхотов** 1921 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче Патреккел ялĕнче çуралнă. Ялти пуçламăш шкула вĕçленĕ хыççăн, 1936 çулччен Аслă Елчĕкри çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренет.

1937—1939 çç. Канашри педагогика училищинче пĕлĕвне малалла тăсать. 1939 ç. авăн-чӳк уйăхĕсенче Патреккелĕнчи тулли мар вăтам шкул учителĕ пулса ĕçлет.

1939—1946 çç. Хĕрлĕ Çарта хĕсметре тăрать, Аслă Аттелĕх вăрçине хутшăнать. Ăна I степень Отечествăлла вăрçă, III степень Мухтав орденĕсемпе, «Хăюлăхшăн», «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» медальсемпе наградăланă.

Çартан таврăнсан, Н.Доброхотов 1956 ç. нарăс уйăхĕччен Аслă Елчĕкри, Патреккелĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. 1952 ç. вăл Чăваш патшалăх учительсен институтĕнчен куçăмлă майпа вĕренсе тухать.

1956—1959 çç. — «Колхоз ялавĕ» хаçат редакторĕ. 1959 ç. кăрлач уйăхĕнчен пултаруллă журналист Чăваш АССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи радиовещанипе телевидени комитечĕн корреспонденчĕ пулса тăрăшать. Вăл 1961 ç. ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче сарăмсăр вилнĕ.

Унăн тĕрлĕ жанрпа çырнă хайлавĕсем республикăри хаçат-журналсенче тăтăшах пичетленнĕ. Вăл виçĕ кĕнеке авторĕ: «Кукуруза пирĕн уйра», «Çулталăкра 800 сысна самăртассишĕн», «Гвардеец» колхозри механизаторсем».

**Н. Доброхотов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:
**Н. С. Доброхотов.** — Колхоз ялавĕ, 1961, ака, 19.



Ч-41506
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА

# ЕФИМОВ АНТОН ЕФИМОВИЧ

**Антон Ефимович Ефимов** 1885 çул тĕлнелле Тӳскел ялĕнче çуралнă. Кĕçĕн Елчĕкри икĕ класлă шкултан вĕренсе тухать. Хăйĕн пурнăç тăршшĕпех таврари ăста çĕвĕç пулнипе чапа тухнă. А. Ефимов 1921 çулхи выçлăх вăхăтĕнче Çĕпĕре тухса кайнă та унта тифпа чирлесе вилнĕ.

А.Ефимов пултарулăхĕ паян кун «Чарусăр Кĕрилепе ун ывăлĕ Хĕлип» ятлă пĕчĕк поэма, «Ĕçкĕçпе куштан» сăвă çырнипе тата «Упа вăйçипе хурлăхлă хресчен» юрра чăвашла куçарнипе паллă. Ялти ватăсем каланă тăрăх, вăл хăйĕн революци шухăш-кăмăллă хайлавĕсене вăрттăн вула-вула кăтартнă. Асăннисемсĕр пуçне, А.Ефимовăн ытти сăвăсем те пулнă. Хăшне-пĕрне Кĕçĕн Елчĕкре ĕçленĕ паллă учитель М. Д. Данилов урлă Н. В. Никольские Хусана ярса панă.

Унăн кĕске биографийĕпе сăввисем «Революцичченхи чăваш литератури» кĕнекере тухнă (II том, Ш., 1988).



4-41506

# ЕФИМОВ ДМИТРИЙ ЕФИМОВИЧ

**Дмитрий Ефимович Ефимов** 1892 çулта Тӳскел ялӗнче çуралнӑ. Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче пӗлӳ илет, Хусанти университета вӗренсе пӗтерейместь, 1919 çулта ӳпке чирӗпе чирлесе вилет.

Халлӗхе Д.Ефимов Пушкӑртстанри Федоровка тата Аваркас районӗсенчи чӑваш ялӗсенче учительте ӗçлени паллӑ. Вӑл çав вӑхӑтра (1910 çул тӗлнелле) çырнӑ поэмӑн ал çырӑвӗ тупӑннӑ. Унӑн ячӗ те, пуçламӑшӗ те упранайман. Тӗп сӑнарне пула поэмӑна каярахпа «Васик» ят панӑ.

Октябрьти революци çӗнтерӗвӗсене чӑвашсем хушшинче çирӗплетес ӗçре Д.Ефимов малти ретре тӑнӑ. 1918 ç. кӑрлачра Хусанта иртнернӗ Пӗтӗм Раççейри чӑваш салтакӗсен съездӗнче çӗнӗ самана идейисене хастар хӳтӗлет.

Д.Ефимов — «Канаш» хаçатӑн пӗрремӗш редакторӗ. Малтанхи вунӑ номерне «Редакци коллегийӗ» тесе, 11—53 номерӗсене хӑй алӑ пуснӑ. (1918 ç. çурла уйӑхӗн 5-мӗшӗнчен пуçласа хаçата Д.Эльмен редактор пулса кӑларса тӑма пуçланӑ).

Автор хӑй вӑхӑчӗн çивӗч ыйтӑвӗсене хаçатра çутатса парать. Çакна хӑш-пӗр ум сӑмах ячӗсем те çирӗплетеççӗ: «Вӑрçӑпа революци» (10 №), «Российӑпа ют патшалӑхсем» (35 №), «Хальхи вӑхӑт çинчен» (36 №), «Коопераци» (44 №), «Çимӗç ӗçӗпе вӑрçӑ» (52 №).

Политикӑпа хуçалӑх ыйтӑвӗсемсӗр пуçне, культурӑпа çут ӗç пурнӑçне те тишкерет. «Чӑваш театрӗ» статьяра, малтанхи чӑваш драмине — М.Акимовӑн

«Вăхăтсăр вилĕмне» лартса пани çинчен хакласа çырнă май, вăл наци культурин çул-йĕрне çапла курать: «Малтан халăх хăйĕн ырлăхне, усăллăхне, кирлине, кирлĕ мара хăй пĕлекен пурнăçра сăнласа, хăй тĕллĕн çырнă кĕнекесем вуласа, театрсем курса пĕлмелле. Вара вăл ют халăх пурнăçне те хăй ăсĕпе часах çавăрса илме вĕренĕ».

Кунашкал тĕслĕх пайтах тупăнать. Çӳлерех асăннă ĕçсем Д.Ефимов ăста публицист пулнине пĕлтереççĕ. Вăхăтне, йывăр лару-тăрăва кура унăн уйрăм сулнăксем те пулнă. Сăмахран, вăл «Чăвашсен ушкăнĕ» туса хунипе питĕ хавхаланать. Анчах ку туртăм революци идейисене сивленисене пĕлтермест. Вăл чылай çыннăн ун чухнехи шырав çулĕ пулнă.

Хаçата ертсе пынипе пĕрлех Д.Ефимов ытти ĕçе те кӳлĕнет. Ăна пуш уйăхĕнче кĕпĕрнери çут ĕçне çĕнĕлле йĕркелеме коллегие суйлаççĕ. 1918 ç. раштавра вăл чăвашсен малтанхи журналне «Шурăмпуçа» йĕркелеме хутшăнать. Журналти литература пайĕн редакторĕ. Пичетре «Д», «Е», «М-ри», «М-и» псевдонимсемпе усă курать.

**Д. Ефимов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**К. Ванеркке.** Çыру. — Канаш, 1919, 171 №, авăн, 12.

**Г. Юмарт.** Пĕрремĕш редактор. — Чăваш журналисчĕ, 1988, çу, 5.

**Революцичченхи чăваш литератури**, II том, Ш., 1988, 318-324 с.

**Н. Малышкин.** Сăвăçăн хăналăх вăхăчĕ. — Хыпар, 1997, утă, 3.



# ЖИРНОВ АНАТОЛИЙ ВАСИЛЬЕВИЧ

**Анатолий Васильевич Жирнов** 1928 çулхи нарăсăн 24-мĕшĕнче Тĕмерте çуралнă. Ялти çичĕ çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухсан Патăрьелĕнчи педагогика училищинче (1942—1945) пĕлӳ пухать. Ун хыççăн (1945—1948) Кĕçĕн Таяпари, Тĕмерти çичĕ çул вĕренмелли шкулсенче пуçламăш классенче учительте тата аслă пионервожатăйра ĕçлет.

Сăвă çырас туртăм унăн шкул çулĕсенчех аван палăрнă. Стена хаçачĕсем кăларма хутшăннăскер, хăйĕн хайлавĕсене тăтăшах пичетленĕ. Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ тапхăрта та пултарулăхне çирĕплетсех пырать. Тĕп тивĕçне пурнăçланисĕр пуçне «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче, нумай хаçатра сăвăсем пичетлет, фельетонсем çырать, критика ĕçне хутшăнать.

Малашлăхлă çамрăкăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлать. А.Жирнов 1954 çулхи çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕнче сарăмсăр вилет.

Ун çинчен пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем çапла аса илеççĕ: Александр Аслут çыравçă:

— 50-мĕш çулсенче «Коммунизм ялавне» ĕçлеме пултаруллă çамрăксем чылайăн пынă. Литература сотрудникĕнче тăрăшнă май, Анатолий пичетре самаях курăнатчĕ. Çамрăксен хайлавĕсене тишкеретчĕ. Леонид Агаков, Василий Давыдов-Анатри, Стихван Шавли, Аркадий Малов çыравçăсемпе туслă ĕçлетчĕ.

В.И.Давыдов-Анатри, Чăваш Республикин халăх поэчĕ:

— Толя лайăх юлташчĕ. Кăмăлĕ аванччĕ. Çынлăхĕ пысăкчĕ. Пытарнă чух пулаймарăм. Кайран Иван Никифоров фотокорреспондентпа унăн вил тăпри умĕнче пуç тайрăмăр...

# ИВАНОВ АЛЕКСЕЙ ИВАНОВИЧ



**Алексей Иванович Иванов** 1898 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче Ĕнел ялĕнче вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Империализм вăрçи пуçланас умĕнхи çул Кĕçĕн Елчĕкри икĕ класлă училищĕрен вĕренсе тухать, Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен чăваш шкулне кайса кĕрет.

1917 ç., укçа-тенкĕпе апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен пысăк йывăрлăхсем сиксе тухсан, вĕренекенсене килĕсене яраççĕ. А.Иванов вара пĕр вăхăт хушши Пăва уесĕнчи кĕçĕн классен учителĕнче ĕçлет. Колчак çарĕ Чĕмпĕре çывхарсан, 1919 ç. çуркунне хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара çырăнать, И.С.Космовский ертсе пыракан полкра çапăçать, аманать, мĕн виличченех аяк пĕрчинчи тăшман пульлипе çӳрет.

А.Иванов пичет ĕçне 1918 ç. явăçать, «Çĕнĕ пурнăç» хаçатпа тачă çыхăну тытма пуçлать. Каярахпа «Çутталла» хаçатăн тата «Атăл юрри» журналăн яваплă секретарĕ пулса тăрать. 1921—1927 çç. тӳрремĕнех пичет ĕçĕпе пурăнать. Вăл Мускавра Чăваш секцийĕн издательство редакторĕнче вăй хурать.

30-мĕш çулсенче сăмахлăхпа чĕлхе ĕçне пуçăнать. 1939—1941 çç. ăсчах ЧАССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕн чĕлхе секторĕн ăслăлăх сотрудникĕнче ĕçлет. 1941—1951 çç. — «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн яваплă секретарĕ, 1951—1958 çç. — Чăваш кĕнеке издательствин вĕрентӳпе меслетлĕх редакцийĕн сотрудникĕ. 13 çул обществăлла майпа Шупашкарти В.И.Ленин музейĕнче пропагандист-экскурсоводра тăрăшать.

А.Иванов 1983 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ. Вăл чăваш орфографине туса хатĕрлес енĕпе пысăк ĕç тунă.

22 çул орфографи комиссийĕн членĕнче тăрать, хаçат-журналсенче нумай ăслăлăх статйисем пичетлет. В.И.Ленинăн «Государство и право», «Две тактики социал-демократии в демократической революции» (хыççăмах), «СССР географийĕ. Çичĕ çул вĕремелли шкулпа вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнче вĕренмелли учебник» (Ш., 1959, соавторĕ М.Р.Романов) ĕçсене куçарнă. Ăслăлăх кĕнекисенче вуншар статья пичетленĕ. Хаçатсенчи хайлавсенче «Элекçей» псевдонимпа та усă курнă.

**Ĕçĕсем:**

**А. Иванов, Н. Данилов.** Терминологи словарĕ. Ш., 1940.

**А. Иванов, М. Николаева.** Чăвашла-вырăсла словарь. Ш., 1948.

Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. Ш., 1951.

Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ., Ш.,1963.

**А. Иванов, С. Горский, Д. Филиппова.** Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ. Ш., 1967.

**А. Иванов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**А. Алексеев.** Чувашский лингвист. — Советская Чувашия, 1968, март, 29.

**Л. Сергеев.** Пичет ветеранĕ тата тĕпчевçĕ А.И.Иванов. — Коммунизм ялавĕ, 1968, пуш, 30.

**А. Алексеев.** Алексей Иванович Иванов. — Ученые записки, Ч., 1969, вып. 39, с. 245—247.

**И. Кузмичев.** Как и прежде, в строю. — Советская Чувашия, 1981, август, 30.

**А. Иванов.** В краю боевой юности... — Советская Чувашия, 1981, октябрь, 27.

## ИВАНОВ ЮРИЙ ПЕТРОВИЧ



**Юрий Петрович Иванов (Юриссан)** 1963 çулхи пуш уйăхĕн 6-мĕшĕнче Кĕçĕн Таяпа ялĕнче çуралнă. Ялти шкулта, Шупашкарти 18-мĕш профессипе техника училищинче (1980) вĕренет. 1981—1983 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă хыççăн тĕрлĕ вырăнта ĕçлет. 1991 çултанпа Шупашкарти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕ.

Ю.Иванов хаçат-журналсенче чылайранпа пичетленет. Ытларах вырăсла çырма кăмăллать. Унăн сăввисене К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш Республикин патшалăх тата чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премисен лауреачĕ Юрий Айдаш поэт куçарнă. Сăвăсен пĕр ярăмĕ «Осень Патриарха» кĕнекере çапăнса тухнă.

Сăвăç ăсталăхĕ çулсерен ӳссе пырать. Хĕвел тухăç кĕрешĕвĕн меслечĕсемпе интересленнĕ май, поэзире Дао философине тĕп вырăна хурать. Çак тĕп шухăш тăтăшах тата çирĕппĕн тымарланса пырать. Хайлавĕсем хăйсен илемлĕ сăнарлăхĕпе, пурнăçри пек чăнлăхĕпе, хăйне евĕрлĕ кĕвĕпе палăрса тăраççĕ. 1996 çултанпа ЧР Çыравçăсен пĕрлешĕвĕн членĕ.

**Ю. Иванов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

Писательсен Союзĕ йышланать.—Хыпар,1996, чӳк, 21.

Юрий Иванов сăввисем. — Колхоз ялавĕ, 1996, раштав, 17.

**Н. Алексеев.** Тĕрлĕ енлĕ пултарулăх. — Колхоз ялавĕ, 1997, çу, 6.



# КАДЫШЕВ МИХАИЛ СЕМЕНОВИЧ

**Михаил Семенович Кадышев** 1934 çулхи раштавăн 5-мĕшĕнче Çĕнĕ Пăва ялĕнче çуралнă. 1953 ç. тăван ялĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Хусанти Н.Э.Бауман ячĕллĕ ветеринари институтне кайса кĕрет. Пилĕк çултан ученăй-зоотехник ятне илет.

Ун хыççăн Тутар Республикинчи «Красный Октябрь», хамăр районти «Прогресс» кохозсенче, 1965—1976 çç. Елчĕк райĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕнче тĕп зоотехник, 1976—1978 çç. Чăваш республикинчи хăмла ĕрчетес енĕпе ĕçлекен производствăпа ăслăлăх пĕрлешĕвĕн «Чувашхмельпром» начальникĕн çумĕ, 1978—1982 çç. çавăнтах тĕп зоотехник пулса ĕçлет. Каярах — республикăри «Чувашплодоовощхоз» пĕрлешĕвĕн тĕп зоотехникĕ. Юлашки ĕç вырăнĕ — Чăваш енри хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç кантурĕн пуçлăхĕ.

М.Кадышев 1970 ç. Шупашкар парти хула комитечĕ çумĕнчи марксизм-ленинизм университетне, 1974 ç. Мускав облаçĕнчи Балашихăри Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх институтĕнче экономика факультетне хăй тĕллĕн вĕренсе пĕтерет.

Сăввисене вăл çамрăклах çырма пуçлать. Малтанхи хайлавĕсем пуçласа 1955 ç. Хусанта тата Куйбышевра, Ульяновск облаçĕсенче чăвашла тухса тăракан хаçатсенче кун çути кураççĕ. Каярахпа «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче, «Çеçпĕл çеçкисем», «Атăл кĕввисем» кĕнекесенче пичетленеççĕ.

М.Кадышев 1992 çулхи пуш уйăхĕнче чире кайса вилнĕ.

Ăна Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен Пĕтĕм Союзри Куравĕн Тĕп Комитечĕн бронза медалĕсемпе (1967, 1974), «Ĕçри паттăрлăхшăн», «Владимир Ильич Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа» юбилей медалĕпе (1970), «Хисеп Палли» орденпа (1973) наградăланă.

# КЕДРОВ НИКОЛАЙ МИХАЙЛОВИЧ

**Николай Михайлович Кедров** 1874 çулхи нарăсăн 4-мĕшĕнче Кĕçĕн Елчĕкре çуралнă. 1886 ç. ялти пĕр креслă училищĕне пĕтерет, тепĕр çултан Теччĕри уес училищине кĕрет. 1890 ç. асăннă училищĕрен, 1892 ç. Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать. Чĕмпĕр уесĕнчи Ирçелти пĕр креслă шкулта учительте ĕçлет. 1894 ç. Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕн 4-мĕш класне йышăнаççĕ, виçĕ çултан ăна 1-мĕш разрядпа вĕçлет. 1897—1901 çç. Хусанти тĕн академийĕнче ăс пухать. Кандидат ĕçĕ — «Школа как средство христианского просвещения инородцев».

Чăвашсен паллă историкĕ, этнографĕ Г.И.Комиссаров аса илĕвĕ тăрăх, Н.Кедровпа тепĕр чăваш студенчĕ О.Романов 1900 ç. тăван чĕлхепе кĕнекесем кăларма шутлаççĕ. Цензурăран ирĕклĕх илес тĕллевпе повеç ячĕсене тĕнпе çыхăнтараççĕ. Н.Кедров «Аçуна-аннӳне хисепле, хăвнах аван пулĕ», юлташĕ «Хĕн-хур куракан çынна турă пăрахмасть» тесе ят параççĕ. Хусанти учительсен семинарийĕн вăл вăхăтри пуçлăхĕ Н.А.Бобровников асăннă ĕçсене пичетлеме ирĕк парать. Çав çулхинех, авторсен ячĕсене палăртмасăр, вĕсене Хусан университечĕн типографийĕнче 3000-шер экземпляр кăлараççĕ. Чăваш учителĕсене, пачăшкисене салатса параççĕ.

Академи пĕтернĕ хыççăн, Н.Кедров Ирбит хулинчи (Пермь кĕпĕрни) арçынсен гимназийĕнче, каярахпа Бузулук хулинче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Октябрьти революци хыççăн Самарти

вĕрентет. Октябрьти революци хыççăн Самарти иккĕмĕш сыпăклă чăваш шкулĕнче ĕçлет. 1937 çулта шалкăм çапнипе вилет.

**Ĕçĕсем:**

Н.М.Охотниковпа В.К.Магницкий çинчен çырнă статьясем. 1892, 1901.

«Японипе японецсем çинчен» (1905) ятлă историпе географи очеркĕ.

Николай Иванович Золотницкий и его деятельность по образованию чуваш. — Русская школа, 1906, № 5—6, с. 92—103.

Василий Константинович Магницкий (некролог). — Известия по Казанской епархии, 1901, № 8, с. 368—373.

**Н. Кедров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Х. Уяр.** Сăмах мехелĕ. Ш., 1980, 112 с.

Чувашская литература, тенденции развития, стилевые поиски. Сб. статей. Ч., 1983, 14—15 с.

Революцичченхи чăваш литератури. (XX ĕмĕрччен). Ш., 1984, 292—316 с.

**Г. Александров, Ю. Смирнов.** Чуваши в дореволюционных учебных заведениях. Ч., 1994, с. 41—42.



# КОМИССАРОВ ВАЛЕРИЙ ПЕТРОВИЧ

**Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

**Валерий Петрович Комиссаров** 1956 çулхи пуш уйăхĕн 14-мĕшĕнче Яманчӳрелте çуралнă. Ялти сакăр çул вĕренмелли, Лаш Таяпари вăтам шкулсене (1963—1973) пĕтерсен виçĕ çул Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче, 1976—1979 çç. Мускаври М.В.Ломоносов ячĕллĕ патшалăх университетĕнче журналистика ĕçне вĕренет.

1979—1988 çç. республикăра «Коммунизм ялавĕ» хаçат корреспонденчĕ, 1988—1992 çç. ЧР Журналистсен пĕрлешĕвĕн ответлă секретарĕ, 1992 çултанпа председатель пулса ĕçлет.

В.Комиссаров СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1980), РФ Журналистсен пĕрлешĕвĕн Федераци Канашĕн членĕ (1993), РФ патшалăх Думин депутачĕн С.Н.Федоровăн пулăшуçи (1996). 1996 çултанпа Чăваш патшалăх университечĕн журналистика факультечĕн доценчĕн тивĕçĕсене пурнăçлать.

«Чебоксары — Шупашкар» (Ч.,1994), «Чувашская Республика. Приглашение к сотрудничеству», (Ч., 1997) кĕнекесен авторĕ. Предприятисем, организацисем, учрежденисем çинчен редактор-хатĕрлевçĕ 20 ытла кĕнеке пичетленĕ.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1997), РФ Журналисчĕсен пĕрлешĕвĕн премийĕн, С.Элкер ячĕллĕ ЧР Журналисчĕсен пĕрлешĕвĕн премийĕн лауреачĕ (1998).

**В. Комиссаров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**О. Горчаков.** Приглашение к сотрудничеству. — Советская Чувашия, 1997, июль, 11.

**П. Сидоров.** Паллашма тата ĕçлĕ çыхăнусене çирĕплетме. — Хресчен сасси, 1997, утă, 15.



# КУЗНЕЦОВ ГРИГОРИЙ ИВАНОВИЧ

**Григорий Иванович Кузнецов-Кели** 1901 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче Тĕмер ялĕнче çуралнă. Малтан ялти шкулта вĕренет, 1918 ç. Вăрнар районĕнчи Хапăсри икĕ сыпăклă шкула çӳрет, унтан Етĕрне районĕнчи Чурашри учительсем хатĕрлекен семинарие куçать. Унтах çамрăксем хушшинчи ĕçе хастар хутшăнать. 1919 ç. комсомол ретне кĕрет. Пултарулăхне кура каярахпа комсомолăн вулăсри ячейкин яваплă секретарĕ пулма суйлаççĕ.

1920—1923 çç. Г.Кели Хĕрлĕ Çарта хĕсметре тăрать. Ун хыççăн Татчекан Хусан комендатуринче, Шупашкарта обчекара, Патăрьелте милици уйрăмĕнче, çут ĕç пайĕнче ĕçлет.

1924 ç. Шупашкарти чăваш рабфакне вĕренме кĕрет. Хаçатсене хастар çырса тăма тытăнать. Ялсенче докладсем, калаçусем йĕркелет. Спектакльсем лартма пьесăсем çырать.

1926 ç. вăл Ленинградри патшалăх университетĕнче пĕлӳ пухать. Историпе архив ĕçне, вырăс чĕлхипе литературине вĕренет, статьясем, фельетонсем, сăвăсем çырать. Хулари пролетари çыравçисен ассоциацийĕн чăваш секцийĕн членĕ пулнă.

Ленинградра вĕреннĕ вăхăтра Г.Келин ӳпкепе пыр туберкулезĕ пуçланать. 1931 ç. кăрлачăн 23-мĕшĕнче вилсе каять. Ăна тăван ялне пытараççĕ.

Унăн пирвайхи сăввисем — «Ирхи Нева», «Тинĕс», «Ленинград», «Чухăн хĕр шухăшĕсем» 1926—1927 çç. «Сунтал» журналта тата «Çамрăк хресчен» хаçатра

çапăннă. Кусене тата сăвăç çырса хăварнă хайлавсене 1932 ç. «Октябрь кĕввисем» ятпа уйрăм кĕнекен кăларнă.

Г.Кели критикăпа истори ыйтăвĕсене те сахал мар хускатнă: "Ленинградри пролетари писателĕсен чăваш секцийĕ". — Канаш, 1927, раштав, 4.

"Поэзи формисем çинчен". — Сунтал, 1927, 9, 10, 12 №№; 1928, 3, 6 №№.

"Марксистла критикăн хăш-пĕр ыйтăвĕсем". — Сунтал, 1928, 7, 8 №№.

"Эсрелĕн пултарулăхĕ". — Сунтал, 1928, 1 №.

"Ачасен пултарулăхĕ çинчен". — Канаш, 1928, нарăс, 12.

"Чăваш рабфакĕнчен тухнă писательсемпе поэтсем". — Сунтал, 1931, 12 №.

Вăл çавăн пекех Трубина Мархви, В.Алагер, В.Краснов-Асли, М.Аттай, П.Хусанкай, Н.Шупуççынни, Н.Ваçанкка, В.Митта çыравçăсен пултарулăхĕ пирки статьясем пичетленĕ.

**Г. Кузнецов-Кели** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Н. Ваçанкка.** Кам вăл Кели Кĕркурийĕ. — Сунтал, 1931, 12 №.

**В. Долгов.** Кели — революциллĕ поэт. («Октябрь кĕввисем» кĕнеке ум сăмахĕ), 1932.

**В. Долгов.** Г.Кузнецов-Кели. — Тăван Атăл, 1961. 1 №.

**М. Юрьев.** Çĕнĕ пурнăç юрăçи. — Çамрăк коммунист, 1961, кăрлач, 6.

**В. Долгов.** Г.Кузнецов-Кели. — Чăваш календарĕ, 1966.

**П. Ялгир.** Поэт тата критик. — Коммунизм ялавĕ, 1981, кăрлач, 11.

**П. Ялгир.** Революци поэчĕ. — Коммунизм ялавĕ, кăрлач, 1991, 4.

# КУЗНЕЦОВ ИВАН ГЕРАСИМОВИЧ

**Иван Герасимович Кузнецов** (Сенĕк) — Г.Кузнецов-Кели критикăн ашшĕ. Вăл 1880 çулта Тĕмерте çуралнă. Хусанти учительсем хатĕрлекен семинаринче вĕренет. Октябрьти революциччен учительте тăрăшать. 1917 çул хыççăн — парти, совет тата общество ĕçĕсенче. Пĕр тапхăр Самарти Вăтам Атăл крайĕçтăвкомĕн Чăваш секцийĕн инструкторĕнче ĕçлет. 1918 ç. РКП(б) ретне тăрать.

1925 ç. ЧАССРăн Наркомсобесĕнче вăй хурать. Халăх хушшинче ăнлантару ĕçне хастар туса пырать. Çав вăхăтрах «Капкăн», «Сунтал» журналсене, «Канаш», «Коммунар», «Колхозник» хаçатсене статьясем, кулăшла калавсем, очерксем, фельетонсем, сăвăсем çырма тытăнать. 1933 ç. «Сыхă тăр» сборникре, «Вăтам Атăл» альманахăн иккĕмĕш кĕнекинче, 1941 ç. «Йĕплĕ калавсем» сборникра хайлавсем тухаççĕ. «Йĕплĕ хулă» кĕнеке (1932) авторĕ.

Çыравçă 1941 çулта вилнĕ.


**И. Кузнецов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**В. Долгов.** Чăваш литературин сăн-сăпачĕ. Ш., 1963, 277 с.

**Влас Паймен.** Тантăшăмсем. Ш., 1977, 184—194 с.

**Х. Уяр.** Сăмах мехелĕ. Ш., 1980, 161 с.

# КУЗНЕЦОВ ИВАН ДАНИЛОВИЧ



Чăвашсен паллă историкĕ, критикĕ **Иван Данилович Кузнецов** 1906 çулхи утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче Вырăскассинче çуралнă. Литература лаççинче тĕрлĕ псевдонимпа ĕçленĕ: Ким, Куршанак, Тимĕрç Ванюкĕ, Пичура, Йăван Тимрясов. Тăхăр çултах ашшĕсĕр юлать. Ялти, районти, уесри обществăлла-политикăлла ĕçе хастар хутшăнать. 1920—1923 çç. — вулăсри комсомол комитечĕн секретарĕ, райком бюровĕн членĕ, инструкторĕ тата Патăрьел комсомол уесĕн комитечĕн членĕ. 1923—1926 çç. — Шупашкарти рабфакри комсомол ячейкин секретарĕ, комсомол хула комитечĕн членĕ. 1924 ç. писательсемпе журналистсен «Канаш» пĕрлешĕвне кĕрет. Чăваш çамрăкĕсем валли «Çамрăк хресчен» хаçат кăларма пуçару тăвакансенчен пĕри.

И.Кузнецов 1926—1931 çç. Мускаври Хĕрлĕ профессура институтĕнче вĕренет. 1932—1937 çç. парти Чăваш обкомĕн культурăпа пропаганда тата шкулсен пайне ертсе пырать, «Ленин çулĕпе» журнал редакцилет, тĕрлĕ институтсенче доцент, кафедра ертÿçи, хуçалăхпа культура строительствинче ĕçлеме хатĕрленекен çамрăксене истори вĕрентет. Марксизм-ленинизм литературине (çав шутра К.Марксăн хăшпĕр ĕçĕсене) чăвашла куçарать.

Репрессире пулнăскер 1956 ç. Чăваш çыравçисен пĕрлешĕвĕн правленийĕнче литература консультантĕнче тăрăшать. 1956—1958 çç. — Чăваш кĕнеке издательствин директорĕ, 1958—1963 çç. — ЧАССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕ, партбюро секретарĕ, 1963—1968 çç. —

çак институт директорĕ. 1967 ç. истори ăслăлăхĕсен докторĕ тата СССР историйĕ енĕпе профессор ята тивĕçет. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ уçăлсан СССР истори кафедрине (1967—1974) ертсе пырать. СССР Çыравçăсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1934).

Ăна «ЧАССР наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят панă. Халăхсен туслăхĕн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе, медальсемпе, РСФСР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе, ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн икĕ Хисеп грамотипе наградăланă. 1986 ç. ЧАССРĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ.

И.Кузнецов 1991 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ.

**Кĕнекесем:**

Чăвашла: «1905—1907-мĕш çулсенчи революци Чăваш çĕршывĕнче»,Ш.,1930; «Наци ыйтăвĕпе чăвашсен илемлĕ литератури», Ш., 1931; «Большевиксен партийĕ тата чăваш парторганизацийĕн çул-йĕрĕ», Ш., 1931; «Иваново ялĕнчи хресченсем помещиксене хирĕç мĕнлн кĕрешнĕ»,Ш.,1931; «Чăваш республики трахома пĕтерес çул çинче», Ш.,1933; «Атăл паттăрĕ» (Ленин çинчен хывнă юмаха ăнлантарса пани), I-мĕш кăларăм, 1960; 2-мĕш кăларăм,Ш.,1970; «Чăваш культурипе литературин хăш-пĕр ыйтăвĕсем тавра», Ш., 1961; «Çамрăксене коммунизм çинчен»,Ш.,1961; «Чăваш халăх историйĕ çинчен»,Ш.,1962; «Партин виçĕ тапхăрти виçĕ программи»,Ш.,1963; «Саманапа литература»,Ш.,1977; «Истори тĕрĕслĕхĕпе пурнăçри чăнлăх», Ш.,1986.

Вырăсла: «История развития чувашской культуры при царизме», Ш., 1930; «Краткий очерк истории народов СССР», Ч., 1932; «На путях ликвидации трахомы, как царского наследия», Ч., 1933; «Чувашская деревня на пути культурного подъема» (Соавтор С.Кутяшов), Ч., 1934; «Национальные движения в период I революции в России», Ч., 1935;

«Очерки по истории чувашского крестьянства», Ч., 1958; «Очерки по истории и историографии Чувашии», Ч., 1960; «Быт и культура сельского населения Советской Чувашии» (Соавтор А.Сидоров), Ч., 1962; «Крестьянство Чувашии в период капитализма», Ч., 1963; «История Чувашской АССР», I том, 1966; II том, Ч., 1967; «Ленин и трудящиеся Чувашии», Ч., 1970; «В.И.Ленин и социалистическое возрождение народа Чувашии», Ч., 1970; «Акрамовская война», Ч., 1972; «История Чебоксарского электроаппаратного завода» (Соавтор Г.Петров), Ч., 1975; «История Козловского комбината автофургонов» (Соавтор Ю.Смирнов), Ч., 1986.

**И. Кузнецов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**А. Золотов.** «Национализм сĕрĕмне хирĕç» (И.Кузнецов çырнă «Наци ыйтăвĕпе чăвашсен илемлĕ литератури» кĕнеке ум сăмахĕ), 1931.

**В. Долгов.** Литература критики вăйланса пытăр. — Тăван Атăл, 1956, 4 №.

**М. Юрьев.** Писательсен тусĕ. — Ялав, 1963, I №.

**В. Долгов.** Литературной критике — высшую принципиальность. — Советская Чувашия, 1963, май, 12.

**Н. Иванов.** Историк-критик. — Çамрăк коммунист, 1966, нарăс, 25.

**В. Долгов.** Иван Кузнецов. — Ялав, 1966, 6 №.

**В. Дмитриев, Н. Павлов.** Коммунист, критик, историк. — Советская Чувашия, 1966, июнь, 16.

**И. Иванов.** Самана тĕкĕрĕ. — Тăван Атăл, 1978, 3 №.

**П. Денисов.** Халăх хисепне тивĕç. — Коммунизм ялавĕ, 1986, çĕртме, 15.

**А. Горшков.** Туслăх ĕмĕр-ĕмĕре. — Ялав, 1987, 9 №.

**Н. Малышкин.** Çамрăклăхăн пĕр саманчĕ. — Колхоз ялавĕ, 1990, çурла, 21.

**П. Чернов.** Елчĕк шкулĕн утăмĕсем. — Колхоз ялавĕ, 1997, кăрлач, 23.



# МИЛЛИН АЛЕКСАНДР ГЕОРГИЕВИЧ

**Александр Георгиевич Миллин (А. Алгер)** 1927 çулхи раштавăн 28-мĕшĕнче Патреккел ялĕнче çуралнă. 1935—1945 çç. Патреккелĕнчи, Аслă Таяпари шкулсенче вĕренет. 1945—1951 çç. Çурçĕр Тинĕс-Çар Флотĕнче хĕсметре тăрать. 1955 ç. Елабуга хулинчи библиотекарьсен техникумĕнчен, 1966 ç. КПСС Тĕп Комитечĕ çумĕнчи партин Аслă шкулĕнчен вĕренсе тухать.

А.Миллин 1952—1962 çç. — ялти тата районти тĕп библиотека пуçлăхĕ, 1962—1963 çç. — КПСС райкомĕн инструкторĕ, 1963—1965 çç. (районсене пĕрлештернĕ вăхăт) — Патăрьелĕнчи производствăпа колхоз управленийĕн парткомĕн инструктор-организаторĕ. 1965—1971 çç. культура пайĕн пуçлăхĕнче, 1971—1978 çç. «Колхоз ялавĕ» хаçат редакторĕнче вăй хурать. СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1974). Ăна КПСС обкомĕпе Министрсен Канашĕн Хисеп грамотипе (1977) наградăланă, ЧР музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1995) ятне панă.

А.Миллин йывăр чирленĕ хыççăн 1978 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче вилнĕ.

Вăл çырнă статьясемпе очерксем, калавсемпе фельетонсем республикăри пичетре çеç мар, «Правда», «Сельская жизнь» хаçатсенче те тухса пынă. Кĕнекесенче, сборниксенче кун çути курнă: «Юратнă кĕнеке» (1973, 1975), «Пирĕн пултарулăх» (1975, 1977), «Кăвайт умĕнче» (1976), «Дружба» (1977), «Тип мунча» (1977). 1979 ç. ачасем валли çырнă «Вăлта» ятлă уйрăм кĕнеке çапăнса тухать.

# МОЛОСТВОВ ЕФИМ МИХАЙЛОВИЧ



**Ефим Михайлович Молоствов** 1911 çулхи кăрлачăн 14-мĕшĕнче Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă. Чăваш ял хуçалăх Аслă шкулне (1935—1937), Патăрьелĕнчи педагогика училищине (1938—1940), Чăваш патшалăх педагогика институтне (1946—1951) вĕренсе пĕтерет. Тĕрлĕ çулсенче комсомол райкомĕн пропагандисчĕ, политвĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ, 30 çул ытла Энтепе, Каркалар, Аслă Елчĕк шкулĕсенче учитель, завуч тата директор пулса ĕçлет. 1942—1946 çç. Сталинград тата иккĕмĕш Украина фрончĕсенче фашистсене хирĕç çапăçать.

Биолог пулнă май, вăл шкулти çĕр ĕç опытне районта кăна мар, республикăра та çӳллĕ шая çĕклет. Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх куравĕсене хутшăнать. Ачасене воспитани парас, тăван тавралăха сыхлас, тĕрлĕ культурăсем çитĕнтерес тĕлĕшпе çыхăннă ыйтусене хаçат-журналсенче пичетлет.

Е.Молоствов 1986 çулхи ака уйăхĕн 18-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, II степень Отечествăлла вăрçă орденĕпе, «Хăюлăхшăн», «Сталинграда хӳтĕленешĕн», «Прагăна ирĕке кăларнăшăн», «Будапешта илнĕшĕн», «Венăна илнĕшĕн», «1941—1945 çулсенче Аслă Отечествăлла вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн», «Ĕçре палăрнăшăн» медальсемпе, Пĕтĕм Союзри ял хуçалăх куравĕн кĕмĕл медалĕпе, РСФСР Ял хуçалăх Министерствин, ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн, КПСС обкомĕпе Министрсен Канашĕн Хисеп грамотисемпе наградăланă. РСФСР тата ЧАССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ.

**Кĕнекесем:**

«Шкул вăрманĕ», Ш., 1959; «Руками учащихся», Ш., 1960; «Труд — строгий учитель», Ш., 1963; «Вчера и сегодня сельской школы», Ш., 1967; «Çулталăкра 1100 сысна самăртатăп» (А.К.Генераловăпа çырнă), Ш., 1977; «Паттăрсен çулĕпе», Ш., 1985.

**Е. Молоствов** ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

Н.Каменский 1970 ç. «Яльчикский Колумб» очеркра («Щедрая скупость» кĕнекере) çырса кăтартнă.

# НИКОЛАЕВА АНТОНИНА АРСЕНТЬЕВНА



**Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

**Антонина Арсентьевна Николаева (Лазарева)** 1946 çулта Акчел ялĕнче çуралнă. Патреккелĕнчи сакăр çул вĕренмелли, Елчĕкри вăтам шкулсене (1953—1964) пĕтерсен пилĕк çул Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче (1964—1969) чĕлхепе литература уйрăмĕнче вĕренет.

1969—1973 çç. Яманчўрелĕнчи сакăр çул вĕренмелли, 1973—1978 çç. Елчĕкри вăтам шкулсенче директор çумĕнче, 1978—1998 çç. Чăваш кĕнеке издательствинче редактор, редакцисен заведующийĕ, кĕнекесемпе брошюрăсем сутас енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

1998 çулта Хальхи Гуманитари Институтĕнче ректор çумĕн тивĕçĕсене пурнăçлать.

1999 çултан пуçласа Санкт-Петербургăн патшалăх техника университечĕн Шупашкарти экономикăпа менеджмент институтĕнче декан çумĕ, издательство ĕçĕсене туса пыракан пай пуçлăхĕнче тăрăшать.

А.Николаева СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1984), 1992 çултанпа Журналистсен пĕрлешĕвĕн правленийĕн членĕ, 1994 çултанпа Чăваш республикин Журналистсен пĕрлешĕвĕ çумĕнчи С.Элкер премине паракан комиссин членĕнче тăрать.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1996). 1990 çулта А.Николаевăна пĕрремĕш категориллĕ редактор ятне панă. Антонина Арсентьевна Чăваш кĕнеке издательствинче 20 çул ĕçлесе 300 ытла кĕнеке редакцилесе кăларнă, нумай кĕнеке вырăсларан чăвашла куçарнă.

**А. Николаева** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Х. Кучушев.** Алă ăстисем валли 100 ытла канаш. — Чăваш кĕнеке издательстви, 1992.

**И. Матросов.** Архив хучĕсен вăрттăнлăхĕ, 1992.

**Коллектив.** Тĕнче уçлăхне çул хывакансем, 1989.

**Коллектив.** СССР халăх депутачĕсен кун-çулĕ çинчен, 1989.

**Коллектив.** Çын аллинчи вут-кăвар, 1989.

**Коллектив.** Юратнă юрăсем, 1991.

**Коллектив.** Чăваш çĕршывĕ çинчен, 1991.

**Ю. Ефимов.** Чăнлăхăн миçе çул, 1991.

**А. Мокин.** Авкаланса юхать Пăла, 1991 тата ытти те.

# ПЕТРОВ ВАЛЕРИЙ МИХАЙЛОВИЧ



**Валерий Михайлович Петров (Питрав)** 1963 çулхи çурла уйăхĕн 2-мĕшĕнче Çирĕклĕ Шăхальте çуралнă. Ялти вăтам шкултан вĕренсе тухсан (1980 ç.) тăван колхозра ĕçлет. 1981—1984 çç. Лăпкă океан флотĕнче хĕсметре тăрать. 1986—1991 çç. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕренет.

1991 çултанпа Пушкăртстанри Пелепей хулинчи «Урал сасси» хаçатра редактор çумĕ пулса ĕçлет. Унсăр пуçне хулари радиовещани çумĕнчи «Кăлтăрмач» передачăна ертсе пырать. 1995 çултан пуçласа вырăнти Чăваш культура обществин пуçлăхĕн ĕçĕсене тăвать.

В.Петровăн пĕрремĕш сăввисем 10—15 çул каялла районти «Колхоз ялавĕ» хаçатра кун çути курнă. Хальхи вăхăтра «Хыпар» хаçатра, «Капкăн» журналта пичетленет. Ушкăн авторсен «Асамат кĕперĕ» кĕнекере унăн чылай хайлавĕ тухнă: «Йыхрав», «Ятсăр сăвă», «Куккук» т.ыт.те.

**В. Петров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**В. Вастулова.** Пелепейри çыравçă. — Елчĕк ен, 1998, çурла, 4.



# ПРОКОПЬЕВ НИКОЛАЙ АЛЕКСЕЕВИЧ

**Николай Алексеевич Прокопьев** 1932 çулхи нарăсăн 1-мĕшĕнче Çĕнĕ Пăва ялĕнче çуралнă. 1949 ç. вăтам шкултан Мухтав хучĕпе вĕренсе тухать. 1949—1951 çç. Канашри учительсем хатĕрлекен патшалăх институтĕнче, каярахпа Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕренет. Совет Çарĕнче хĕсмет тивĕçĕсене пурнăçлать. Ытти тапхăра районти тĕрлĕ шкулсенче вырăс, чăваш, ют çĕршыв чĕлхисене вĕрентессине, «Колхоз ялавĕ» хаçат редакцийĕнче ĕçлессине парать.

Сăмахлăх ĕçне шкулта вĕреннĕ чухнех пуçăнать. Пирвайхи сăввисем кружок членĕсем кăларса тăракан стена хаçатĕнче тата районти «Колхоз ялавĕ» хаçатра тăтăшах пичетленеççĕ. 1954 çултанпа вара республикăри хаçат-журналсенче çапăнма пуçлаççĕ.

Н.Прокопьев 1983 çулхи пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче вилнĕ. Унăн уйрăм сăввисем «Юратнă кĕнеке» (1960, 1972, 1973), «Атăл кĕввисем» (1967), «Пĕрле вулар-ха» (1991) кĕнекесенче кун çути кураççĕ. Вăл «Кам пĕлмест-ши манăн шăллăма» (1969), «Пĕчĕк тусăмсем» (1973) кĕнекесен авторĕ.

**Н. Прокопьев** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**В. Давыдов-Анатри.** Юхма поэчĕсем, — Тăван Атăл, 1959, 1 №.

**К. Сергеев.** Ĕçчен Владилен. — Пионер сасси, 1969, раштав, 2.

**Е. Кантеев.** Çамрăклăх юрăçи. — Колхоз ялавĕ, 1972, пуш, 1.

# РАЗУМОВ АЛЕКСЕЙ ЕМЕЛЬЯНОВИЧ



**Алексей Емельянович Разумов (Ралек)** 1918 çулта Тӳскел ялӗнче çуралнă. Вăтам пӗлӳ илнӗ хыççăн Патăрьелӗнчи педагогика училищине вӗренсе пӗтерет. 1938 ç., çултаlăк хушши, Курнавăшри шкулта ӗçлет, унтан ăна Хӗрлӗ Çар ретне илеççӗ. Тăван ялӗнчен аякра чухне сăвă йӗркисем уйрăмах ăнăçлă çуралаççӗ. Хӗсметри пурнăç, юратнă çӗршыв çинчен çырнă «Йнçет тухăçра-и...», «Вырмара», «Тăван çӗршыв» тата ытти хăш-пӗр сăввисем «Чăваш коммуни», «Ӗç хӗрарăмӗ» хаçатсенче, «Хатӗр пул» журналта кун çути кураççӗ.

Салтак тумне хывма вăхăт çитсен вăрçă пуçланать. Чăваш каччи тӳрех фронта ăсанать. Поэзи çулӗ çине тухнă çамрăкăн чӗри часах тапма чарăнать, 1942 çулхи пӗр çапăçура пуçне хурать.



# СЕМЕНОВ ГЕОРГИЙ СЕМЕНОВИЧ

**Георгий Семенович Семенов** 1912 çулхи çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче Кармал ялĕнче çуралнă. Ялти, Курнавăшри, Патăрьел районĕнчи Тури Туçари шкулсенче вĕренет. Патăрьелĕнчи педагогика училищинче пĕлӳ илнĕ хыççăн Курнавăшри, Кармалти, Кавалти шкулсенче пуçламăш классенче ĕçлет.

Аслă Аттелĕх вăрçи пуçлансан ăна милици органне ĕçлеме яраççĕ. 1951 çулччен Елчĕкри шалти ĕçсен пайĕнче участокри инспекторта ĕçлет. Ун хыççăн тĕрлĕ вырăнта вăй хурать.

Г.Семенов вуншар сăвă, очерк, калав пичетленĕ. Уйрăмах пьесăсем çырма кăмăллать. Тĕрлĕ кĕнекесенче, журналсенче унăн çак хайлавĕсем пичетленнĕ: «Хура тĕтре», «Инженер-конструктор», «Тунката», «Лекрĕ ҫапкăна», «Туй, туй, туй тесе...», «Аптăраман Раман», «Снежная королева», «Качака», «Вĕç, вĕç, куккук». Вĕсенче автор пурнăç шăйрăкĕсене уççăн çутатать, тӳрĕ кăмăллă пулма хистет.

# СИДОРОВ ВАСИЛИЙ ПЕТРОВИЧ



**Василий Петрович Сидоров (Эктел)** 1950 çулхи нарăсăн 26-мĕшĕнче Лаш Таяпара çуралнă. 1957—1967 çç. вăтам шкулта, 1967—1972 çç. И.Н.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче, 1976—1982 çç. Мускаври М.Горький ячĕллĕ Литература институтĕнче вĕренет.

1972—1974 çç. Узбекистанри Наманганри шкул-интернатра тата политехникумра черчени, сăрă, ĕç урокĕсене ертсе пырать. 1974—1975 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăрать. Район архитекторĕ (1975—1979), Чăваш телевидени студийĕн корреспонденчĕ (1979—1984), «Ялав» журналăн илемлĕх редакторĕ, «Пике» журналăн тĕп редакторĕн çумĕ (1988—1990). 1999 çултанпа Чăваш енри Литература фончĕн директорĕнче ĕçлет.

Василий Эктелĕн пĕрремĕш сăвви «Пионер сасси» хаçатра 1966 ç. тухнă. Тепĕр çултанах республикăри ытти хаçат-журналсенче пичетлеме пуçлать. Мускаври тата тăванла республикăсенчи сăвăсен пуххисенче çапăнать: «Истоки» (1977), «Середина земли родной» (1987) т.ыт.те.

Чылай тапхăр районти «Колхоз ялавĕ» хаçат тата республикăри çыравçăсен пĕрлешĕвĕ çумĕсенчи «Пăла çутисем», «Кĕтрет» литпĕрлешӳсене ертсе пырать.

Сăвăç критика лаççинче те палăрмалла утăмсем тăвать. «Тĕшши мĕн тути» статьяшăн ăна «Тăван Атăл» журналăн (1988) премийĕн лауреачĕ ятне параççĕ. 1988 çултанпа — СССР Çыравçăсен пĕрлешĕвĕн членĕ.

Кĕнекесем:

«Тĕлĕнтермĕшсем», Ш., 1982; «Иртнĕ кун çути», Ш., 1984; «Çĕре тăнлатăп», Ш., 1990; «Чи хитри», Ш., 1991; «Шавкăн», Ш., 1994; «Лили», Ш., 1996; «Юлашки хĕрлĕ çулçă ташши», Кӳкеç, 1998, «Сăвăр çырми», Ш., 1999;

**В. Сидоров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**А. Николаев**. Искусство çыннисемпе тĕл пулни. — Колхоз ялавĕ, 1992, çу, 16.

**В. Атманов**. Не предания, а факты. — Советская Чувашия, 1988, январь, 21.

Советская Чувашия. 1988, январь, 30.

**Н. Теветкел**. Паянхи писатель çул-йĕрĕ. — Хыпар, 2000, ака, 14.

# СИДОРОВ ПЕТР ПЕТРОВИЧ



**Петр Петрович Сидоров** (Петĕр Лаштай) 1947 çулхи çурла уйăхĕн 7-мĕшĕнче Лаш Таяпа ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкул хыççăн 1962 ç. Канашри педагогика училищин шкул уйрăмне вĕренме кĕрет. Çартан таврăнсан Вăрăмхăвари сакăр çул вĕренмелли шкулта кĕçĕн классен учителĕнче ĕçлет. 1975 ç. Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетне пĕтерет.

1969—1976 çç. комсомол органĕсенче тăрăшать: ВЛКСМ Елчĕк райкомĕн пай заведующийĕ, иккĕмĕш секретарь, пĕрремĕш секретарь, обкомăн оборонăллă-массăллă ĕç пайĕн пуçлăхĕ. 1977—1983 çç. — «Урожай» ирĕклĕ спорт обществăн республикăри канашĕн председателĕ.

1983 ç. ăна «Коммунизм ялавĕ» информаципе спорт пайĕн пуçлăхне çирĕплетеççĕ. Юлашки 10—12 çул хушшинче республикăра тухса тăракан хаçат-журналта пине яхăн статья, очерк, репортаж пичетлет. «Советский спорт», «Красная звезда», «Патриот» хаçатсенче, «Спортивная жизнь России», «Физкультура и спорт» журналсенче те кун çути курать.

1988 ç. «Уçă варкăш» сборникре «Пурнăç хушнипе» очерк тухать. «Олимп çулĕ такăр мар» (1988), «Çамрăклăх вутра» (1989), «Афганистан вут-çулăмĕ витĕр» (1990) кĕнекесемшĕн ЧР Журналистсен пĕрлешĕвĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премине параççĕ.

П.Сидоров 1991—1995 çç. Чăваш телерадио-компанийĕн редакторĕнче ĕçлет. Халăха социаллă хӳтлĕх парас, çемье, физкультурăпа спорт, çарпа

патриотизм темисемпе тата халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕллевпе 40 передача эфира кăларать. Çавна шута илсе ЧОКЦ правленийĕ 1994 ç. ăна Алексей Талвир ячĕллĕ премипе чыслать. Атăл çи çар округĕн командующийĕн грамотипе (1995) наградăлаççĕ.

ЧР Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министерствин пресс-службин ертӳçи (1995) — СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1983), РФ Çыравçăсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1994). Район Канашĕн депутачĕ (1973—1974) пулнă.

П.Сидоров физкультурăпа спорта аталантарассишĕн нумай тăрăшать. 1970—1973 çç. штанга йăтассипе республика чемпионачĕсен призерĕ пулнă, 12 хутчен район рекордне çĕнетнĕ. ЧАССР Физкультурăпа спорт министерствин коллегийĕн членĕ (1975), ДОСААФăн республикăри комитечĕн президиумĕн членĕ (1975), йывăр атлетика (1982), кире пуканĕ (1985) енĕпе РСФСР категориллĕ судья. Кире пуканĕ спорчĕн Пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн Президиумĕн членĕ (1991).

**П. Сидоров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**А. Буханец**. Слово о кандидате. — Чебоксарские новости, 1994, ноябрь, 24.

**В. Эктел**. Тăваньен çыравçисем. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 15.

# СТЕПАНОВ АНАТОЛИЙ ИГНАТЬЕВИЧ



**Анатолий Игнатьевич Степанов (Тускил)** 1934 çулхи çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче Тӳскел ялĕнче çуралнă. Елчĕкри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Вăрнарти ял хуçалăх техникумне (1954—1959) кĕрет, зоотехник специальноçне алла илет. Совет Çарĕнче (1955—1957) хĕсметре тăрать. 1959—1960 çç. районти культура пайĕн инспекторĕнче, унтан Кемĕр облаçĕнчи «Тартосский» совхозра вăй хурать.

Ачаранах сăмахлăха туртăннăскер, каярахпа хаçат корректорĕнчен редактора çитет. 1960 ç. Красноармейски район хаçатĕнче ĕçлеме тытăнать. Тепĕр уйăхранах ăна яваплă секретаре куçараççĕ. 1962 ç., район хаçатне пĕтернĕ хыççăн, А.Степанов пĕр вăхăт хушши ВЛКСМ Красноармейски райкомĕн инструкторĕнче ĕçлет. 1963 ç. ăна Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçат редакцине куçараççĕ, литература сотрудникĕнче, ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕнче вăй хурать. 1966—1980 çç. — редакцин яваплă секретарĕ. Унтан икĕ çул ытларах — хаçат редакторĕ. 1982 çултанпа — каллех яваплă секретарь.

Вăл 1972 çултанпа СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ. Ĕçленĕ хушăрах Хусанти В.И.Ульянов-Ленин ячĕллĕ патшалăх университетĕнче вĕренсе журналист профессине алла илет. Сăввисем, статйисем «Ялав», «Тăван Атăл», «Капкăн» журналсенче тата тĕрлĕ хаçатсенче кун çути кураççĕ. Хăш-пĕр хайлавĕсем «Юратнă кĕнекере» (1972, 1973) çапăнса тухаççĕ.

А.Степанов 1991 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче вăхăтсăр вилнĕ.

**А. Степанов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Анатолий Тускил.** — Колхоз ялавĕ, 1979, çурла, 19.

**Степанов А. И.** — Çĕнтерӳ çулĕ, 1991, пуш, 5.

# ТИМОФЕЕВ АНАТОЛИЙ АРТЕМЬЕВИЧ



**Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

**Анатолий Артемьевич Тимофеев** (Сăрнай) 1938 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче Тутар республикинчи Пăва районĕнчи Раккасси ялĕнче çуралнă. Вун пĕрте чухне çурма тăлăх юлать те (вăрçăран аманса таврăннă ашшĕ çĕре кĕрет) хуçалăхра кĕтӳ кĕтет. Çав хушăрах Элшел вăтам шкулне пĕтерет. Ун хыççăн Ульяновск облаçĕнчи Пухтал районĕнче тухса тăракан «Пĕрлешӳллĕ ĕç» хаçатра яваплă секретарьте ĕçлет. Çавăнтан вара вăл яланлăхах журналистикăпа туслашать, 1970 çулччен тĕрлĕ район хаçачĕсенче куçаруçă, литсотрудник, пай пуçлăхĕ, редактор çумĕ пулса ĕçлет.

А.Тимофеев редакцире ĕçленĕ хушăрах Ленинградри издательствăпа полиграфи техникумĕн (1962—1965) техника редакторĕсен виçĕ курсне, Хусанти В.И.Ульянов-Ленин ячĕллĕ патшалăх университечĕн (1964—1969) журналистика уйрăмĕнчен вĕренсе тухать. 1967 çултанпа СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1998).

1970—1971 çç. — Аслă Елчĕкри вăтам шкул учителĕ, 1972—1986 çç. — КПСС райкомĕн инструкторĕ, политвĕренӳ кабинечĕн тата пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ, 1986—1989 çç. — «Колхоз ялавĕ» хаçат редакторĕ.

А.Тимофеев 1989 ç. «Советская Чувашия» хаçатăн кăнтăр районĕсенчи корреспондентне ĕçлеме куçать. «Самана» ятлă сăмахлăхпа публицистика хаçачĕ йĕркелет, унăн тĕп редакторĕ тата издателĕ пулса тăрать.

«Шурăмпуç» журналăн редколлеги членĕ. «Çеçпĕл çеçкисем», «Хусан», «Çамрăк сасăсем», «Ферма хĕрĕсем» тата ытти пĕрлехи сборниксенче пичетленет. Унăн сăввисем тăрăх Филипп Лукин, Анатолий Михайлов, Наум Григорьев композиторсем юрăсем хывнă. «Девичья лирическая» юрри Мускаври «Музыка» издательствăра Ф.Лукинăн «Родной край» (1974) кĕнекинче çапăннă.

**Кĕнекесем:**

«Ырă ят», Ш., 1971; «Хуратул пирĕн уй-хирте», Ш., 1971; «Хуçалăх расчечĕ мĕн парать», Ш., 1973; «Колхозри кайăк-кĕшĕк», Ш., 1973; «Тăвансемĕр, тав сире», Ш., 1991; «Лар, тăванăм, çумма», Ш., 1994; «Фатуна хыв, пикеçĕм...», Ш., 1995.

**А. Тимофеев** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**И. Иноходов.** Утмăлти çын яш пулмасть, пурпĕрех... чун ватăлмасть. — Елчĕк ен, 1998, юпа, 29.

# ТИХОНОВ БОРИС ЛЕОНТЬЕВИЧ



**Борис Леонтьевич Тихонов (Борлен)** 1934 çулхи раштавăн 21-мĕшĕнче Кивĕ Арланкассинче çуралнă. Асламăшĕ халап-юмах ăсти пулнă, ашшĕ-амăшĕ чăваш юрри-кĕввине юратнă. Аппăшĕсем пулăшнипе шкул çулне çитиччене вулама-çырма вĕренет. Энтепери çичĕ çул вĕренмелли, Елчĕкри вăтам шкулсене пĕтернĕ хыççăн, 1951 ç. Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш чĕлхипе литература уйрăмне вĕренме кĕрет. Студентсен ăслăлăх ĕçне хастар хутшăнать. В.Г.Егоров, С.П.Горский, М.Я.Сироткин профессорсем çамрăк сăвăçа пысăк витĕм кўнĕ. Вĕренў çулĕсенчех П.Хусанкайпа, В.Давыдов-Анатрипе, Хĕветĕр Уярпа, Стихван Шавлипе çывăх паллашать. Малтанхи сăввисем «Ялав» журналта пичетленеççĕ. Патшалăх экзаменĕсене «5» паллăсемпе кăна тытнăскере Шупашкара ĕçлеме хăвараççĕ, 1955 ç. хаçатсенче тăлмач, литсотрудник, пай пуçлăхĕ пулса тăрăшать.

«Колхоз ялавĕ» хаçат эрнере 4-шар страницăллă тухма тытăнсан, унта куçать. Çав вăхăтрах «Победа» колхозра «Çĕнтерўшĕн» хаçата йĕркелесе яма пулăшать, яваплă секретарьте ĕçлет.

1961 ç. Пушкăртстана куçса каять. Пĕрлештернĕ районсен хаçатĕнче, шкулта, профтехучилищĕре ĕçлет. 1966 ç. Çтерлĕри вĕрентўпе ĕç комбиначĕн директорне уйăрса лартаççĕ, ăна 12 çул ертсе пырать. Учреждени хăй вăхăтĕнче Пушкăртстанри чи лайăх комбинатсенчен пĕри шутланнă. Опытлăскере

Мускаври учительсен пĕлĕвне ӳстерекен тĕп института икĕ çуллăх курса вĕренме краççĕ. Ун хыççăн В.И.Ленин ячĕллĕ désinstitutри аспирантурăра кандидат минимумĕпе экзаменсене ăнăçлă тытать.

1989 ç. — «Коммунизм ялавĕ», «Урал сасси» хаçатсен ятарлă корреспонденчĕ. 1993 ç. вĕçĕнче тин чăмăртаннă «Сăвар» хаçата редактор çумĕ пулса ĕçлеме чĕнсе илеççĕ. Пĕр вăхăтрах — «Чăваш ен» хаçачĕн республика тулашĕнчи корреспонденчĕ.

Б.Тихонов Пушкăртстанри Чăвашсен обществăпа культура центрĕн ĕçĕнче сумлă йĕр хăварнă, «Урал сасси» хаçата йĕркелеме нумай вăй хунă, Çтерлĕри 1-мĕш шкул-интернатра педкурс, педучилищĕре чăваш уйрăмне уçнă.

Унăн тĕрлĕ жанрпа çырнă хайлавĕсем «Профтехобразование», «Наука и религия» журналсенче, хаçатсенче час-часах кун çути кураççĕ, «Патраев пĕтмест» пьесăшăн ЧР Культура тата наци хутшăнăвĕсен ĕçĕсен министерствин премине тивĕçет.

Б.Тихонова «РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» паллăпа, СССР Çут ĕç министерствин, Пĕтĕм Раççейри кĕнеке юратакансен обществин Хисеп грамотисемпе чысланă, «Чăваш халăх ăсчахĕ» (1994) ят панă. Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ преми лауреачĕ (1999).

**Кĕнекесем:**

«Асатте ялĕнче» (Петĕр Çăлкуçпа пĕрле), Ш., 1994; «Пăрттас патшапа Сăвар Турханĕ», Ш., 1998; Кам вĕт мĕншĕн уйрăлать», Кӳкеç, 1998.

**Б. Тихонов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Борис Борлен.** — Колхоз ялавĕ, 1983, кăрлач, 1.

**Б. Л. Тихонов.** — Колхоз ялавĕ, 1990, юпа, 16.

Самана, 1994, 15 №.

Колхоз ялавĕ, 1994, раштав, 20.

**О. Сазонов.** Борис Борленăн çĕнĕ кĕнекисем. — Елчĕк ен, 1998, юпа, 20.

**А. Казанов.** Халăхра халап сахал-и... — Хыпар, 1998, юпа, 30.

# ТУРХАН ХĔВЕТĔРĔ



XIX—XX ĕмĕрсен чиккинче тăван поэзире сăвăçсен йышĕ хăвăрт ӳсет. М.Федоровпа К.Иванов тапхăрĕсем хушшинчи поэзи пуянлăхĕнче **Турхан Хӳветӳрӳн (Федор Васильевич Васильев)** тӳпи те пур. Вăл 1876 çулхи нарăсăн 13-мĕшĕнче Турхан ялĕнче çуралнă. Кӳршĕ ялта — Курнавăшра пуçламăш пĕлӳ илет. Пĕтĕм пурнăçне тăван ялĕнче ирттерет. Ăна 1932 ç. репрессиленĕ (малаллахи шăпи паллă мар), 1995 ç. таса ята каялла тавăрнă.

Упранса юлнă 27 сăввине поэт 1897—1905 çç. хайланă. Вĕсенчен вун çиччĕшне 1899 ç. пуш уйăхĕнче пĕлĕш çын патне ăсатни паллă. Сăвăçа çырас ĕçе явăçма пиччĕшĕ Турхан Яккăвĕ нумай хавхалантарнă.

Турхан Хĕветĕрĕ ăсталăха ытларах чăваш халăх юррисенчен, М.Ю.Лермонтовпа И.А.Крыловран вĕренсе пырать. Унăн сăввисен виçи-мелĕ, тытăмĕшăнăрĕ, сăмах пуянлăхĕпе чĕлхе тирпейлĕхĕ тăван халăх сăмахлăхĕпе тачă çыхăннă. Вăл çичĕ-сакăр сыпăклă силлабика виçипе кăна çырлахмасть, вăрăмрах йĕркеллĕ сăвăсем ăна сăвă кĕвĕлĕхне сулăмлатма май параççĕ, кĕвĕ пуянлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Вăл чăвашсен илемлĕх шухăшлав пӳлмине сахал мар вăрлăх пухса хăварнă. «Юмăç» (1903) ятлисĕр пуçне, каярах тин пичетленеççĕ. Хăй вăхăтĕнче вĕсенчи чылай йĕркесем Н.И.Ашмаринăн вун çичĕ томлă «Чăваш сăмахлăхĕсен кĕнекине» кĕнĕ.

**Турхан Хĕветĕрĕн** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Г. Юмарт.** Турхан Хĕветĕрĕ. — Коммунизм ялавĕ, 1976, нарăс, 13.

Чувашская литература, тенденции развития, стилевые поиски. Сб. статей, Ч., 1983, с.22—27.

**А. Емельянов.** Тăван литературăн çĕнĕ çитĕнĕвĕ. — Колхоз ялавĕ, 1985, кăрлач, 15.

**Г. Юмарт.** Турхан Хĕветĕрĕ. — Вучах, 1991, нарăс, 25.

**Н. Малышкин.** Ялти сăвăç. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 17.

# ТУРХАН ЭНТРИ

**Турхан Энтри (Андрей Васильевич Турхан)** 1888 çулхи çурла уйăхĕн 20-мĕшĕнче Турхан ялĕнче çуралнă. Курнавăшри пуçламăш, Кĕçĕн Елчĕкри икĕ класлă шкулсенчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухсан, 1904 ç. Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарие кĕрет. Совет саманинче Мускаври ют çĕршыв чĕлхисен педагогика институтĕнче аслă пĕлӳ илет.

1927 çултанпа Патăрьел районĕнче пурăнать. Турханта, Сителре, Аслă Чеменре, Упамсарта шкулта ĕçлет. Упамсар ялĕнче колхоз тума хутшăнать. 1932—1937 çç. Патăрьелĕнчи педтехникумра вырăс тата нимĕç чĕлхисене вĕрентет. 1937 ç. сăлтавсăр айăплаççĕ, анчах унăн кĕçех тĕрмерен хăтăлма май килет.

Турхан Энтри 1972 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче Патăрьелĕнче вилнĕ. Унăн пĕрремĕш сăвви 1904 ç. çырăнать: «Поездка домой...». Хăй библитотекинчи кĕнекесен списокĕсенче А.Пушкин, И.Никитин поэзийĕ çинчен çырнисем, В.Скотт романĕсем, историпе музыка çинчен, чăвашла та чылай. Р.Хамардăн «Клеопатра» тата ытти романĕсене вуланă хыççăн куçару ĕçне пуçăнать: Ж.Мольерăн «Хытă» (1905) комедийĕ, Л.Толстойăн «Казаксем» (1906) повеçĕ, Е.Боголюбовăн «Спартак» (1906) ятлă пысăк очеркĕ.

Пиччĕшĕ — Турхан Яккăвĕ патĕнче, пăлхав тапхăрĕнче, вăрттăн пурăннă чух Энтри нумай вулать, Ян Гус, М.Лютер, О.Кромвель биографийĕсемпе паллашать, Гете поэзийĕпе интересленет. Венгр фольклорист-этнографĕпе Дьюла Месарошпа чылай хутчен курса калаçать.

Вăл революциччен те, совет тапхăрĕнче те сахал мар сăвă çырать, хаçат-журналта пичетлет. 1917 ç. «Хыпар» хаçатра «Чăваш халăх историйĕ» очеркĕ тухать. Турхан Энтри революци юррисем («Интерна-ционал», «Марсельеза», «Пытару маршĕ») куçарнипе паллă. Унăн «Тĕп сакай» (1920) пьеси упранса юлнă. 1920 çулсенче «Канаш» хаçатра нумай фельетон пичетлет. 1926 ç. поляк прозаикĕн К.Тетмайерăн «Татр халапĕсем» романне кĕскетсе «Хресчен ирĕклĕхĕшĕн» ятпа куçарса кăларать.

**Турхан Энтри** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен Геннадий Юмарт çак статьясенче çырса кăтартнă:

Коммунарсен юрăçи. — Авангард, 1978, çурла, 29, 31.

Турхан Энтри. — Авангард, 1988, ака, 1; — Колхоз ялавĕ, 1988, ака, 1.

Коммунар-юрăçă. — Колхоз ялавĕ, 1989, кăрлач, 3.

Кун кĕнеки — чун мĕлки. — Коммунизм ялавĕ, 1989, юпа, 7.



# ТУРХАН ЯККĂВĔ

**Турхан Яккăвĕ** 1874 çулхи пуш уйăхĕн 25-мĕшĕнче Турхан ялĕнче çуралнă. Курнавăшра пĕлӳ илнĕ хыççăн Хусанта учительсем хатĕрлекен семинарирен вĕренсе тухать, тĕрлĕ çĕрте учительте, чиркӳре ĕçлет. 1920 çулсенче вăл хăй тĕн санне пăрахни çинчен хаçат урлă пĕлтерет. Сăвăç 1938 çулта Архангельск облаçĕнче вилнĕ.

Турхан Яккăвĕ пĕрремĕш сăввине 1896 ç. çырать. Сăмахлăхра ĕçленĕ вăхăтра тăван поэзире ун чухлĕ нумай çыракан питĕ сахал пулнă. Унпа юнашар шăллĕне Турхан Хĕветĕрне çеç лартма пулать. Ыттисем (Г.Кореньков, Г.Комиссаров, Т.Кириллов, К.Иванов, Н.Шупуççынни) 1905 ç. тĕлне тин вăй илеççĕ. Çавăнпа Турхан Яккăвĕн чылай енлĕ пултарулăхĕ чăваш сăввине аталантарас ĕçре пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Тĕпчевçĕсемшĕн Турхан Я. çырнă вăтăра яхăн сăвă паллă. Вĕсенче — тĕрлĕ çивĕч ыйту, тĕрлĕ сăнар, тĕрлĕ виçе. Тăван тавралăх, çулталăк вăхăчĕсем, халăх йăли-йĕрки, — акă мĕн ӳкерĕннĕ вĕсенче. Çак сăвăсен пысăк пайĕ «Революцичченхи чăваш литератури» хрестоматин 1 томĕнче (1984) пичетленнĕ.

Ентешĕн паллă хайлавĕ — «Варуççи» поэма (1902). Пурнăçри сăнарсене анлă сăнланине кура М.Федоровăн «Арçурине» пĕрремĕш теме тивет. «Варуççи» хыççăн (вăл 1906 ç. «Хыпарта» тухать) пайтаххăн поэма çырма тытăнаççĕ. Вăл К.Иванова та «Нарспи» çырнă чух хавхалантарма пултарнă.

Турхан Я. — вырăс поэзине чăвашла куçарма тытăнакансенчен пĕри. Вăл А.Пушкин, В.Жуковский,

И.Козлов, М.Лермонтов, А.Кольцов, Н.Некрасов сăввисене куçарать. Тĕнчипе паллă ŭнерçĕпе Н.К.Рерихпа, Н.И.Ашмарин, Н.В.Никольский ăсчахсемпе тачă çыхăну тытать.

Хăш-пĕр сăввисем — «Çук çын юрри» (В.Жуковскирен), «Хăрушă парне», «Христос чĕрĕлнĕ!», «Çылăхлă арăм», «Шăматкун каç чан çапни», «Патшалăх юрри» тĕн ыйтăвĕсене хускатаççĕ.

**Турхан Яккăвĕн** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

Чувашский язык, литература и фольклор. Ч., 1973, с. 303-329.

**Г. Юмарт.** Турхан Яккăвĕ. — Коммунизм çути, 1974, пуш, 23; — Коммунизм ялавĕ, 1974, пуш, 28.

Чувашская литература,тенденции развития, стилевые поиски. Сб.статей. Ч., 1983, с. 22-27.

**Г. Юмарт.** «Чăваш юрлакан юрă». — Хыпар, 1994, ака, 7.

# ЧЕКУШКИНА ЕЛЕНА ПЕТРОВНА



**Елена Петровна Чекушкина-Димитриева (Елен Нарпи)** 1969 çулхи çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнче Вырăскасси ялĕнче çуралнă. 1976—1986 çç. Çуткӳлĕнчи сакăр çул вĕренмелли, Курнавăшри вăтам шкулсенче, 1986—1991 çç. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнче вĕренет. 1991 çултанпа унтах преподаватель пулса ĕçлет.

Вăл çырнă пĕрремĕш заметка «Пионер сасси» хаçатра V-мĕш класра вĕреннĕ чухнех тухать. «Пысăк ӳсĕмсемпе» ятлăскер. Ун хыççăн хайлавĕсем районти «Колхоз ялавĕ» хаçатра, «Хатĕр пул» журналта та тăтăшах кун çути кураççĕ. Çамрăк çыравçă 1984 ç. Шупашкарта иртнĕ рабочи тата ялти корреспондентсен республикăри IV съездне хутшăнать.

Е.Чекушкина ытти çынсем курма пултарайманнине курма, ун çинчен чуна хускатмалла çырса кăтартма пĕлет. Çавна «Тăван Атăл» журналта (1990, 1 №) пичетленнĕ «Сетреслӳ ĕмĕрĕ» ятлă пысăк калав та çирĕплетет. «Пăрлă шыври хĕвел пайăрки» повеçĕ, «Туй кунĕ», «Хĕр-пикесем, хĕрарăмсем», «Аншарли», «Чӳрече куçĕ», «Асамçă пике, е çывăрмасăр тĕлленнĕ тĕлĕк» калавĕсем т.ыт.те тарăн шухăшпа, пуян чĕлхепе палăрса тăраççĕ. Юлашки вăхăтра вăл критикăлла статьясем те çырать.

**Е. Чекушкина** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:
Колхоз ялавĕ, 1983, утă, 16.

Хавхалану кӳрет. — Ялав, 1990, 1 №, 45 с.

Хам ҫинчен пӗр-ик сӑмах. — Ялав, 1995, 5 №, 9 с.

**Е. Никифорова.** Ҫамрӑк ҫыравҫӑпа тӗл пултӑмӑр. — Колхоз ялавӗ, 1996, нарӑс, 27.



## ЩИПЦОВ ПАВЕЛ СЕМЕНОВИЧ

**Павел Семенович Щипцов** 1914 çулхи чӳк уйăхĕн 16-мĕшĕнче Таяпа Энтри ялĕнче çуралнă. 1929 ç., Елчĕкри шкултан вĕренсе тухсан, Ульяновскри ял хуçалăх техникумне вĕренме кĕрет. Ăна пĕтерсен (1932) Мускав хулинчи «Коммунар» хаçатăн пай пуçлăхне çирĕплетеççĕ. Çав çулхи раштав уйăхĕнчен — районти «Колхоз ялавĕ» хаçатăн яваплă секретарĕ. Хĕрлĕ Çарта хĕсметре (1936—1939) тăнă хыççăн каллех çак ĕçе таврăнать. 1939 çултан «Çамрăк большевик» хаçатра тимлет. Унтах пирвайхи хайлавсем çуралаççĕ. 1941 ç. «Разведкăра» поэма пичетлет.

П.Щипцов 1945—1946 çç. «Смычка» колхоза ертсе пырать, 1954 çулччен «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн ятарлă корреспондентĕнче ĕçлет. 1954 ç. пуçламăшĕнче парти обкомĕ ăна 30 пинçĕсен шучĕпе каллех тăван хуçалăха ярать. 1959—1962 çç. йывăр чирлет. Вара литература ĕçĕнче тӳрремĕн вăй хурать. 1962—1965, 1974—1975 çулсенче — «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн ятарлă корреспонденчĕ, 1965—1974 çулсенче — «Колхоз ялавĕ» хаçатăн яваплă секретарĕ. СССР Журналистсен пĕрлешĕвĕн членĕ.

Вăл икĕ вăрçа хутшăннă. Хăй ирĕкĕпе финнсене хирĕç (1940) çапăçать, Аслă Аттелĕх вăрçинче батальон штабĕн начальникĕ пулнă. 1945 ç., аманнăран, запаса тухать. Ăна II степень Отечествăлла вăрçă орденĕпе тата нумай медальпе наградăланă.

П.Щипцов 1981 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче вилнĕ.

**Кӗнекесем:**

«Вӑрлӑха бионтизацилесе акасси тата мульчировани ҫинчен», Ш., 1936; «Хӗрлӗ Кӗтне» колхоз», Ш., 1958; «Ялти сӑнсем», Ш., 1958; «Юлташ ҫырӑвӗ», Ш., 1958; «Пурнӑҫ кӗвви», Ш., 1962; «Ыранхине курса», Ш., 1962.

**П. Щипцов** пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен:

Тӑван ялта. — Колхоз ялавӗ, 1970, утӑ, 18.

Павел Щипцов 60 ҫулта. — Ялав, 1974, II №.

П.С.Щипцов пурнӑҫӗ ҫинчен. — Колхоз ялавӗ, 1981, раштав, 10.

**П. С. Щипцов.** — Колхоз ялавӗ, 1992, ҫурла, 5.

**Н. Алексеев.** Чӗрӗк ӗмӗр выртнӑ повесть. — Колхоз ялавӗ, 1995, ҫу, 10.

## ФЕДОРОВА ЛЮБОВЬ МИХАЙЛОВНА



Чăваш хĕр арăм-сăвăçисем хушшинче сулмаклă утăмпа пыракансенчен пĕри — **Любовь Федорова**. Вăл 1952 çулхи пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче Энтепе ялĕнче çуралнă. 1959 ç. ялти шкула çӳреме пуçлать. Сакăр класс пĕтерсен Патăрьелĕнчи 1-мĕш шкулта вĕренет.

1970—1971 çç. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлет, чăваш ял хуçалăх институтĕнче пĕрремĕш курсра хăй тĕллĕн вĕренет. 1972—1980 çç. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш чĕлхипе литература уйрăмĕнче вĕренет. Виççĕмĕш курс хыççăн, хăй тĕллĕн вĕреннĕ май, 1975—1985 çç. Тĕмерти, Аслă Пăла Тимешĕнчи, Энтепери шкулсенче учительницăра ĕçлет.

1986 ç. тĕп хулари электроаппаратура завочĕн общежитийĕнче, 1987 ç. республикăри кĕнеке юратакансен обществин яваплă секретарĕнче, 1988—1990 çç. 23-мĕш шкулта, 1991—1992 çç. «Пике» журналта вăй хурать. 1992 çултанпа 34-мĕш шкул-гимназире чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет.

Л.Федорова чи малтанхи сăввине çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чухнех пичетлет. 1971 ç. вара поэзире чăнласах тимлеме пуçлать. Каярахпа ĕçĕсем республикăри пур хаçат-журналта та çапăнса тухаççĕ.

РФ Çыравçăсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1993) прозăпа та интересленет. «Пике» журналта çеç тишкерӳллĕ, хальхи пурнăçпа çыхăннă темиçе статья пичетлет: «Зоя аппа», «Кам айăплă?», «Юрă-ташăпа пĕрле», «Кивви çĕннине упрать» т.ыт.те.

Унăн поэзийĕ тарăн шухăшлă, тематики анлă. Публицистикăллă поэмăсен шутне «Халал», «Кĕлмĕç» хайлавсем кĕреççĕ. Автор вĕсенче социаллă танмарлăха сивлет, пурнăç кăлтăкĕсене çĕнтерме хистет.

Л.Федорован 1992 ç. «Йӳçĕ пыл» ятлă кĕнеке тухать. «Чи лайăх кĕнеке» конкурсра вăл пĕрремĕш вырăн йышăннă. Сăвăç «Пике» журналăн Эмине ячĕллĕ преми лауреачĕ (1993).

## АДЮКОВ ВИТАЛИЙ ИВАНОВИЧ



**Виталий Иванович Адюков (Этюк Витти)** 1958 çулхи кăрлачăн 2-мĕшĕнче Аслă Елчĕкре çуралнă. 1975 ç. ялти вăтам шкултан вĕренсе тухать. Çав хушăрах районти ачасен музыка шкулĕнче Г.А.Борисов ертсе пынипе юрă-кĕвĕ, тĕрлĕ музыка инструменчĕсен вăрттăнлăхĕсене алла илет.

1975—1979 çç. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн музыкăпа педагогика факультетĕнче пĕлӳ пухать. Ун чухнех ентешĕпе, физвоспитани факультетĕнче вĕренекен Виталий Патшинпа, пĕрремĕш юрăсем хывать.

1979—1981 çç. тăван ялĕнчи шкулта музыкăна вĕрентет, Елчĕкри ачасен музыка шкулĕнче преподаватель тата ялти культура çуртĕнче художество пултарулăх ертӳçи пулса ĕçлет. 1981 ç. çу-чӳк уйăхĕсенче — Чăвашрадио музыка редакторĕ, «Кăвак конвертлă çырусем» передача авторĕ. 1981—1983 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăрать.

1983—1990 çç. Чăваш патшалăх филармонийĕн «Çавал» ансамблĕнче музыка ертӳçинче тăрăшать. Коллектив тĕрлĕ тăрăхра пулать: Тутарстанпа

Пушкăртстанра, Мускавпа Волгоградра, Новгородпа Таллинра, Польшăпа Бельгире, Японипе Турцире.

В.Адюков 1990 çултанпа — республикăри ăслăлăхпа меслет центрĕн сотрудникĕ. Нумай музыка инструменчĕсемпе вылять. Вунă ытла чăваш халăх музыка хатĕрĕсене (шăпăр, тутут, тŭттĕл, палнай, нăй, вăрхан, хŭпхŭ, кавал, ŭле т.ыт.те) «чун» кĕртнĕ. Юрăсем çырас-кĕвĕлес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлет.

Вăл Пĕтĕм Раççейри культорганизаторсен (1990), Пĕтĕм Раççейри халăх юррисен «Раççей сассисем» (1994) конкурссен дипломанчĕ. Мĕн пур халăхсен «Евромузыка-94» фестивальне хутшăннă. Ăна СССР Профсоюзĕн Тĕп Комитечĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Чăваш çамрăкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ (1994), Чĕмпĕр облаçĕнчи «Еткер» ыркăмăллăх фончĕн И.Я.Яковлев ячĕллĕ преми лауреачĕ (1994).

**Юрăсем:**

«Лар, тăванăм, çума», «Эсĕ», «Ватăлатпăр çав, тăван, ватăлатпăр», «Чечексем», «Сас паракан пулмарĕ», «Савнă кайăкăм, кăвакарчăнăм», «Мĕншĕн татрăм-ши?» т.ыт.те.

**В. Адюков** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Г. Каткова**. Пултаруллă музыкант. — Колхоз ялавĕ, 1979, юпа, 18.

**Н. Смирнова**. «Лар, тăванăм, çума...» — Хыпар, 1993, кăрлач, 28.

**Ю. Кудаков**. Пултарулăх çулĕпе. — Халăх шкулĕ, 1994, 5 №.

**Г. Матвеева**. Юррисенче — халăх шăпи. — Ялав, 1994, 8 №.

**В. Дмитриев-Шашкар**. Лар, тăванăм, çума. — Колхоз ялавĕ, 1995, нарăс, 9.

# БИКУЛОВА МАРИЯ ГРИГОРЬЕВНА



**Чăваш Республикин халăх артистки**

**Мария Григорьевна Бикулова** — чăваш артисчĕсенчен чи малтан аслă пĕлӳ илнисенчен пĕри. Вăл 1919 çулхи авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче Лаш Таяпа ялĕнче çуралнă. 1936 ç. Патăрьелĕнчи куçса çӳрекен II-мĕш колхоз театрĕнче ĕçлеме пуçлать. Каярахпа — Чăваш академи драма театрĕн артистки.

1942—1947 çç. Мускаври А.В.Луначарский ячĕллĕ театр искусствин институтĕнче СССР халăх артисчĕ М.М.Тарханов профессор ертсе пынă пĕрремĕш чăваш студинче вĕренет. Пирвайхи диплом спектаклĕсенчех хăйĕн ăсталăхне яр-уççăн кăтартма пултарать.

1961 çултанпа сцена ăсти кун-çулне республикăри пуканесен театрĕпе çыхăнтарать. Пĕтĕмпе 150 яхăн сăнар йĕркелет. Ăна ЧАССР тава тивĕçлĕ артистки (1955), ЧАССР халăх артистки (1980) ячĕсене панă. «Ĕçри паттăрлăхшăн. В.И.Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ ятпа», «1941—1945 çулсенче Аслă Отечествăлла вăрçă вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн», «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе, РСФСР Культура министерствин Хисеп грамотипе наградăланă.

М.Бикулова 1985 çулта йывăр чирленĕ хыççăн вилнĕ.

**Паллă рольсем:**

Нарспи («Нарспи», К.Иванов); Пинерпи («Айтар», П.Осипов); Дездемона («Оттелло», У.Шекспир); Пошлепкина («Ревизор», Н.Гоголь); патша арăмĕ

(«Ытарайми пике», Е.Сперанский); Евгения («Шухă вырăнта», А.Островский); Миледи («Хаярлăхпа юрату», Ф.Шиллер); староста арăмĕ («Ылтăн вăчăра», Л.Агаков).

**М. Бикулова** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Н. Краснов**. Тава тивĕçлĕ артистка. — Колхоз ялавĕ, 1969, юпа, 28.

**В. Давыдов-Анатри**. Ачасене халалланӑ талант. — Пионер сасси, 1969, раштав, 21.

**В. Сидоров**. Пирĕн артистка. — Колхоз ялавĕ, 1979, раштав, 8.

**Г. Кириллов**. Ачасене халалланӑ талант. — Пионер сасси, 1989, авăн, 30.

**Г. Кириллов**. Манăçми ят. — Коммунизм ялавĕ, 1989, юпа, 24.

**Г. Тимофеев**. Тăван ялăм — савнă ялăм. Ш., 1991, 162 с.

# БОРИСОВ ГЕННАДИЙ АРСЕНТЬЕВИЧ



**Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

**Геннадий Арсентьевич Борисов** 1949 çулхи ака уйăхĕн 19-мĕшĕнче Патреккелĕнче çуралнă. 1966 ç. ялти сакăр çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухсан колхоз направленийĕпе Патăрьелти музыка шкулне ултă уйăхлăх курса ярaççĕ. 1965 ç. районти культура çуртĕнче художество пултарулăх ертÿçинче ĕçлеме пуçлать.

1968—1971 çç. Совет Çарĕнче — В.И.Чапаев дивизийĕнче хĕсметре тăрать. 1969 ç. хăй ирĕкĕпе Хĕвел тухăçĕнчи (Дамаск) пĕр погранзаставăра пулать. Унта юрă-ташă ушкăнĕ йĕркелет, отрядсем хушшинчи фестивальсенче çĕнтерет.

Г.Борисов 1971 çултанпа Патреккелĕнчи халăх хорне ертсе пырать. Ĕçленĕ тапхăртах (1971—1976) Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче пĕлÿ пухать.

Халăх хорĕ нумай смотр, фестиваль лауреачĕ. Унăн пултарулăхне Мускавра (1977, 1982, 1992), Самар облаçĕнчи Шăнтал районĕнче (1993), Пушкăрт республикинчи Пишпÿлек, Пелепей районĕсенче (1994) пурăнакансем пысăк хак параççĕ.

Г.Борисов ЧАССР музыка обществин членĕ (1971). Культура ĕçченĕсен профсоюзĕн X съезчĕн (1982), Пĕтĕм Раççейри хор обществин IV съезчĕн (1988) делегачĕ. Тĕрлĕ çул ял Канашĕн тата район Канашĕн депутатне суйланнă. Ăна ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн (1973), РСФСР Аслă Канашĕн Президиумĕн

(1980), ЧР Патшалăх Канашĕн (1999) Хисеп грамотисемпе наградăланă. ЧАССР (1977) тата РСФСР (1986) культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. ЧР музыка обществин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1995). Пĕтĕм Союзри халăх пултарулăхĕн I, II, III-мĕш фестивалĕсен лауреачĕ.

Вăл «Халăх юратакан коллектив» брошюра (1992), «Патреккел», «Уйрăлу», «Куç харшисем мĕншĕн хура», «Сада чечек лартмасан» т.ыт. юрăсен авторĕ.

**Г. Борисов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

Байдеряковский сельский клуб Яльчикского района. — В кн., «Опыт работы культурно-просветительных учреждений Чувашской АССР», Ч., 1950.

**А. Миллин**. Байдеряковский народный. — Советская Чувашия, 1973, январь, 16.

**З. Григорьева**. Дом, где прописаны праздники. — Культурно-просветительная работа, 1977, № 10.

**Н. Малышкин**. Халăх юрри янăратăр ялан. — Коммунизм ялавĕ, 1983, утă, 26.

**С. Пастухов**. Над оврагами. — Советская Чувашия, 1988, январь, 3.

**Н. Малышкин**. «Солисчĕ Илья Петров...» — Колхоз ялавĕ, 1992, çу, 6.

**П. Лаштай**. Юрлать Патреккел. — Вучах, 1992, утă, 20.



# ГОЛУБЕВА ВЕРА ИВАНОВНА

**Раҫҫей Федерацийӗн тава тивӗҫлӗ артистки**

**Вера Ивановна Голубева** 1928 ҫулхи авăн уйăхӗн 28-мӗшӗнче Каркалар ялӗнче ҫуралнă. Ялти шкулта пӗр ҫул вӗреннӗ хыҫҫăн, 1937 ҫ. вӗсен ҫемйи Томск облаҫӗнчи Чемондаевка ялне куҫса каять.

Унти шкулти 2-мӗш класа ҫӳренӗ чух Ҫӗнӗ ҫул уяв концертне хутшăнать. Ятарласа библиотекăран чăвашла кӗнекесем илет. Уявра сăвăлла юмахсене пăхмасăр каласа парать, куракансене тӗлӗнтерет. Ялта вара кӗске вăхăтрах пурте паллакан хӗр ача пулса тăрать.

Тепӗр ҫулӗнчех ҫемье каялла таврăнать. Ҫичӗ класс пӗтерсен, 1943—1946 ҫҫ. Шупашкарти кооператив техникумӗнче товароведа вӗренет. Ҫулталăк хушши Чăваш драма театрӗ ҫумӗнчи студире сцена ăсталăхне алла илнӗ хыҫҫăн, Йӗпреҫри II-мӗш колхоз театрне ярaҫҫӗ. 1949—1954 ҫҫ. — Чăваш ҫамрăкӗсен театрӗн, 1954—1959 ҫҫ. — Канашри куҫса ҫӳрекен колхоз театрӗн актриси.

Малаллахи ӗҫ вырăнӗсем: республикăри Ҫамрăксен театрӗн актриси (1960—1963, 1965—1972), Шупашкарти телевидени студийӗн режиссер пулăшуҫи (1963—1965, 1972—1975), республикăри пуканесен театрӗн педагогика пайӗн пуҫлăхӗ, реквизиторӗ, актриси (1976—1989).

В.Голубева 1969 ҫултанпа «Асанне юмахӗсем» радиопередачăна ертсе пырать. Халӗ ҫӗнӗ — «Каҫхи юмах» ятпа эрнере пилӗк хутчен эфира тухать. Юмахсене урăх чӗлхесенчен чăвашла куҫарать, хăй

те çырать. «Асанне юмахĕсем» ятпа пластинка кăларнă.

Ăна РСФСР Культура министерствин (1967), КПСС обкомĕпе ЧАССР Министрсен Кабинечĕн (1988) Хисеп грамотисемпе наградăланă. РСФСР тава тивĕçлĕ артистки (1970) ятне панă.

**Паллă рольсем:**

Лида ( «Çĕмĕрт çурăлсан», И.С.Максимов-Кошкинский); Луиза («Хаярлăхпа юрату», Ф.Шиллер); асламăшĕ («Алеша Пешков», М.Горький); Кабаниха («Аслати», Н.Островский); Тильбер Галиевна («Юлашки çыру», Х.Вахит); амăшĕ («Амăшĕн чĕри», А.Балакаев).

**В. Голубева пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:**

**А. Филиппов**. Асанне экран çине тухсан... — Коммунизм ялавĕ, 1976, çу, 11.

**Ю. Исаев**. Савăнăç кӳрет артистка. — Пионер сасси, 1978, юпа, 17.

**В. Минеева**. Туртăм. — Тăван Атăл, 1986, 10 №.

**А. Лукиянова**. Чи çывăх çын. — Коммунизм ялавĕ, 1988, авăн, 28.

**Р. Сарпи**. Пирĕн юратнă «Асанне». — Хатĕр пул, 1988, 9 №.

Пурнăçăм — театрта. — Пике, 1991, 1 №.

**Г. Вастрюкова**. Кашни ачашăнах эс асанне. — Тантăш, 1992, çĕртме, 17.

**Г. Ефимов**. Хĕрĕх пилĕк çултан... — Хыпар, 1992, çĕртме, 25.

**О. Сюзюкина**. Чăн пурнăçри Асанне. — Хыпар, 1998, чӳк, 4.

# ГОРШКОВА МАРИЯ АЛЕКСАНДРОВНА



**Мария Александровна Горшкова-Петрова** 1960 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче Вырăскасси ялĕнче çуралнă. Çуткӳлĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкула пĕтерсен Шупашкарти планпа экономика техникумне (1976) вĕренме кĕрет. 1979 ç. «Рассвет» фабрикăра бухгалтер-ревизорта ĕçлет. Çав тапхăртах Я.Ухсай ячĕллĕ культура керменĕн вокал ансамбльне çӳрет. Ăна ертсе пыракан Т.А.Манаева сĕннипе музыка училищине (1980—1984) вĕренме кĕрет, Т.М.Супонина патĕнче пĕлӳ пухать.

1984 çултанпа Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче артисткăра тăрăшать. Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче — Мускавра, Санкт-Петербургра, Урал тăрăхĕнче, Камчаткăра, çавăн пекех Германи, Украина çĕрĕсенче гастрольсенче пулнă.

Вăл — «Тарават» ансамбль солистки. Сăвăсем çырать, вĕсене юрра та хыват.

**М. Горшкова** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Петĕр Çăлкуç** «Тĕрĕслĕхшĕн, чун тасалăхĕшĕн пурăнатăп». Тантăш, 1995, нарăс, 20.

**Елен Нарпи** «Эпĕ «çăлтăр» мар, хамăн ĕçе юратса тăвакан çеç». — Елчĕк ен, 1998, ака, 23.



# ДИМИТРИЕВ ВАЛЕРИЙ ГЕОРГИЕВИЧ

**Валерий Георгиевич Димитриев** 1962 çулхи раштавăн 3-мĕшĕнче Анатри Тимеш ялĕнче çуралнă. 1978 ç. Тăрăмри сакăр çул вĕренмелли шкултан мухтав хучĕпе вĕренсе тухать. 1978—1982 çç. Шупашкарти энерготехникумра техник-электрик специальноçне алла илет. Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă хыççăн пир-авăр комбинатĕнче (1984—1994) вăй хурать. 1994 çултанпа — В.И.Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвĕн электромонтажникĕ.

В.Димитриев юрлама ачаранах кăмăлланă. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçленĕ тапхăрта музыка хатĕрĕсене юсаса хатĕрленĕ, ансамбль йĕркеленĕ. Сăвăсем-юрăсем те унтах çуралнă. Ытларах тăван кил, атте-анне çинчен хайланисем. Гитарăпа, хут купăспа вылять. 1998 ç. магнитоальбом кăларнă. Республикăри бардсен, «Телеюрă» фестивалĕсене час-часах хутшăнать.

**Юрăсем:**

«Сар чечек», «Эс юнашар пулсан», «Тăван ял», «Икĕ çул», «Пуçтарăнсан пурте пĕрле», «Çуркунне» т.ыт.те.

**В. Димитриев** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**С. Кривова**. Пултарулăх каçĕнче. — Колхоз ялавĕ, 1995, ака, 13.

**О. Борисова**. Паллашăр: В.Димитриев. — Колхоз ялавĕ, 1997, чӳк, 4.

Новые имена. — За мир, 1998, декабрь, 28.



# КАРЛИН НИКОЛАЙ СЕРГЕЕВИЧ

**Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ**

**Николай Сергеевич Карлин** 1946 çулхи авăн уйăхĕн 28-мĕшĕнче Аслă Елчĕк ялĕнче çуралнă. Ашшĕ таврари паллă хут купăссă пулнă, шăллĕ, йăмăкĕсем юрă-кĕвĕпе интересленнĕ. Вăл Курган облаçĕнчи профессипе техника училищине пĕтернĕ хыççăн 1965 çултанпа художество пултарулăх ушкăнĕсенче ĕçлет. Ленин ячĕллĕ колхозри пĕрлештернĕ хора (1968—1971) ертсе пырать, Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищин дирижерсен уйрăмне кĕрет, В.Ходяшев композитор класĕнче (1971—1975) композици ăсталăхне вĕренет, П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕнче хормейстерта (1971—1974) тăрăшать.

1974—1985 çç. Шупашкарти машиностроительнăй заводри халăх хорĕпе ĕçлет, çав тапхăртах вун пĕр çул хушши хулари Калинин районĕнчи пĕрлештернĕ хор дирижерĕ пулнă.

Н.Карлин 1985 çултанпа тĕп хулари 4-мĕш профессипе техника училищинче художество пултарулăх ертӳçи тата хормейстер тивĕçĕсене пурнăçлать. Çавăнпа пĕрлех, 1987 çултанпа Красноармейски районĕнчи Пикшикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта музыка учителĕнче, ялти культура çурчĕ çумĕнчи юрăпа ташă ансамблĕн ертӳçинче тимлет. Çав çулсенчех Мускаврй Халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсен куравĕнче пилĕк концерт кăтартаççĕ. 1992 ç. кăрлачăн 7-мĕшĕнче Мускаври Съездсен керменĕнче, çуркунне М.Горький ячĕллĕ Тĕп паркра, 1994 ç. Тĕмень облаçĕнче, Марий Эл республикинче хăйсен

пултарулăхĕпе савăнтараççĕ. Пикшикри ачасен юрăпа ташă ушкăнĕн ертӳçи те вăлах.

Н.Карлин хор, солист, вулакан тата оркестр валли «Хурçă шанчăк» оратори (1978), хор валли вăтăр ытла юрă çырнă. «Илемлетнĕ чăваш халăх юррисем» кĕнеке (1996) авторĕ.

Вăл Чăваш енри музыка обществин президиумĕн членĕ (1980), композиторсен ассоциацийĕн правленийĕн членĕ (1991). Ăна ВЦСПСăн «Искусствăри çитĕнӳсемшĕн» (1979), «Пĕтĕм Раççейри хор обществин отличникĕ» (1984) паллăсемпе чысланă. ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1982), Красноармейски районĕнчи Нестер Янкас ячĕллĕ преми лауреачĕ (1993), Пĕтĕм Союзри халăх пултарулăхĕн I, II, III-мĕш фестивалĕсен лауреачĕ.

— ...Унăн музыкăри хăйне евĕрлĕхĕ, çепĕçлĕхĕ, çĕнĕлĕхĕ, ыттисенчен уйрăлса тăракан туйăм тĕнчи маншăн тахçантанпах çывăх..., — тет ун пирки Юрий Сементер сăвăç.

**Юрăсем**:

«Шурă хурăн», «Ялан асра атте-анне», «Савăнăç юрри», «Тăван ял урамĕсем», «Шăнкăртатса çăл куç юхсан...», «Атте-анне кил-çурчĕ», «Асамат кĕперĕ», «Пĕрле ӳснĕ туссем», «Кĕтсе ил, савниçĕм», «Чыс, мухтав сире, елчĕксем» т.ыт.те.

**Н. Карлин** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**И. Ахрат**. Шанчăк. —Колхоз ялавĕ, 1977, çу, 28.

**А. Николаев**. Искусство çыннисемпе тĕл пулни. — Колхоз ялавĕ, 1992, çу, 16.

**В. Вастулова**. «Эпĕ — ялта, вăл — хулара». — Колхоз ялавĕ, 1994, утă, 5.

**С. Ильин, Н. Зимин**. Ассоциация композиторов Чувашской Республики. Ч., 1995, с. 59.

**Ю. Сементер**. «Поэзи илемлĕхне те тимленĕ». — Колхоз ялавĕ, 1996, юпа, 17.

**И. Васильева**. Артистсем хăнара. — Колхоз ялавĕ, 1996, юпа, 19.



# КОРЧАКОВА СВЕТЛАНА ВАСИЛЬЕВНА

**Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ артистки**

**Светлана Васильевна Корчакова-Сазонова** 1948 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 20-мӗшӗнче Кӳлпуҫ ялӗнче ҫуралнӑ. 1955—1963 ҫҫ. ялти пуҫламӑш тата Хӑвӑлҫырмари сакӑр ҫул вӗренмелли шкулсенче вӗренет. Ун хыҫҫӑнах Канашри педагогика училищине, 1967 ҫ. Ленинградри патшалӑх театр, музыкӑпа кинематографи институтне вӗренме кӗрет. 1972 ҫ. актриса дипломне алла илет.

1972—1977 ҫҫ. республикӑри Ҫамрӑксен театрӗнче, 1977 ҫултанпа К.В.Иванов ячӗллӗ Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденлӗ Чӑваш патшалӑх академи драма театрӗнче ӗҫлет. Республикӑри театр ӗҫченӗсен пӗрлешӗвӗн членӗ (1975). ЧР тава тивӗҫлӗ артистки (1991).

**Паллӑ рольсем:**

Фрау Марта («Икс» операци», С.Димин); учительница («Кӗмӗл пӗлӗтсем», Н.Терентьев); Наҫтаҫ («Кай, кай Ивана», Н.Айзман); Таня («Хурлӑхлӑ чун сасси», Н.Сидоров); «Квашня» («Хӗвелсӗр», М.Горький); Устинья Наумовна («Хамӑр ҫынсем — йӳнеҫтерӗпӗр», А.Островский); Пинерпи амӑшӗ («Айдар», П.Оҫипов); Галька («Чуна кивҫен илеймӗн», В.Распутин); Галина Ивановна («Мыскара мӑйраки кукӑр», А.Чебанов); Людмила Яковлевна Баскакова («Амантнӑ чун», В.Розов); Надя («Кӑвакарчӑнӑм эс, ман», В.Гуркин).

**С. Корчакова** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**П. Андреев.** Чăваш театрĕ, тав сана! Ш., 1980.

К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕсем. — Тантăш, 1994, пуш, 26.

**Н. Смирнова.** Чун ватăлмасть. — Хыпар, 1999, çу, 21.



# МОЛОДОВ ИГНАТИЙ ОСИПОВИЧ

**Чăваш Республикин халăх артисчĕ**

**Игнатий Осипович Молодов** 1905 çулхи юпа уйăхĕн 15-мĕшĕнче Кĕçĕн Елчĕкре çуралнă. 1913—1918 çç. ялти шкулта вĕренет, 1919—1921 çç. комсомол ретĕнче тăрать. Субботниксене, концерт-спектакльсене, кружоксене хастар хутшăнать. Ял çыннисене вулама, ӳкерме, шутлама вĕрентет. 1921 ç., тифпа чирленĕрен, пухусене чылай сиктерет. Çавăнпах хăй тĕллĕн комсомолтан тухать, 1924 ç. каялла кĕрет.

1924—1926 çç. Чĕмпĕрти ял хуçалăх тата педагогика техникумĕсем çумĕнчи опытлă-кăтартуллă шкулта пĕлӳ пухать. 1926 ç. пысăк типлă ял хуçалăх техникумне куçать. Икĕ çултан ăна хăй ирĕкĕпе пăрахать. 1928 ç. Чăваш Драма театрĕ çумĕнчи студие кĕрет, 1932 ç. пĕтерет. Вĕреннĕ вăхăтра республика Наркомпросĕ ăна Мускава Чăваш агиткультбригадине хатĕрлеме ярать. 1937 ç. чӳк уйăхĕнче вара — Сĕнтĕрвăрринчи 1-мĕш колхоз театрĕн илемлĕх ертӳçи. 1938 ç. авăн уйăхĕнче Етĕрнери саланса кайнă III-мĕш колхоз театрне чĕртме директор тата илемлĕх ертӳçи пулма яраççĕ.

1939 ç. пуçласа 1968 ç. Чăваш академи драма, 1971 ç. Çамрăксен театрĕсенче вăй хурать.

И.Молодов 40 çул ытла сцена çинче ĕçленĕ, режиссер пулса 30 спектакль лартнă.

1942 ç. парти ретне кĕрет. Икĕ хутчен (1957—1962, 1962—1967) ЧАССР Аслă Канашĕ ăна ЧАССР

тивĕçлĕ артисчĕ (1941), ЧАССР халăх артисчĕ (1955) ячĕсене панă. «Хисеп Палли» (1945), Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав (1951) орденĕсемпе, ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотисемпе тăватă хутчен наградăланă. ЧАССРăн Юбилейлă Хисеп Кĕнекине (1957) кĕртнĕ. 1995 ç. кăрлачăн 12-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ кăларнă Хушупа килĕшӳллĕн, культурăпа ăслăлăха аталантарас ĕçре çитĕнӳсем тунăшăн ĕмĕр тăршшĕпех уйăхсерен патшалăх пособийĕ памалла тунă. И.О.Молодов 1999 çулхи çурла уйăхĕн 27-мĕшĕнче вилнĕ.

**Хайлавĕсем:**

Сывалĕ-ши. Çук-ши. — «Пирĕн пултарулăх» кĕнекере, Ш., 1965.

Мои воспоминания об Иванове Константине Васильевиче. — В кн., «В творческом горении высшая радость», Ч., 1976.

Каçар мана. Пьесăсем. Ш., 1983.

**Спектакльсем:**

А.Островский «Не так живи, как хочешь» (1933); Н.Гоголь «Женитьба» (1939); Ф.Павлов «Ялта» (1943); И.Молодов «Незабываемые дни» (1957); П.Осипов «Айдар» (1958, радио); Н.Мранька «Юратнă чĕресем» (1962, радио); И.Молодов «Кӳршĕсем» (1962, радио).

**Паллă рольсем:**

Тăхтаман («Нарспи», А.Кăлкан, В.Алагер); Чакка («Хĕн-хур айĕнче», К.Иванов, Л.Родионов); Иван Яковлевич Яковлев («К.Иванов», И.Максимов-Кошкинский); Матвей Шульга («Çамрăк гварди», Г.Граков); Ляпкин-Тяпкин («Ревизор», Н.Гоголь); прапорщик («Бронепоезд 14-69», В.Иванов); Фридрих («Пурнăçа юратса», Ю.Буряковский); Бессеменов («Мещенсем», М.Горький); Андрей Ефремов («Мĕскер-ши вăл телей», Н.Терентьев).

**И. Молодов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Митта** Васлейĕ. Шеллĕр чăваш театрне. — Канаш, 1932, чӳк, 30.

**Л. Агаков**. Пĕрремĕш колхоз театрĕ çĕнĕ сезонта. — Чăваш коммуни, 1938, çурла, 28.

**Д. Данилов**. Юбилейные спектакли ЧГАТ. — Красная Чувашия, 1943, июнь, 25.

**К. Иванов**. Народный артист И.О.Молодов. — Красная Чувашия, 1955, октябрь, 22.

**Н. Элле**. За искусство большого накала. — Советская Чувашия, 1962, октябрь, 5.

**В. Петрова**. Çунатлă ĕмĕтпе. — Коммунизм ялавĕ, 1962, нарăс, 25.

**Ф. Романова**. Театр, любимый народом. Ч., 1973.

**Ф. Романова**. Театр, любимый народом. Ч., 1988.



# МУЗЫКАНТОВА ВАЛЕНТИНА ИВАНОВНА

Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки

**Валентина Ивановна Музыкантова-Агеева** 1948 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче Елчĕкре çуралнă. 1966 ç. вăтам шкул пĕтерсен Шупашкарти пир-авăр комби-натĕнче мотальщицăра ĕçлет. Вăл тапхăртах Л.Римовпа И.Митюков режиссерсем ертсе пыракан телевидени студийĕ çумĕнчи халăх театрне çӳрет. Сцена çинчи пĕрремĕш сăнарсем унта çуралаççĕ.

1968 ç. Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищин театр уйрăмне вĕренме кĕрет. Драма театрĕнче спектакльсенчи массăллă сценăсене хутшăнать. Училищĕре халăх театрĕн режиссерĕн специальноçне алла илнĕ хыççăн республикăри Çамрăксен театрне (1972) пырса кĕрет. Унсăр пуçне виçĕ çул телевиденире диктор тивĕçне пурнăçлать.

В.Музыкантова 20 çул ытла хăйĕн пултарулăхĕпе халăха савăнтарать. Çĕре яхăн тĕрлĕ роль вылянă. 1978 çултанпа республикăри театр ĕçченĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ. Ăна хулари Ленин районĕн Хисеп хăми (1980) çине кĕртнĕ, РСФСР Культура министерствипе культура ĕçченĕсен профсоюзĕн Тĕп Комитечĕн Хисеп грамотипе (1983) наградăланă. ЧАССР тава тивĕçлĕ артистки (1984).

**Паллă рольсем:**

Галя («Телейлĕ çул пултăр», В.Розов); Орсина графиня («Хитре пуличчен телейлĕ пул», Г.Лессинг); Оля («Аппăшĕпе йăмăкĕ», Л.Разумовская); Лида («Арканнă юрату», Н.Терентьев); Хĕветура («Сансăр

пурнăç çук», Н.Терентьев); Савтепи («Шурча таврашĕнче», Х.Уяр); Валя («Мĕншĕн шăпчăк юрлатьши?», В.Шукшин); Наçтук («Таркăн», Н.Сидоров); Нинук («Юратусăр телей çук», Н.Сидоров); Васена («Карчăксем качча каяççĕ», Ф.Буляков); Оксана («Тавах, аннеçĕм», А.Васильев); Натали («Шупашкарти савни», Н.Сидоров).

**В. Музыкантова** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен: Советская Чувашия, 1986, май, 26.

**А. Лукиянова**. Тĕп сăнарсем — çамрăксем. — Хыпар, 1993, нарăс, 5.

**П. Андреев**. Чăваш çамрăкĕсен театрĕ. Ш., 1992, 14, 22 с.

**П. Андреев**. Тыткăнра, ĕмĕрех тыткăнра... — Ялав, 1995, №12.

**В. Вастулова**. Çĕр сăнар вылянă. — Елчĕк ен, 1998, юпа, 31.



## ПАВЛОВ СЕРГЕЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ

**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ**

**Сергей Александрович Павлов** 1965 çулхи пуш уйăхĕн 31-мĕшĕнче Элпуç ялĕнче çуралнă. 1972—1982 çç. Кармалти сакăр çул вĕренмелли, Елчĕкри вăтам шкулсенче вĕренет. Ун хыççăн Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищин оркестр уйрăмне кĕрет. Совет Çарĕнчен таврăнсан каллех çав уйрăмра пĕлӳ пухать.

1987 çултанпа Халăхсен туслăхĕн орденлĕ республикăри Çамрăксен театрĕнче ĕçлет. Пĕрремĕш ролĕ — А.Артемьев çырнă «Тăвăл» пьесăри Вăрăм Иван сăнарĕ.

С.Павлов юлашки çулсенче юрă-кĕвĕ жанрĕнче те сумлă утăмсем тăвать. Юрлать, сăвăсем çырать, гитарăпа, баянпа, фортепьянопа, купăспа калать. «Чăваш ен сассисем» фестиваль лауреачĕ (1994). Районти «Колхоз ялавĕ» хаçатра «Ăсталăх вучахĕ» ятпа сăвăсен пуххи (1995) тухнă. ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ (1999).

**Паллă рольсем:**

Краснов милици капитанĕ («Якăлти», Н.Терентьев); Модест («Шăматкун каçхине», Н.Сидоров); Кавĕрле («Шупашкарти савни», Н.Сидоров); Янис («Хĕрлĕ çӳçлĕ арçын», Л.Струмбе); Артур («Çурçĕр хыççăнхи аслати», Б.Чиндыков); Костя («Ма кĕске-ши яш ĕмĕрĕ», Н.Угарин); Карандышев («Парнесĕр хĕр», А.Островский); Гриша

(«Ах, кăйкăрăм...», Н.Угарин); Андрей Павлович («Пирĕн телей çавнашкал», Еф.Еллиев).

**С. Павлов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

«Чăваш ен сасси» эстрада фестивалĕнче... — Хыпар, 1994, çу, 5.

**П.Çăлкуç**. «Артиста яланах сцена, роль кирлĕ. Вĕсемсĕр унăн чунĕ чулланать». — Тантăш, 1995, кăрлач, 1.



## СТАХЕЕВА КЛАВДИЯ СТАХЕЕВНА

**Клавдия Стахеевна Стахеева** 1910 çулхи раштавăн 29-мĕшĕнче Кĕçĕн Елчĕк ялĕнче çуралнă. 1933—1937 çç. Чăваш патшалăх театр техникумĕн драма уйрăмĕнче вĕренет. 1937—1957 çç. республикăри куçса çӳрекен колхозсен театрĕсенче актрисăра ĕçлет. 1958—1965 çç. Шупашкарти 1-мĕш типографинче рабочире вăй хурать. Вăл сăпайлăхпа, тăрăшулăхпа палăрса тăнă. Çынна яланах ырă тума тăрăшнă. Сцена çинче вара тĕрлĕ сăнарсене витĕмлĕ уçса пама пултарнă.

К.Стахеева 1991 çулхи кăрлачăн 19-мĕшĕнче вилнĕ.

**Паллă рольсем:**

Амăшĕ («Хаярлăхпа юрату», Ф.Шиллер); Манефа («Чавса çывăх та çыртма çук», Н.Айзман); доярка («Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», И.С.Максимов-Кошкинский); тăлмач («Полк ывăлĕ», В.Катаев); няня («Çĕр миллион», В.Балабан, В.Сабко).



# ШАКОВА ЛИДИЯ АЛЕКСАНДРОВНА

**Узбекистан тава тивӗҫлӗ артистки**

**Лидия Александровна Шакова** 1928 ҫулхи утӑ уйӑхӗн 6-мӗшӗнче Аслӑ Елчӗкре ҫуралнӑ. 1936 ҫ. ялти шкула ҫӳреме пуҫлать. Ашшӗ — Алеқсандр Яковлевич — парти органӗсенче тӗрлӗ вырӑнта ӗҫленӗ май, унӑн нумай шкулсенче вӗренме тивет. Вӑтам пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн тӑван ялӗнчи шкулта аслӑ пионервожатӑйра ӗҫлет. Кайран, 1949 ҫулччен, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Катиккассинчи колхоз театрӗнче ӗҫлет.

1950—1972 ҫҫ. — Чӑваш патшалӑх пукане театрӗн артистки. Пӗрремӗш роль — С.Мерзляков ҫырнӑ «Следопыты» пьесӑри Севка ар ҫын ача сӑнарӗ. Тӗп тивӗҫне пурнӑҫланисӗр пуҫне, режиссерсемпе радиокомпозици йӗркелет, ача-пӑча спектаклӗсем ҫырать.

1972—1985 ҫҫ. — Ташкентри Узбек республикин пукане театрӗн артистки. Унта ӗҫленӗ тапхӑрта СНГри ҫӗршывсенче ҫеҫ мар, Индипе Афганистанри чылай хуласенче хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартать.

— Эпӗ театрӑн вырӑс труппинче ӗҫленӗ, — аса илет Л.Шакова. Апла пулин те, узбек драматургӗсен произведенийӗсене те лартнӑ. Пӗррехинче «Улыбнись, Айхон» спектаклькре Майсара рольне пачӗҫ. Хамӑн сӑнара пасарсем тӑрӑх шыраса ҫӳреме тиврӗ. Узбек хӗр арӑмӗсем тӗл пулсан, пӗр-пӗрне ҫурӑмран шӑлса ачашлаҫҫӗ. Пуҫӗсене пӗксе сывлӑх сунни питӗ кӑмӑллӑччӗ.

Маугли ролӗшӗн Ташкентри пукане театрӗн, Гаврошшӑн Кӑркӑсстанри фестиваль премийӗсене тивӗҫнӗ.

Л.Шакова РСФСР Театр ĕҫченĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1958). Узбек Республикин тава тивĕҫлĕ артистки (1983).

**Паллă рольсем:**

Мария («Мария-голубка», А.Толстой); Красная шапочка («Красная шапочка», Шарль Пьеро); Мальчиш-Кибальчиш («Мальчиш-Кибальчиш», А.Гайдар); Майсара («Улыбнись, Айхон», Хамза); Гаврош («Гаврош», Виктор Гюго); Аленушка («Аленький цветочек», Т.Аксаков).

**Л. Шакова** пурнăҫĕпе ĕҫĕ-хĕлĕ ҫинчен:

**А. Чернов**. Спектакли для детей. — Вечерний Ташкент, 1971, март, 20.

Вечерний Ташкент, 1983, февраль, 5.

**А. Сурин, Г. Кириллов**. Чувашский государственный театр кукол. — «СТД Чувашии» (спецвыпуск), Ч., 1992.

**Н. Смирнова**. Асамлă вăйпа танлашакан театр артистки. Хыпар, 1997, нарăс, 19.



# ЩИПЦОВА ГАЛИНА ВАСИЛЬЕВНА

**Галина Васильевна Щипцова-Сапожникова** 1960 çулхи утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче Аслă Таяпа ялĕнче çуралнă. Ялти вăтам шкулта сакăр çул вĕренсен, 1975 ç. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ленточницăра ĕçлеме пуçлать. Каçхи шкулта вăтам пĕлӳ илет. Пушă вăхăтра художество пултарулăх ĕçне явăçать, концертсене тăтăшах хутшăнать. Мал ĕмĕтлĕскере часах асăрхаççĕ, конкурс витĕр ăнăçлă тухнă хыççăн Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне ĕçлеме илеççĕ. 1984 çултанпа — хор артистки. 1985 ç. Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищинчен хăй тĕллĕн вĕренсе тухать.

Г.Щипцова тăван коллективпа Польшăра (1987), Германире (1991, 1994), Египетра, Бельгире, Францире (1995), Владивосток, Вологда, Магадан, Мурманск тата ытти нумай хуласенче гастрольсенче пулать.



# ХРИСТОФОРОВ ВЯЧЕСЛАВ ВАСИЛЬЕВИЧ

**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ**

**Вячеслав Васильевич Христофоров** 1963 çулхи çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче Çĕнĕ Пăва ялĕнче çуралнă. 1971—1980 çç. ялти, Елчĕкри шкулсенче вĕренет. Районти ачасен музыка шкулĕнче баянпа выляма хăнăхать.

1980 ç. Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç училищинчи хор дирижерĕсен уйрăмне кĕрет. Унтах юрлас ăсталăха туптать. Пултаруллă çамрăка часах Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне (1985—1988) ĕçлеме илеççĕ.

1988—1993 çç. Хусанти патшалăх консерваторийĕнче В.А.Воронов профессор патĕнче вĕренет. Хусан, Нижнекамск хулисенче иртнĕ конкурссене хутшăнать.

1993 çултанпа Шупашкарти Ф.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче преподавательре тата Чăваш патшалăх филармонийĕнче ĕçлет.

В.Христофоров — Ф.Лукин ячĕллĕ республикăри çамрăк юрăçсен, Пĕтĕм чăвашсен “Кĕмĕл сасă” конкурсен лауреачĕ. ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ (1998).

**В. Христофоров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**В. Сидоров**. Пирĕн тăрăхри илемлĕх ăстисем. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 15.

**Л. Филиппова**. «Хăма савалană чух иккĕн çăмăлрах»., Çамрăксен хаçачĕ, 1997, кăрлач, 18.

**В. Воробьев**. «Аттене пула эп юрăç пултăм». — Хыпар, 1998, ака, 10.

# ХРИСТОФОРОВ ИВАН ИВАНОВИЧ



**Чăваш Республикин халăх артисчĕ**

**Иван Иванович Христофоров** 1935 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче Çĕнĕ Пăва ялĕнче çуралнă. Ачалăхне çапла аса илет вăл:

— Пĕчĕкренех пиччепе кĕтӳ кĕтме çӳреттĕм. Кăнтăрла, выльăхсене Кĕçĕн Пăла хĕррине тапăра антарсан, пичче тăватă сехетлĕхе киле каятчĕ. Эпĕ вара, сăртлă вырăна улăхса, енчен енне пăхкалаттăм. Хама «ирĕкре» иккенне туйса юрласа яраттăм. Сасă çырма тăрăх инçете каятчĕ. Каçхине вара ял çыннисем калатчĕç: «Ай-яй, Ванюш, пит лайăх юрлатăн та».

Совет Çарĕнче хĕсметре (1954—1957) тăнă тапхăрта ăна юрă пуçаракан туса хураççĕ, ансамбле йышăнаççĕ. Унтан Жданов хулинчи музыка училищинче (1957—1961) вĕренет.

Пĕр кăтартуллă концерт хыççăн А.Орлов-Шуçăм композитор, жюри членĕ пулнăскер, çапла каланă: «Ку çамрăкран, курăр, халăх юрăçи пулатех». Юрăçă Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕнче, Чăваш радио хорĕнче, Чăваш патшалăх филармонийĕнче, Чăваш патшалăх академи каппеллинче тĕрлĕ çулсенче ĕçлет.

И.Христофоров асăннă ушкăнсемпе Украина, Инçет Хĕвел тухăç, Çĕпĕр, Дагестан çĕрĕсенче концертсемпе пулать. Нумай фестивальсене, смотр-конкурссене хутшăнать. Вăл ЧАССР тава тивĕçлĕ артисчĕ (1975), Патăрьел районĕнчи Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ преми лауреачĕ (1990), ЧР халăх артисчĕ (1992).

Чăваш радио фонотекинче вăл юрлакан 250 яхăн юрă упранать. Тăван юрăсемпе пĕрле вырăс, тутар,

украина, итали халăхĕсен хайлавĕсем те пур. Хăй те юрăсем çырать: «Ĕмĕт», «Медсестра», «Эс чупту мана», «Савнирен хакли никам та çук», «Чĕвĕл кăна чĕкеç», «Сана тупаймăп нихăçан», «Манса кайнă юратăвăм», «Тӳсрĕмĕр пĕрле» т.ыт.те.

**И. Христофоров** ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Ю. Ходарский**. С песней по жизни. — Молодой коммунист, 1975, апрель, 22.

**Ю. Кудаков**. Халăх юратнă юрăçă. — Ялав, 1985, 2 №.

**Ю. Силэм**. Янратар-и çĕнĕ юрă. — Ялав, 1986, 6 №.

**Ю. Илюхин**. Юрăпа çĕкленнĕ чун. — Коммунизм ялавĕ, 1988, авăн, 3.

**И. Иноходов**. Тараватлă Елчĕк çĕрĕ çинче. — Колхоз ялавĕ, 1990, утă, 14.

**П. Çăлкуç**. «Çынсем умĕнче юрлама вăтанатăп». — Пионер сасси, 1990, 18 №.

**Е. Антонова**. Чăваш çăлтăрĕсем. — Аван-и, 1992, 11 №.

**Р. Гурьянова**. «Йăлтах хĕрарăмран килет». — Хыпар, 1994, ака, 2.

# ЎНЕРÇĔСЕМ



## АГЕЕВ ВЛАДИМИР ИВАНОВИЧ

**Чăваш Республикин халăх художникĕ, Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн лауреачĕ**

**Владимир Иванович Агеев** 1932 çулхи ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче Аслă Елчĕкре çуралнă. 1939—1948 çç. ялти вăтам шкулта вĕренет. Ашшĕ И.Н.Агеев, асаттĕшĕ Н.П.Агеев, куккăшĕ А.Мурзакаев тата Мускаври Б.М.Греков ячĕллĕ студи вĕренекенĕ Н.И.Агеев пиччĕшĕ пулăшнипе сăнарлăх ӳнерне хăнăхса пырать, вырăнти куравсене хутшăнать.

1948—1952, 1955—1956 çç. Шупашкарти патшалăх ӳнер училищинче ăсталăха алла илет. Унăн вĕрентекенĕсем: Г.Д.Данилов, Э.Д.Мохов, Ф.Л.Лаврентьев, В.М.Макаров, Е.Е.Бургулов, П.Г.Григорьев-Савушкин, И.Т.Григорьев, М.С.Спиридонов, Н.К.Сверчков.

1952—1955 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăрать. Унта йĕркеленĕ стена хаçачĕсен конкурсĕсене явăçать. 1956—1957 çç. Вăрмар районĕнчи Урнарти, 1957 ç. Шупашкарти Иккассинчи, 1958 ç. Çĕрпӳри 1-мĕш вăтам шкулсенче сăрă ĕçне тата черчение вĕрентет.

Чăваш кĕнеке издательствин ӳнерçи (1958—1982) пулнă май, ют çĕршыв, совет, вырăс, чăваш çыравçисен 200 ытла кĕнекине илемлетет. Уйрăмах чăваш халăх

историне сăнлассине тĕп вырăна хурать. 1990 ç. триптих хатĕрлет: «Ибн Фадлан Алмушпа тĕл пулни», «Киремет», «Чăвашсене Христос тĕнне кĕртни» (çӳллĕшĕ 180 см, сарлакăшĕ 6 м).

Ӳнерçĕн ĕçĕсемпе урăх çĕршывсенче те кăсăкланса паллашаççĕ. Германире 10, Ригăра 15 экспонат упранать. Италире чăвашсем çинчен тухнă кĕнекере унăн «Арçури» балладăри Хĕветĕр сăнарне, Германири нумай томлă «Лексикон» кĕнекере темиçе ĕçне вырнаçтарнă.

В.Агеев СССР Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1970), ЧАССР ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн правленийĕн членĕ (1979—1982), РСФСР ӳнерçисен съезчĕн делегачĕ (1981), Чăваш Наци Академийĕн член-корреспонденчĕ (1993). Ăна РСФСР Министрсен Канашĕ çумĕнчи пичет Комитечĕпе РСФСР Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн (1965, 1971), КПСС обкомĕпе Министрсен Канашĕн (1981) Хисеп грамотисемпе наградăланă. ЧАССР тава тивĕçлĕ художникĕ (1977), ЧАССР К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн лауреачĕ (1982), ЧАССР халăх художникĕ (1983), И.Я.Яковлев ячĕллĕ преми лауреачĕ (1993).

**Куравсем:**

Чăваш ӳнерçисен ĕçĕсем. Ш., республикăри районсем, 1963—1982; Ӳнер училищисенче вĕренекенсен Пĕтĕм Союзри куравĕ. М., 1953; Пĕтĕм Раççейри кĕнеке графикин пĕрремĕш куравĕ. М., 1965; Пĕтĕм Раççейри кĕнеке графикин иккĕмĕш куравĕ. М., 1969; Зонăри «Аслă Атăл» виççĕмĕш курав. Ульяновск, 1970; Пĕтĕм Раççейри ача-пăчасен кĕнекисене илемлетекенсен конкурсĕ. М., 1971; РСФСР автономи республикисен ӳнерçисен ĕçĕсем. М., 1971; Пĕтĕм Раççейри автономи республикисен ӳнерçисен ĕçĕсем. М., 1971; Пĕтĕм Раççейри кĕнекесен куçса çӳрекен куравĕ. М., 1973; ЧАССР ӳнерçисен ĕçĕсем. Л., 1974; Зонăри «Аслă Атăл» тăваттăмĕш курав. Горький, 1974; Пĕтĕм тĕнчери кĕнеке графикин куравĕ. М., 1975; ЧАССР ӳнерçисен ĕçĕсем. Саранск, 1977; «Чăваш ӳнерçисем». Горький,

Ульяновск, 1979; Зонӑри «Аслӑ Атӑл» пиллӗкмӗш курав. Хусан, 1980; Чӑваш Енӗн сӑнарлӑх ӳнерӗ. М., 1980, 1993; «Чӑваш ӳнерҫисем». Уфа, 1982; В.И.Агеевӑн уйрӑм куравӗ. Ш., 1977, 1981, 1982.

**В. Агеев** пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен:

**И. Михайлов**. Ӗҫ хатӗрӗ, тушь, перо. — Коммунизм ялавӗ, 1965, пуш, 14.

**Э. Юрьев**. В.Агеев художник. — Тӑван Атӑл, 1966, 4 №.

**Е. Щеглов**. Молодое искусство России. — Советская Чувашия, 1971, июнь, 3.

**А. Игнатьев**. Ӳкерчӗксене В.Агеев тунӑ. — Коммунизм ялавӗ, 1975, чӳк, 14.

**А. Григорьев**. Пӗр художник — пилӗк пин произведени. Пионер сасси, 1977, ака, 1.

**А. Трофимов, Э. Юрьев**. Нумай енлӗ пултарулӑх. — Коммунизм ялавӗ, 1977, пуш, 3.

**Н. Воронов**. Краски Чувашии. — Правда, 1979, сентябрь, 7.

**Н. Овчинников**. Для «Большой Волги». — Советская Чувашия, 1979, декабрь, 30.

**А. Трофимов**. По пути творческого поиска. — Советская Чувашия, 1981, декабрь, 27.

**А. Трофимов**. Светлая палитра. — Советская Чувашия, 1982, апрель, 2.

**В. Эктел**. Чӑн-чӑн халӑх таланчӗ. — Колхоз ялавӗ, 1982, нарӑс, 2.

**Р. Гурьянова**. «Чӑн-чӑн искусство ҫыннисен авланмасӑрах пурӑнма вӑй ҫитермелле». — Хыпар, 1994, ҫӗртме, 11.



# АНДРЕЕВ ЮРИЙ АНАНЬЕВИЧ

**Юрий Ананьевич Андреев** 1962 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче Кивĕ Эйпеçĕнче çуралнă. 1979 ç. ялти вăтам шкула, 1994 ç. Мускаври Халăх искусствин университетне вĕренсе пĕтерет. 1980—1982 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăрать. 1984 çултанпа Шупашкарти «Агрегат завочĕ» акционерлă обществăра ӳнерçĕре ĕçлет.

Çамрăк ăстаçăн пултарулăх çулĕ 1989 ç. Шупашкарта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри куравра уçăлать. Унта вăл професси тĕлĕшĕнчен çӳллĕ шайра пурнăçланă ултă кӳлепе тăрататать: чăваш халăх юмахĕсенчи, халапĕсенчи сăнарсем. Çавăн пекех хăйĕн ĕçĕнче тăван халăхăн пурнăçне, йăли-йĕркине кăтартассине тĕп вырăна хурать. «Хăмла татни», «Кĕтӳçĕ», «Уйран уçлани» кӳлепе хатĕрĕсене Чăваш патшалăх ӳнер музейне яланлăха илнĕ.

Ю.Андреев 1995 çултанпа РФ Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ.

**Куравсем:**

К.В.Иванов 100 çул тултарнă ятпа иртнерĕ Чăваш ӳнерçисен ĕçĕсем, Ш., 1996; Çамрăк ӳнерçĕсен ĕçĕсем, Ульяновск, 1990; Пĕтĕм Раççейри çамрăк ӳнерçĕсен ĕçĕсем, Горький, 1991; Пĕтĕм Раççейри декоративлă прикладной искусство ăстисен куравĕ, М.,1991.

**Ю. Андреев** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**О. Резюкова.** Узоры всей Волги. — Советская Чувашия, 1989, сентябрь, 29.

**К. Леонидов.** Добро и свет. — Советская Чувашия, 1991, июль, 23.

**Ю. Викторов.** «Любой сюжет может стать важным...» — Советская Чувашия, 1995, апрель, 14.

**Н. Малышкин.** Шанăç паракан çамрăк. — Колхоз ялавĕ, 1995, чӳк, 21.

**В. Сидоров.** Пирĕн тăрăхри илем ăстисем. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 15.

**К. Сорокина.** Корни дерева уходят в прошлое. — Чебоксарские новости, 1996, июнь, 15.

**Р. Коровина.** Что делать. — «Мять холстину». — Республика, 1996, июнь, 22.

**Т. Акташ.** Поэтические образы чувашской деревни. — Советская Чувашия, 1996, июнь, 22.



# БАЛТАЙ МИКУҪ

**Балтай Микуҫ (Балтаев Николай Михайлович)** 1963 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 11-мӗшӗнче Питтӗпелӗнче ҫуралнӑ. 1970—1981 ҫҫ. ялти пуҫламӑш, Кивӗ Эйпеҫӗнчи сакӑр ҫул вӗренмелли шкулсенче, Шупашкарти 3-мӗш интернат-шкулта вӗренет. 1981—1982 ҫҫ. В.И.Чапаев ячӗллӗ производство пӗрлешӗвӗнче ӳнерҫӗре ӗҫлет. 1982—1984 ҫҫ. Инҫет Хӗвел тухӑҫӗнче чикӗре хӗсметре тӑрать.

Чулхула облаҫӗнчи Павлово хулинчи (1986 ҫулччен) 7-мӗш ал ӑсталӑх училищинче, Ленинградри В.И.Мухина ячӗллӗ ӳнерпе промышленность Аслӑ шкулӗнче (1986—1991) пӗлӳ пухать.

Ҫамрӑк ӳнерҫӗ кӑткӑс ӗҫ суйласа илнӗ: тӗрлӗ асамлӑ, тарӑн пӗлтерӗшлӗ ӳкерчӗксене металран калӑплать.

Чӑваш ӳнерҫисен пӗрлешӗвӗн членӗн (1993) пирвайхи куравӗ Мускаври ВДНХра 1985 ҫ. иртнӗ, II-мӗш степеньлӗ медале тивӗҫнӗ.

**Куравсем:**

Чӑваш наци конгресӗнче, Ш., 1992; Шӑмӑршӑ, Елчӗк районӗсенче, 1993, 1995; Чӑваш ӳнерҫисен ӗҫӗсем, Ш., 1994, 1995; Чӗмпӗр чӑваш шкулне уҫнӑранпа 126 ҫул ҫитнӗ ятпа йӗркеленӗ курав, У., 1994; Пӑлхарти тӗрӗк халӑхӗсен ӳнерҫисен симпозиумӗнче, 1994.

**Балтай Микуҫ** пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен:

**Н. Наумов.** Авалхи асамлӑх. — Хыпар, 1992, чӳк, 4.

**В. Сидоров.** Пирӗн тӑрӑхри илем ӑстисем. — Колхоз ялавӗ, 1996, нарӑс, 15.

# ДЕМИДОВ АНДРЕЙ ДЕМИДОВИЧ



**Андрей Демидович Демидов** 1913 çулхи юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче Кĕçĕн Елчĕкре çуралнă. Ашшĕ Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче 1914 ç. пуçне хунă. 1925—1929 çç. Шупашкарти шкул-коммунăра, К.М.Васильев, М.С.Спиридонов сăрă ăстисем патĕнче ăсталăха вĕренет. 1929—1932 çç. — Пензăри ӳнер техникумĕ. Унăн вĕрентекенĕсем: Н.Ф.Петров, И.С.Горюшкин-Сорокопудов, В.С.Попов, И.И.Ефимов, П.М.Михайлов, М.Ф.Бабурин.

1932—1935 çç. Чăвашгиз ӳнерçи, ЧАССР ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн Йĕркелӳ комитечĕн председателĕн çумĕ пулса Улатăрта ӳнерпе гравюра шкулне уçассипе, ӳнерçĕсен съездне ирттерессипе, Шупашкарта тата Горькинче куравсем йĕркелессипе ĕçлет. 1935—1937 çç. — Хĕрлĕ Çар ретĕнче. 1937 ç. — ЧАССР ӳнер енĕпе ĕçлекен управлени инспекторĕ.

Чăваш патшалăх ӳнер галерейин директорĕ (1939—1941) пулнă май, ӳнерпе гравюра шкулне (техникумне) Улатăртан Шупашкара куçарас, ӳнерçĕсен куçса çӳрекен, Мускаври республикăри çамрăк сăрă ăстисен куравĕсене уçас тĕлĕшпе вăй хурать.

Аслă Аттелĕх вăрçинче (1941—1944) Сталинград фронтĕнче çапăçать. Зенитнăй тата артиллери батарейисен командирĕ, батарея командирĕн замполичĕ.

Ун хыççăн партипе хуçалăх ĕçне (1944—1951) пуçăнать. 1951—1965 çç. «Художник» юлташлăхăн правленийĕн пуçлăхĕнче, РСФСР ӳнер фончĕн чăваш уйрăмĕн тĕп ӳнерçинче, аслă маçтăрĕнче тăрăшать.

ЧАССР ӳнерҫисен ҫуртне тӑвассипе, И.Ф.Кудрявцев скульптор ҫинчен монографи кӑларассипе ӗҫлет. 1965—1974 ҫҫ. А.Демидов РСФСР ӳнер фончӗн чӑваш уйрӑмӗн директорӗн, ӳнерпе производство мастерскойӗсен ӳнерҫин тивӗҫӗсене пурнӑҫлать.

Ӑна II степень Отечественнӑлла вӑрҫӑ орденӗпе, «Сталинграда хӳтӗленӗшӗн», «1941—1945 ҫулсенчи Аслӑ Отечественнӑлла вӑрҫӑра Германие ҫӗнтернӗшӗн» медальсемпе, ЧАССР Совнаркомӑн (1935), РСФСР Министерство Культурин (1964), РСФСР Ӳнерҫисен пӗрлешӗвӗн (1967) Хисеп грамотисемпе наградӑланӑ.

А.Демидов 1987 ҫулхи нарӑсӑн 22-мӗшӗнче вилнӗ.

**Куравсем:**

Чӑваш ӳнерҫисен ӗҫӗсем. Ш., Республикӑри районсем, 1932—1983; Зонӑри курав. Волгоград, 1967; Зонӑри курав. Ульяновск, 1969; Автономиллӗ республикӑсен ӳнерҫисен ӗҫӗсем. М., 1971.

**А. Демидов** пурнӑҫӗпе ӗҫ-хӗлӗ ҫинчен:

**Н. Никитин**. Ҫамрӑк художниксен пултарулӑхӗ. — Канаш, 1935, утӑ, 26.

**М. Федоров**. Чӑваш совет живописҫӗн ӳсӗм ҫулӗсем. — Сунтал, 1935, 7 №.

**А. Демидов**. Чувашская художественная галерея. — Красная Чувашия, 1939, ноябрь, 20.

**А. Демидов**. Пирӗн художниксем. — Ялав, 1958, 4 №.

**Н. Ургалкина**. Художники Чувашии. Ч., 1969.

**В. Вастулова**. Ӳкерӳ ӑсталӑхне йӗркелекен. — Елчӗк ен, 1998, юпа, 22.

# ДМИТРИЕВ ИВАН ВАСИЛЬЕВИЧ



**Иван Васильевич Дмитриев** (Эльмек Иванӗ) Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи Ҫӗнӗ Алхаш ялӗнче 1902 ҫулхи ака уйӑхӗн 14-мӗшӗнче ҫуралнӑ. 1905—1912 ҫҫ. ашшӗпе амӑшӗ Матак ялне куҫаҫҫӗ. Ӳнерҫӗ ачалӑхӗ Лаш Таяпа (ашшӗ ҫуралса ӳснӗ) ялӗпе те тачӑ ҫыхӑннӑ.

1912—1922 ҫҫ. Чӗмпӗр хулинче ӑс-хакӑл семинаринче пӗтӗмӗшле пӗлӳ илет, педагогика институтӗнче, ӳнер техникумӗнче вӗренет. Унӑн пӗрремӗш вӗрентекенӗсем: И.П.Гурьев, П.С.Добрынин, А.П.Остроградский.

И.Дмитриев Мускаври 2-мӗш университетӑн педагогика факультетӗнчи филологипе лингвистика уйрӑмӗнче (1922—1926), ӳнер мастерскойӗсенче (1923—1930) вӗренет. И.Я.Яковлева ӳкерет (1927—1928). 1928—1939 ҫҫ., вӗреннӗ вӑхӑтрах, Орехово-Зуево хулинчи 3-мӗш пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкулта учительте ӗҫлет. Б.Иогансонпа С.Герасимов ӳнерҫӗсем патӗнче ӑсталӑха ӳстерет. 1941—1945 ҫҫ. Мари-Эл республикинчи Суслонгер таврашӗнче вырнаҫнӑ полкра хӗсметре тӑрать. Ӳнерҫӗре ӗҫлет. 1938 ҫултанпа СССР Ӳнерҫисен пӗрлешӗвӗн членӗ.

**Куравсем:**

Ҫамрӑк ӳнерҫӗсен ӗҫӗсем. М., 1934; Ӳнерҫӗ-вӗрентекенсен ӗҫӗсем. М., 1937; Хула комитечӗн сӑрӑ ӑстисемпе скульпторӗсен пӗрремӗш куравӗ. М., 1937; Хула ӳнерҫисен пиллӗкмӗш куравӗ. М., 1937; ВЛКСМ 20 ҫул тултарнине халалланӑ ҫамрӑк ӳнерҫӗсен ӗҫӗсем.

М., 1939; Мускаври Ӳнерҫӗсен пӗрлешӗвӗн улттӑмӗш куравӗ. 1939; Сӑрӑ, йӗр, кӳлем ӳнерҫӗсен куравӗ. М., 1950; Чӑваш патшалӑх ӳнер музейӗнчи курав. 1972, 1986; Мускаври Ӳнерҫӗсен пӗрлешӗвӗн залӗсенче йӗркеленӗ курав. 1990.

И.Дмитриев чирлесе ӳкнӗ хыҫҫӑн 1991 ҫулхи раштавӑн 9-мӗшӗнче вилнӗ. Ӑна Мускав ҫывӑхӗнчи Варшавское шоссе тӑрӑхӗнчи Щербински масарӗнче пытарнӑ.

**И. Дмитриев** пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен:

**П. Сидоров.** Паллашӑр, И.В.Дмитриев, — Колхоз ялавӗ, 1972, ака, 13.

**П. Сидоров**. Сӑрӑсен сӑнарӗ. — Колхоз ялавӗ, 1972, ҫу, 4.

**П. Сидоров**. Мускаври чӑваш художникӗ. — Колхоз ялавӗ, 1977, ака, 21.

**П. Сидоров.** Чи вattӑ художникчӗ. — Колхоз ялавӗ, 1992, ҫу, 23.

**П. Сидоров**. Пирӗн ентеш. — Колхоз ялавӗ, 1992, ҫӗртме, 18.



# КСЕНОФОНТОВ ОЛЕГ ИВАНОВИЧ

**Олег Иванович Ксенофонтов** 1954 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче Лаш Таяпа ялĕнче çуралнă. Вăтам шкула пĕтерсен (1972) «Слава» колхозра ӳнерçĕ тата прицепщик пулса ĕçлет. Совет Çарĕнчен таврăнсан (1975—1977) хăй тĕллĕн И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика уйрăмĕнче вĕренет. Çав вăхăтрах Мускаври ӳнерпе промышленность институчĕн керамика ăстисене хатĕрлекен уйрăмра тăрăшать.

«СУОР» Главчăвашстрой фирма чĕнсе илнипе 1985—1991 çç. керамика цехĕнче ӳнерçĕре ĕçлет. Хальхи тапхăрта Шупашкарти ӳнер училищин преподавателĕ.

О.Ксенофонтов — чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ. Тăмран е тăм йышши хатĕрсенчен вуншар илĕртӳллĕ япала калăпланă, Чăваш ял хуçалăх академийĕн башня сехечĕн циферблачĕ (1982), «15 ĕмĕрти Германи керамики» (1985), «Пăлхар кĕввисем» чашăк-тирĕк серийĕ (1986—1990), «Кĕркунне» композици (1994) т.ыт.те.

**Куравсем:**

Чăваш ӳнерçисен пĕрлешĕвĕ çулсерен ирттерекен куравсем, 1985; «Çĕр пин юрă çĕршывĕнче», Л., 1987; А.Миттова халаллангă чăваш ӳнерçисен пĕрремĕш куравĕ, 1993; «Олег Ксенофонтов керамики», Шăмăршă, Елчĕк, 1994, 1995; «Экологи», Ш., 1995.

**О. Ксенофонтов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Г. Адюкова.** Ксенофонтовсем. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 15.



# КСЕНОФОНТОВ ЮРИЙ ИВАНОВИЧ

**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ**

**Юрий Иванович Ксенофонтов** 1939 çулхи пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Нĕркеç ялĕнче çуралнă. Лаш Таяпари вăтам шкула (1946—1956), Абрамцевăри ӳнерпе промышленность училищине (1957—1964), Мускаври В.И.Суриков ячĕллĕ ӳнер институтне (1966—1972) вĕренсе пĕтерет. 1958—1961 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăнă хыççăн Ордж хулинчи йывăç хатĕрлекен заводра маçтăр, сĕтел-пукан комбинатĕнче инженер-конструктор (1964—1966), скульптор (1972—1978), РСФСР ӳнер фондĕнче ӳнерçĕ (1975—1976), И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи ӳнерпе графика факультетĕнче преподаватель пулса ĕçлет.

Вăл СССР Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1974). ЧАССР тава тивĕçлĕ художникĕ (1976).

Ю.Ксенофонтов 1978 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче Шупашкарта вилнĕ.

**Куравсем:**

Чăваш ӳнерçисен ĕçĕсем, 1970—1978; РСФСРти автономи республикисен ӳнерçисен ĕçĕсем, М., 1971; «Раççей çамрăклăхĕ», М., 1971; Атăл тăрăхĕнчи çамрăк ӳнерçĕсен ĕçĕсем, Ш., 1973; «Аслă Атăл», Горький, 1974; «Советская Россия-V», М., 1975; Пĕтĕм Союзри «Мухтав ĕçĕ» курав, М., 1976; Аслă Октябрь 60 çул тултарнă ятпа йĕркеленĕ Пĕтĕм Раççейри курав, М., 1977; Пĕтĕм Союзри «Ленин çулĕпе» курав, М., 1977; Пĕтĕм Раççейри «Тăван çĕршыв тăрăх» курав, М., 1981

(вилнӗ хыҫҫӑн); Пӗтӗм Союзри «СССР — пирӗн Тӑван ҫӗршыв» курав, М., 1984 (вилнӗ хыҫҫӑн).

**Ю. Ксенофонтов** пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен:

**А. Григорьев**. Поиски и надежды. — Советская Чувашия, 1973, июнь, 26.

**А. Миронова**. Скульптор. — Советская Чувашия, 1974, сентябрь, 11.

**Н. Боровая**. Тӗп тема — республика пурнӑҫӗ. — Коммунизм ялавӗ, 1974, юпа, 1.

**С. Павлова**. Куракансем кӑмӑллӑ. — Коммунизм ялавӗ, 1974, чӳк, 23.

**Т. Емельянова**. На стендах — «Большая Волга». — Правда, 1975, январь, 2.

**Ю. Викторов**. Трое из 1600. — Советская Чувашия, 1976, март, 17.

**А. Трофимов**. Поиски выразительных средств в чувашском изоискусстве. — Чувашское искусство. Труды НИИ при Совете Министров ЧАССР, вып. 89, Ч., 1978.

**Г. Адюкова**. Ксенофонтовсем. — Колхоз ялавӗ, 1996, нарӑс, 15.



# МАКСИМОВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ

**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ**

**Николай Петрович Максимов** 1927 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче Çирĕклĕ Шăхалĕнче çуралнă. Ялти çичĕ çул вĕренмелли шкула (1935—1942) пĕтерсен Канашри педагогика (1942—1933), Шупашкарти ӳнер училищисенче (1950—1955) вĕренет. Елчĕк халăх сучĕн канцеляри секретарĕ (1946—1950), К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ӳнерпе декораци цехĕн пуçлăхĕ, ӳнерçĕ-постановщик, тĕп ӳнерçĕ (1955) пулса тăрăшать. Хăйĕн пурнăçне мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен театрпа çыхăнтарать.

Н.Максимов СССР Театр ĕçченĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1960). Ăна СССР Культура министерствин (1967), ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн (1968, 1986), КПСС обкомĕпе Министрсен Канашĕн (1981) Хисеп грамотисемпе, «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе (1970) наградăланă. ЧАССР тава тивĕçлĕ художник (1975) ятне панă.

Вăл 1974 çултанпа республикăра иртекен куравсене хутшăнать. Чăваш патшалăх академи драма тата музыка театрĕсенче пыракан 100 ытла спектакль валли декорацисемпе костюмсем хатĕрленĕ: «Нарспи» (1967), «Хура çăкăр» (1968), «Кушар» (1970), «Таната» (1972), «Трибунал» (1974), «Кай, кай Ивана» (1974), «Чуна кивçен илеймĕн» (1980), «Праски инке хĕр парать» (1982) спектакльсем, «Шывармань», «Нарспи» (1967—1982) опереттăсем т.ыт.те.

Унсăр пуçне республикăра пысăк чыс-хисепе тивĕç пулнă. Муркаш районĕнчи Оринино халăх

театрĕпе 1966 çултанпа тачă çыхăну тытать. Унта 50 ытла спектакль валли декораци ăсталанă.

— Çут тĕнчере кашни япала, çын хăйне майлă илемлĕ. Ăна курма, ăнланма кăна вĕренмелле, — тет вăл. Çак шухăша кашни ĕçĕнче çутатма, пулас ăрусем валли сăнарласа хăварма тăрăшать.

**Н. Максимов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**О. Сазонов**. Талантлă художник. — Колхоз ялавĕ, 1967, кăрлач, 31.

Первая встреча с Нарспи. — Советская Чувашия, 1967, ноябрь, 6.

**Г. Данилова**. В Чувашском академическом. — Театр, 1972, № 9.

**Ф. Романова**. Театры Чувашии в сезон 1971—1972 гг. — Труды НИИ при Совете Министров в ЧАССР, вып. 3, Ч., 1974.

**Ф. Романова**. «Нарспи». — Советская Чувашия, 1979, апрель, 18.

**Ю. Викторов**. Земля. Труд. Родина. — Советская Чувашия, 1985, декабрь, 14.

**Л. Филиппова**. «Çут тĕнчере кашни хăйне май илемлĕ...» Хыпар, 1997, çу, 17.



# МОИСЕЕВ БОРИС ПИМЕНОВИЧ

**Борис Пименович Моисеев** 1946 çулхи çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнче Ĕнел ялĕнче çуралнă. 1964 ç. Елчĕкри вăтам шкултан вĕренсе тухсан И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетне кайса кĕрет. 1969 ç. шăпа ăна Латви çĕр-шывне илсе çитерет. Çавăнтанпа Вентспилс хулинчи 3-мĕш номерлĕ вырăс шкулĕнче учитель-ӳнерçĕ пулса ĕçлет.

Тĕрлĕ куравсене Б.Моисеев вĕренӳ тапхăрĕнчех хутшăнать. Виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне Орел хулинче ирттернĕ Пĕтĕм Союзри студентсен куравĕнче палăрать. Унтанпа вăл чылай ĕç калăплать.

Илемлĕх тĕнчине вĕренекенсене те явăçтарать. Вĕсемпе Венгрири, Румынири, Израильти куравсене хутшăнать. Шăллĕн хĕрĕ — Елена — 1995 ç. «Иерусалим-3000 çул» конкурсра малти вырăн йышăнать. Латвири Израиль посолĕн Хисеп грамотине, хаклă парнине, аякри çĕр-шыва кайса курма путевка тивĕçет.

Ӳнерçĕ ытларах пейзаж, натюрморт ӳкерме кăмăллать. Филателист, нумизмат. Историпе çыхăннă сăмахлăх пухать. Ӳнерçĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ (1990). Ăна Латви Культура Министерствин, Çут ĕç Министерствин Хисеп грамотисемпе, паллăсемпе наградăланă.

**Куравсем:**

Латвири культура тата ӳнер академийĕн ĕçченĕсен куравĕ, 1978; Вентспилс хули 700 çул

тултарнӑ ятпа йӗркеленӗ курав, 1992; «Теодор Гринбергсд-120 ҫулта» курав, 1995.

1995 ҫ. ҫу уйӑхӗнче Тукумс хулинче 500 ӑстаҫӑн ӗҫӗсен куравне ирттереҫҫӗ. Вырӑс, чӑваш ӳнерҫисенчен пӗр пӗччен хутшӑнать вӑл унта.

Куравсем ҫавӑн пекех ют ҫӗршывсенче ирттереҫҫӗ: Франциpe (1977), Германире (1979), Швецире (1991), Эстонире (тӑтӑшах).

**Б. Моисеев** пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен:
**Н. Малышкин** «Аякри ҫывӑх тӑван» (Колхоз ялавӗ, 1995, юпа, 19) статьяра ҫырса кӑтартнӑ.



# МЯСНИКОВ АЛЕКСАНДР ФЕДОРОВИЧ

**Александр Федорович Мясников** 1905 çулхи çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнче Тăрăм ялĕнче çуралнă. Выçлăх çул ăна Мускаври ача çуртне ăсатаççĕ. Унта пурăннă чухне, каярахпа, хăй тĕллĕн ăсталанă ĕçсене тĕрлĕрен куравсене тăрататать. «Вискоза» фабрикинчи комсомол организацийĕ сĕннипе ăна Монко архитектор йĕркеленĕ ӳнер техникумне вĕренме яраççĕ. Кунта, ăсталăхне кура, ĕçĕсене суйласа илеççĕ, совет çамрăкĕсен пултарулăхĕн Парижра кăтартнă куравне тăратаççĕ. Асăннă техникумран вĕренсе тухсан ăна ЧАССР Наркомпрос пуçлăхне лартаççĕ.

1937—1939 çç. Улатăрти ӳнерпе гравюра училищин директорĕнче ĕçлет. 1940—1942 çç. Мускаври В.И.Суриков ячĕллĕ ӳнер институтĕнче пĕлĕвне анлăлатать.

А.Мясников 1942—1946 çç. — Аслă Аттелĕх вăрçинче. Гварди аслă лейтенанчĕ, рота политрукĕ Берлина штурмлать. Икĕ хутчен аманать.

1948—1953 çç. Шупашкарти ӳнер училищине ертсе пырать. Училищĕне кадрсемпе çирĕплетес тĕллевпе Ленинградран Г.Руднев, И.Григорьев, В.Гурин, Р.Ермолаева, В.Леонтьев, Е.Бургулов ӳнерçĕсене чĕнсе илет. Куравсем хатĕрлес, унта хутшăнма авторсене пулăшас тĕлĕшпе нумай вăй хурать. Хăй те 1930—1965 çç. республикăра ирттернĕ куравсене хастар хутшăнать.

А.Мясников искусствăн тĕрлĕ енĕпе ĕçлет. Плакатсем çырать, Шупашкар хулине илемлетес ĕçе явăçать. Унăн ӳкерчĕкĕсемпе капăрлатнă «Нарспи»

кĕнеке, 1929 ç. Мускаврa пичетленсе тухнăскер, аслă поэтăн пултарулăхне тĕпчес çула уçса панă. Ĕ çĕсене «Правда» хаçатра, М.Горький редакцилесе тăнă «Наши достижения» журналта мухтанă, И.Э.Грабарь, А.А.Ремов академиксем ырланă.

«Комсомолка», «Пир çапни», «Ача-пăча площадки», «Хĕрлĕ площадь» ӳкерчĕксем, «Родина» кинотеатри рекламăсем, тĕп хулана челюскинецсем, Водопьяновпа Каманин паттăрсем килнĕ вăхăта хатĕрленĕ ĕçсем чăваш искусствин 30-мĕш çулĕсенчи чи паллă çитĕнĕвĕсене кăтартса параççĕ.

1970 ç. хыççăн вăл ытларах кӳлепе ӳнерĕ енĕпе ĕçлет. «Патрис Лумумба», «Кузнецова трактористка», «Ялти учительница» портречĕсем 30-мĕш çулсенче сăрласа тунă «С.Е.Петров», «Иван Мучи», «Уйăп Мишши», «Шелепи», «Измайлов хĕрлĕгвардеец» пекех паллă. Районти Тăрăм, Патреккел, Аслă Елчĕк, Çĕнĕ Пăва ялĕсенче, Патăрьел, Шăмăршă, Улатăр районĕсенче палăксем ăсталать. Шупашкарти Ленин тата Чапаев памятникĕсене юсаса çĕнетме темиçе хутчен хутшăнать.

А.Мясников 1950 ç. СССР Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ. Районти пĕрремĕш фотограф. Ăна I степень Отечественнăлла вăрçă, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе, «Берлина илнĕшĕн», «1941—1945 çулсенчи Аслă Отечественнăлла вăрçăра Германие çĕнтернĕшĕн», «Ĕç ветеранĕ» медальсемпе, «Парти ретĕнче — 50 çул» паллăпа наградăланă. Вăл 1996 çулхи авăн уйăхĕн 24-мĕшĕнче вилнĕ.

**А. Мясников** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

Чăваш совет художникĕсен пурнăçĕнчен. — Сунтал, 1933, 3-4 №№.

А.Мясников художникĕн ĕçĕсем. — Канаш, 1936, кăрлач, 11.

Мясников художник мастерскойĕнче. — Канаш, 1936, утă, 18.

С.Л.-Н.А.Мясников художникĕн çĕнĕ картинисем. — Канаш, 1937, кăрлач, 3.

Новые работы художника Мясникова. — Красная Чувашия, 1937, январь, 3.

**А. Демидов**. Скульптурные портреты колхозников. — Советская Чувашия, 1960, декабрь, 2.

**А. Григорьев**. Чĕре парăмĕ. — Коммунизм ялавĕ, 1980, юпа, 26.

**Н. Малышкин**. Районти чи ватă ӳнерçĕ. — Колхоз ялавĕ, 1995, юпа, 7.



# ПЕТРОВ ПЕТР ВАРФОЛОМЕЕВИЧ

**Петр Варфоломеевич Петров** 1950 çулхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче Çирĕклĕ Шăхаль ялĕнче çуралнă. 1956 ç. вĕсен çемйи Семипалатинск хулине куçса каять. Вăл унти 20-мĕш вăтам шкулта (1957—1967), каярахпа (1967—1972) И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетĕнче вĕренет. Дагестанри Избербаш хулинчи педучилищĕре (1972—1973), Тува АССРĕнчи Кызыл хулинчи шкул-интернатра сăрă ĕçĕпе черчени учителĕнче, пединститутри ӳнер кафедрин лаборантĕнче (1975—1976), Шупашкарти приборсем тăвакан заводра ӳнерçĕ-оформительте (1976—1977), РСФСР ӳнер фончĕн чăваш уйрăмĕнче ӳнерçĕре (1977 çултан), тĕп хулари ачасен 2-мĕш ӳнер шкулĕн преподавателĕнче (1984 çултан) ĕçлет. 1973—1974 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăрать.

П.Петров СССР Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1977). Ăна Франциri Салон кĕмĕл медалĕпе (1978), КПСС обкомĕпе ЧАССР Министрсен Канашĕн Хисеп грамотипе (1981) наградăланă.

**Куравсем:**

Республикăра 1972 çултанпа; Атăл тăрăхĕнчи çамрăк ӳнерçĕсен 1-мĕш зонинчи курав, 1972; «Расçей çамрăклăхĕ» тата «Çĕршыв çамрăклăхĕ», М., 1976; «Аслă Октябре — 60 çул», М., 1977; «Совет çĕр-шывĕн çамрăк гвардийĕ», М., 1978; «Аслă Атăл», Хусан, 1979, 1991; Пĕтĕм Союзри çамрăк ӳнерçĕсен ĕçĕсем,

1980; «Раççей ӳнерçисем», Брно, 1982; «Кĕрхи салон», Париж, 1984; Пĕтĕм Раççейри курав, М., 1991, 1992.

**П. Петров** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Е. Бургулова**. На выставке — работы молодых. — Советская Чувашия, 1976, апрель, 20.

**П. Петров**. Роща. 1976. Репр. «Огонек», 1976, № 52.

**Е. Бургулова**. Пейзажи родных мест. — Советская Чувашия, 1977, март, 25.

**Арно д' Отрив**. «Мы делаем доброе дело». Награды Салона советским художникам. — Советская культура, 1984, июнь, 5.



# ПИТЕРКИН ВАСИЯН ЕВСТАФЬЕВИЧ

**Васиян Евстафьевич Питеркин** 1923 çулхи авӑн уйӑхӗн 25-мӗшӗнче Аслӑ Таяпара çуралнӑ. Ялта çичӗ çул вӗреннӗ хыççӑн, 1939 ç. Канашри педагогика училищине кӗрет. 1942 ç. тӑван ялӗнче тӗрлӗ предметпа вӗрентме пуçлать. Хайне фронта яма темиçе хутчен ыйтсан та, чирлӗ пулнӑран, тивӗçтермеççӗ. Вулав çуртӗнче, клубра харӑсах ӗçлеме ӗлкӗрет. Пьесӑсем, интермедисем хатӗрлеççӗ. «Хавaслӑ кулӑш», «Çамрӑк çыравçӑ» журналсем кӑлараççӗ. Шкулта изостуди йӗркелет.

1946 ç. В.Питеркин Шупашкарти ӳнер училищин виççӗмӗш курсне вӗренме кӗрет. «Колхоз туйӗ» ӳкерчӗкпе диплом ӗçне хӳтӗлет. Виçӗ çултан Канашри 1-мӗш тата 2-мӗш вӑтам шкулсенче пӗр вӑхӑтрах ӗçлет. Вунӑ çул хушши шкул ачисен керменӗнче вӑй хурать.

1950—1956 çç. — Чӑваш патшалӑх педагогика институчӗн истори факультечӗн студент-заочникӗ. Пултарулӑх ӗçне, кирек ӑçта ӗçлесен-вӗренсен те, пӑрахмасть. 30 çул ытла Çемен Элкерӗн «Хӗн-хур айӗнче» кӗнекине капӑрлатать. Тӗрлӗ куравсене 1939 çултанпа хутшӑнать. Ӗçӗнче çупа, акварельпе, гуашпа, кӑмрӑкпа, соуспа, пастельпе усӑ курать.

В.Питеркин чӑваш ӳнерçисен пӗрлешӗвӗн членӗ (1994). Патриотика тематикине анлӑн çутатнӑшӑн «Красная звезда» хаçат редакцийӗн Дипломне (1985), Пӗтӗм Союзри халӑх пултарулӑхӗн II-мӗш фестивалӗн медальне (1987) илме тивӗç пулнӑ.

**В. Питеркин** пурнӑçӗпе ӗçӗ-хӗлӗ çинчен искусствоведени докторӗ А.Григорьев «Васиян Питеркин» каталогра (1984) çырса кӑтартнӑ.



# ПУПИН ГЕОРГИЙ СТЕПАНОВИЧ

**Георгий Степанович Пупин** 1964 çулхи çу уйăхĕн 26-мĕшĕнче Турхан ялĕнче çуралнă. Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта сакăр класс пĕтерет. 1982—1984 çç. Совет Çарĕнче хĕсметре тăрать. 1988 ç. Шупашкарти ӳнер училищинчен вĕренсе тухать.

1985—1992 çç. хулари 28-мĕш шкулта учитель, «Водоканал» управленире, «Хĕлхем» пĕчĕк предприятире ӳнерçĕ пулса ĕçлет.

Г.Пупин юртан, пăртан, хăйăртан юмахсенчи тĕрлĕ сăнарсене ăсталать. Мускавра, Киевра, Новосибирскра, Архангельскра тĕнче шайĕнче иртттернĕ «Юрпике» фестивальсенче лауреат ятне çĕнсе илет.

**Куравсем:**

Чăваш ӳнерçисен ĕçĕсен «Çулталăк панорами» курав, Ш., 1986.

Чăваш ӳнерçисен çурхи куравĕ. Ш., 1988.

Г.Пупинăн ятарлă куравĕсем. Ш., 1988.

«Чăваш ӳнерçисен портречĕсем тата автопортрет». Ш., 1989.

Г.Пупинăн ятарлă куравĕ. У., 1989, Ш., 1994.

**Г. Пупин** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Р. Гурьянова.** «Пăх ман çине».—Хыпар, 1994, пуш, 16.

**Р. Лепелкина.** «Жар-птица» принесла удачу. — Чебоксарские новости, 1995, январь, 12.

**Л. Решетина.** «Крыса — на троне». Это актуально. — Чебоксарские новости, 1996, январь, 4.

**Г. Королева.** «Вьюговей-94». — Чебоксарские новости, 1994, январь, 7.



# ПУПИН ПЕТР СТЕПАНОВИЧ

**Петр Степанович Пупин** 1954 çулхи кăрлачăн 3-мĕшĕнче Турхан ялĕнче çуралнă. 1961—1971 çç. Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта, 1971—1981 çç. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетĕнче вĕренет. 1972—1975 çç. Тинĕс-Çар флотĕнче хĕсметре тăрать. 1981—1994 çç. — РСФСР ӳнер фончĕн чăваш уйрăмĕн скульпторĕ. 1994 ç. ЧР культура тата наци хутшăнăвĕсен ĕçĕсен министерствин Курав керменĕн пуçлăхне çирĕплетеççĕ.

П.Пупин СССР Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1989). Чăваш ӳнерçисен çĕнĕрен йĕркеленнĕ пĕрлешĕвĕн (1993) ертӳçи. Вăл 1992 ç. Г.С.Лебедев композитора асăнса вăл пураннă çурт çине унăн портретне бронзăран шăратса вырнаçтарать. 1993 ç. чăвашсен пĕрремĕш кинорежиссерĕ И.С.Максимов-Кошкинский вил тăпри çине гранитпа бронзăран палăк туса лартать.

**Куравсем:**

Республикăра 1982 çултанпа; Зонăри «Аслă Атăл» курав. Ш., 1985; «Советская Россия-VII», М., 1985; Пĕтĕм Союзри «Эпир коммунизм тăватпăр» курав, М., 1985; Пĕтĕм Союзри «Манăн çĕр-шыв» курав, М., 1986; Чăваш ӳнерçисен Гамбургри ĕçĕсем, 1995.

**П. Пупин** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Л. Тихонов**. Нужна помощь скульпторам. — Советская Чувашия, 1985, июль, 9.

**А. Вражкин.** Ăсталăхпа идейăлăхшăн. — Коммунизм ялавě, 1985, чӳк, 29.

**А. Трофимов.** На всесоюзной художественной. — Советская Чувашия, 1986, март, 2.

**В. Петрова.** Кто начал — тот не начинающий. — Советская Чувашия, 1986, март, II.

**Ю. Викторов**. Творчество молодых. — Советская Чувашия, 1986, июль, 20.

**О. Резюкова**. Творчество молодых. — Советская Чувашия, 1987, апрель, 1.

**Л. Кадикина, Л. Семечкина**. В экспозиции скульптора. — Советская Чувашия, 1987, июль, 18.

# ШАРКОВА ТАТЬЯНА ВАСИЛЬЕВНА



**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ**

**Татьяна Васильевна Шаркова-Изратова** 1954 çулхи юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче Кавал ялĕнче çуралнă. Мĕн ачаран илемлĕх тĕнчине туйса, ăша хывса пурăннă. Пĕрремĕш вĕрентекенĕ — Николай Васильевич Семенов. Малашлăхра тăтăшах вĕрентсе, пулăшса пыракан паллă ӳнерçĕсем: чăваш искусствоведенине пуçарса яраканĕ М.Спиридонов, искусствоведени докторĕ А.Трофимов, РФ тава тивĕçлĕ ӳнерçи Е.Ефремова, А.Анцыгина, А.Ильбекова.

Т.Шаркова 1979 ç. Шупашкарти ӳнер училищинчен лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать. 1980—1985 çç. И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш педагогика институчĕн ӳнерпе графика факультетĕнче пĕлĕвне ӳстерет. Диплом проектне шкулта чăваш халăх тĕррине вĕрентмелли кружок йĕркелес ыйтупа хатĕрлет. Ун çумне тăвата пайлă пысăк чаршав — «Тăван çĕр-шыв» ятлă — тĕрлесе парать. Пĕр вăхăт республикăри ăслăлăхпа меслет центрĕнче ĕçлет. 1983 çултанпа — Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча ăсталăх шкулĕн вĕрентекенĕ.

Вăл пейзажсемпе, натюрмортсемпе сахал мар вăхăт ирттерет. Çапах та чи çывăххи — чăваш тĕрри. 1978 çултанпа ăна пуçтарать, тĕпчет.

80-мĕш çулсенче тĕрлĕ куравсене хутшăнма пуçлать. 1985 ç. чăваш ӳнерçисен ĕçĕсемпе пĕрле ал шăллипе салфеткăна «Аслă Атăл» курава тăратать. Мускавра «Раççей çамрăклăхĕ», «РСФСР халăх искусстви» çамрăк ӳнерçĕсен куравĕсене «Тăван тавралăх», «Телей» ал шăллисене тата темиçе произведение кăтартать. Çавсем тата «Пĕркенчĕк»

Мускавра юлаççĕ. Санкт-Петербургра, Чулхулара, Суздальте, Подольскра темиçешер япала. Венгрири Эгер хулин музейĕ сăрăсем, пиçиххисем, «Танюк» ятлă чăвашла пуканене усрать. Германире, Венгрире, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче, Финляндире, Италире, Японире, Англире те унăн ĕçĕсемпе интересленсе паллашаççĕ.

РФ Ӳнерçисен пĕрлешĕвĕн членĕ (1989) ăсталанă чăваш тĕрриллĕ хатĕрсем Леонардо да Винчи, Пикассо, Рембрандт ĕçĕсемпе пĕрле уйрăм çынсен коллекцийĕсенче упранаççĕ. ЧР тава тивĕçлĕ художникĕ (1998).

**Т. Шаркова** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**Г. Миронова.** — Пике, 1995, 3-4 №№.

**Г. Миронова.** «Я пришла в этот мир не случайно». — Грани, 1995, март, 7.

**Л. Власова.** «Пур самант та маншăн хаклă, пĕрне те хуратса тăкас килмест». — Тантăш, 1995, раштав, 8.

**В. Минеева.** Çу пуçламăшĕнче сывлăш та симĕс... — Хыпар, 1997, утă, 11.

# ЯТМАНОВ НИКОЛАЙ ОСИПОВИЧ

**Николай Осипович Ятманов** 1927 çулта Лаш Таяпа ялĕнче çуралнă. 1944 ç. вăтам шкула пĕтерсен Мускаври архитектура институтне вĕренме кĕрет. Диплом илнĕ хыççăн Грознăйра, Мускав облаçĕнчи Подольскра, Красноярск крайĕнчи Минусинскра, пенсине тухичченех Çыранлă Чаллă хулинче архитекторта ĕçлет. Тĕрлĕ хуласенче палăксем лартать, обществăлла çурт-йĕр проекчĕсем тăвать. 50-мĕш çулсенче Шупашкарта проект институтĕнче, ӳнер фондĕнче вăй хурать.

Н.Ятманов 1952 çултанпа СССР Архитекторĕсен пĕрлешĕвĕн членĕ. Грознăй хулинче тунă обществăлла çуртшăн РФ Министрсен Канашĕн премине тивĕçнĕ.

Н.Ятманов çыравçă та. Вун пиллĕкре чухнех патриотла очерксен пуххине чăвашла куçарса кĕнекен кăларать. 50-мĕш çулсен варринче Чăваш академи драма театрĕнче унăн «Çăкăр-тăвар хире-хирĕç» камичĕ пынă. Çыранлă Чаллăра пурăнакан ентешĕн юлашки çулсенче çырнă повеçĕсемпе калавĕсем хаçат-журналсенче пичетленеççĕ.

**Н. Ятманов** пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен:

**В. Эктел.** Тăваньен çыравçисем. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 15.

**В. Сидоров.** Пирĕн тăрăхри илемлĕх ăстисем. — Колхоз ялавĕ, 1996, нарăс, 15.

# ХАЛĂХ КОЛЛЕКТИВĔСЕМ

## ПАТРЕККЕЛĔНЧИ ХАЛĂХ ХОРĔ

Ăна 1922 çулта О.В.Миловидова учительница йĕркеленĕ. Малтанхи тапхăрта ушкăн «Варшавянка», «Смело, товарищи, в ногу», «Малалла утар» юрăсене, вырăнти темăсемпе хатĕрленĕ такмаксене юрланă. Вăй илсе пыракан хорпа М.М.Воронцов хыççăн ЧАССР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ М.В.Ястребова тăрăшнă. Репертуарта чăваш, вырăс тата ытти халăхсен юррисем, классика хайлавĕсем янăрама пуçланă. Юрăççен ăсталăхне аталанма чăваш композиторĕсем Г.Хирбю, Ф.Лукин, Г.Фандеев, А.Орлов-Шуçăм сахал мар пулăшнă.

1967 çулта хора «халăх» ят панă. 1971 çултанпа ăна ЧР тата РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Г.А.Борисов ертсе пырать.

## РАЙОНТИ КУЛЬТУРА ÇУРЧĔ ÇУМĔНЧИ ХАЛĂХ ТЕАТРĔ

Театр «халăх» ята 1976 çулхи кăрлач уйăхĕнче çĕнсе илнĕ. Ăна режиссер пулса Л.А.Романова методист ертсе пынă. Репертуарта «Эх, Иван», «Аптăранă кăвакалсем», «Ялта», «Виçĕ туй» спектакльсем пулнă. Çулсерен çĕнĕ ĕçсем хатĕрленĕ. Уйрăмах «Кушар» пьесăна ăста вылянă хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ артистсем. 33-ĕн хутшăннă унта. Г.М.Мальков,

Г.Т.Московская, И.П.Иноходов, З.И.Воронова, А.В.Молодов, Л.В.Сырцова, В.А.Кудряшов, В.Д.Теллин, Б.В.Щипцов, В.Г.Стекольников т.ыт.те чăннипех театрăн тĕрекĕ шутланнă. Халăх театрĕ паян та час-часах ялсенче пулать.

## ЕЛЧĔК ЕНĔН ИСТОРИПЕ ТĂВАН ТАВРАЛĂХ ХАЛĂХ МУЗЕЙĔ

1971 çул вĕçĕнче, районти комсомол комитечĕн пуçарăвĕпе, Елчĕкри культура çуртĕнче музей ĕçлеме пуçланă. Пархатарлă ĕçе ВЛКСМ райкомĕн I секретарĕ П.П.Сидоров йĕркеленĕ. Ăна пулăшаканĕсем: Б.П.Моисеев, Н.С.Ефимов, Е.В.Кантеев, А.Р.Романов, М.В.Воронцов.

Халĕ музей Иванов урамĕнчи 7-мĕш çуртра (ăна 1909 ç. Беляевсем тунă) вырнаçнă. Унта виçĕ пине яхăн экспонат упранать. Музей пуçлăхĕ Г.А.Адюкова, лектор-экскурсовод В.Г.Вастулова çулсерен тĕрлĕ куравсем йĕркелеççĕ, материалсем пухаççĕ.

Музее 1990 çулхи чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕнче «халăх» ят панă.

## КУРНАВĂШРИ ИСТОРИПЕ ТĂВАН ТАВРАЛĂХ ХАЛĂХ МУЗЕЙĔ

Асăннă музее вăтам шкул коллективĕ 1978 çулта йĕркелеме пуçланă. Вăл ĕçе «Урожай» колхоз ертӳçисем те хастар хутшăннă. Ăна ЧР тата РФ тава тивĕçлĕ учителĕ П.М.Смирнов директор ертсе пынă.

Музее 1985 çулхи çу уйăхĕн 9-мĕшĕнче — нимĕç фашисчĕсене çапса аркатнăранпа 40 çул çитнĕ тĕле уçнă. 1992 çулта «халăх» музейĕ ят панă. Музей ертӳçи — А.П.Смирнов. Экскурсовод тивĕçĕсене вĕренекенсем пурнăçлаççĕ.

Шкулта çавăн пекех В.И.Ленинпа, Октябрьти революципе йĕркеленĕ пысăк музей ĕçлет.

## ХУШСА ПАНИ

### СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔСЕМ

АНДРЕЕВ СЕМЕН АЛЕКСЕЕВИЧ (Энтепе)
БЕЛЯЕВ АЛЕКСАНДР ФИЛИППОВИЧ (Елчĕк)
ИВАНОВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Елчĕк)

### СОЦИАЛИЗМЛА ĔÇ ГЕРОЙĔСЕМ

ВАСИЛЬЕВА ЕВЛАЛИЯ ИВАНОВНА (Аслă Пăла Тимеш)
ЕМЕЛЬЯНОВ ГЕРАРИЙ ИВАНОВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
ЗАЙЦЕВ ВАСИЛИЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
ЛАВРЕНТЬЕВА МАТРЕНА ДМИТРИЕВНА (Аслă Пăла Тимеш)
МИХАЙЛОВСКИЙ ИВАН АЛЕКСЕЕВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
НИКИТИН ВАСИЛИЙ АНТОНОВИЧ (Таяпа Энтри)
ПАНКРАТОВ НИКОЛАЙ ИВАНОВИЧ (Кивĕ Эйпеç)
ПЕТРОВА АЛЕКСАНДРА ЕГОРОВНА (Аслă Пăла Тимеш)
СВЕКЛОВ ВАСИЛИЙ ГРИГОРЬЕВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)

### СССР ХАЛĂХ УЧИТЕЛĔ

ЧЕРНОВ ПЕТР НИКИФОРОВИЧ (Вырăскасси)

### СССР ТАВА ТИВĔÇЛĔ СПОРТ МАСТЕРĔ

ИГНАТЬЕВ АРДАЛИОН ВАСИЛЬЕВИЧ (Ĕнел)

### РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ

СМИРНОВ АЛЕКСЕЙ ЕГОРОВИЧ (Акчел)
ЧЕРНОВ ФЕДОР СЕМЕНОВИЧ (Шăмалак)

### РАÇÇЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН НАУКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ДЕЯТЕЛĔ

НИКИТИН ИВАН НИКОЛАЕВИЧ (Вăрăмхăва)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ТАВА ТИВӖҪЛӖ УЧИТЕЛӖСЕМ

АГЕЕВ АЛЕКСЕЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Аслӑ Елчӗк)
БЕЛЯЕВ ИВАН ФИЛИППОВИЧ (Елчӗк)
ЖИРНОВ ВИКТОР ВАСИЛЬЕВИЧ (Тӗмер)
МАРКОВ ИПАТИЙ ПЕТРОВИЧ (Ӗнел)
МОЛОДОВ ПЕТР ТИМОФЕЕВИЧ (Елчӗк)
МОЛОСТВОВ ЕФИМ МИХАЙЛОВИЧ (Аслӑ Елчӗк)
НИКИТИНА ЛИДИЯ СТЕПАНОВНА (Кипеҫ)
СМИРНОВ ПЕТР МИХАЙЛОВИЧ (Курнавӑш)
ЯТМАНОВ ОСИП МИХАЙЛОВИЧ (Лаш Таяпа)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ВРАЧӖ

СЕРГЕЕВА ЕВДОКИЯ СЕРГЕЕВНА (Елчӗк)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ТРЕНЕРӖ

ДАНИЛОВ АНАТОЛИЙ КСЕНОФОНТОВИЧ (Хӗрлӗҫыр)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ЯЛ ХУҪАЛӐХӖН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪЧЕНӖ

ЦАПЫРИН АЛЕКСАНДР МИХАЙЛОВИЧ (Вырӑскасси)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ТАВА ТИВӖҪЛӖ АГРОНОМӖСЕМ

ВАСИЛЬЕВА ЕВЛАЛИЯ ИВАНОВНА (Аслӑ Пӑла Тимеш)
ЕВТИХЕЕВ АЛЕКСАНДР ЕВМЕНЕВИЧ (Исемпел)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ЗООТЕХНИКӖ

КУЗЬМИНА АЛЕКСАНДРА ФЕДОРОВНА (Ӗнел)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ЭКОНОМИСЧĔ

АНТОНОВА ЕЛЕНА ИЛЬИНИЧНА (Аслă Елчĕк)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ТАВА ТИВĔҪЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔСЕМ

ИВАНОВ АЛЕКСАНДР ФЕДОТОВИЧ (Патреккел)
САПОЖНИКОВ МИХАИЛ ПИМЕНОВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ЮРИСЧĔСЕМ

БАГАУТДИНОВ МИНСАИТ МИНУЛЛОВИЧ (Пикшик)
ВАСИЛЬЕВ ГЕННАДИЙ ГРИГОРЬЕВИЧ (Элекҫей Тимеш)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ХИСЕПЛĔ КИНЕМАТОГРАФИСЧĔ

ПИТЕРКИНА АЛЕВТИНА ДМИТРИЕВНА (Елчĕк)

## РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН ХИСЕПЛĔ АВТОТРАНСПОРТНИКĔ

СОЛИН ПЕТР ДМИТРИЕВИЧ (Тĕмер)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ

КАРАМАЛИКОВА ЗИНАИДА ПЕТРОВНА (Аслă Елчĕк)
КИСАПОВА СВЕТЛАНА ПЕТРОВНА (Патреккел)
ЛЕВЫЙ ИЛЬЯ ИВАНОВИЧ (Хăвăлҫырма)
ЛЕОНТЬЕВА КЛАВДИЯ МИХАЙЛОВНА (Аслă Таяпа)
МИХЕЕВА МАРИЯ ЕФИМОВНА (Лаш Таяпа)
НИКОЛАЕВА АНТОНИНА АРСЕНТЬЕВНА (Акчел)
МОСКОВСКАЯ ГАЛИНА ТРОФИМОВНА (Аслă Пăла Тимеш)

ПЕТРОВ ИЛЬЯ ЕГОРОВИЧ (Патреккел)
САВУКОВ ВАЛЕРИЙ ЕГОРОВИЧ (Аслă Елчĕк)
СИНИН АЛЕКСЕЙ ПАНТЕЛЕЙМОНОВИЧ (Аслă Елчĕк)
СИНИЦЫН СЕРГЕЙ МАКСИМОВИЧ (Курнавăш)
СМЫЧКОВА КЛАВДИЯ ГРИГОРЬЕВНА (Çирĕклĕ Шăхаль)
СТЕПАНОВ ВИКТОР ИЛЬИЧ (Вырăскасси)
ЧЕРНОВ ФЕДОР СЕМЕНОВИЧ (Шăмалак)
ЩЕРБАКОВ ВЛАДИМИР ГРИГОРЬЕВИЧ (Тăрмăш)
ЯСТРЕБОВА МАРИЯ ВАСИЛЬЕВНА (Акчел)

## КОМИ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ

ДАНИЛОВ АНАТОЛИЙ КСЕНОФОНТОВИЧ (Хĕрлĕçыр)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН НАУКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ДЕЯТЕЛĔ

НИКИТИН ИВАН НИКОЛАЕВИЧ (Вăрăмхăва)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĚРЕНТĚВĚН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ

ВАСИЛЬЕВ ВАЛЕРИЙ МИХАЙЛОВИЧ (Çĕнĕ Эйпеç)
ЖИРНОВА ЕВГЕНИЯ ИВАНОВНА (Ёнел)
КУЧАКОВА ЕВГЕНИЯ НИКОЛАЕВНА (Тăрмăш)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔСЕМ

АЛЮНОВ МИХАИЛ НИКОЛАЕВИЧ (Кивĕ Арланкасси)
АНИСИМОВА СОФИЯ ЕВСТАФЬЕВНА (Аслă Таяпа)
АРХИЛИНА МАРИЯ АЛЕКСАНДРОВНА (Кĕçĕн Шăхаль)
БОБИН ВИТАЛИЙ ЛЕОНИДОВИЧ (Аслă Елчĕк)
БОГДАНОВА ОЛИМПИАДА СТЕПАНОВНА (Лаш Таяпа)
ГОРШКОВА ЗИНАИДА ФИЛИППОВНА (Аслă Елчĕк)
ГРИГОРЬЕВ ЛЕОНИД ЛУКИЯНОВИЧ (Кивĕ Эйпеç)

ДМИТРИЕВ ГРИГОРИЙ ТИМОФЕЕВИЧ (Лаш Таяпа)
ЗАХАРОВА ЕЛИЗАВЕТА МАРТЕРЬЕВНА (Çирĕклĕ Шăхаль)
ЕВДОКИМОВА НИНА АЛЕКСАНДРОВНА (Питтĕпел)
ИШМУРАТОВ АЛЕКСЕЙ ФЕДОРОВИЧ (Патреккел)
КИРИЛЛОВА ВАЛЕНТИНА НИКОЛАЕВНА (Ёнел)
КИРИЛЛОВ НИКОЛАЙ СЕМЕНОВИЧ (Вырăскасси)
МАТВЕЕВА АВГУСТИНА САВВИЧНА (Аслă Елчĕк)
МИЛЛИНА ЕВГЕНИЯ НИКОЛАЕВНА (Патреккел)
МИРОНОВ АЛЕКСАНДР МИРОНОВИЧ (Çуткӳль)
МИСЯКОВА ГАЛИНА АЛЕКСЕЕВНА (Аслă Елчĕк)
НИКИФОРОВ МИХАИЛ ДМИТРИЕВИЧ (Элекçей Тимеш)
ОСИПОВА ОЛИМПИАДА ИВАНОВНА (Çирĕклĕ Шăхаль)
ОХОТИН АРКАДИЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ (Хăвăлçырма)
ПАВЛОВА МИМОЗА ПАВЛОВНА (Елчĕк)
ПЕЧКОВА РАДОСТЬ СПИРИДОНОВНА (Аслă Елчĕк)
ПРОХОРОВ ГЕРАСИМ ВАСИЛЬЕВИЧ (Курнавăш)
ПУШКОВ АЛЕКСАНДР ЕФИМОВИЧ (Акчел)
СВЕКЛОВА ЛЮДМИЛА МИХАЙЛОВНА (Елчĕк)
СЕРГЕЕВА ТАМАРА ИВАНОВНА (Тӳскел)
СЕРГЕЕВ ИВАН СЕРГЕЕВИЧ (Тӳскел)
СМИРНОВ АЛЕКСЕЙ ЕГОРОВИЧ (Акчел)
СТЕПАНОВА ЕЛЕНА ИВАНОВНА (Хăвăлçырма)
ТАЛЛЕРОВА ЛИДАИДА МИХАЙЛОВНА (Çĕнĕ Пăва)
ТЕРЕНТЬЕВА СЕРАФИМА АЛЕКСАНДРОВНА (Аслă Пăла Тимеш)
ХАСЯНОВА ГУЛЬСЮМ ФАТАХУТДИНОВНА (Сăрьел)
УФУКОВА ЕКАТЕРИНА АРСЕНТЬЕВНА (Ёнел)
ЩИПЦОВ ВАСИЛИЙ ВЛАДИМИРОВИЧ (Лаш Таяпа)
ЯКОВЛЕВА ПЕРАСКОВЬЯ АЛЕКСЕЕВНА (Шăмалак)
ЯСТРЕБОВА ИРАИДА НИКАНДРОВНА (Ёнел)

## ТУТАР РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔ

НОСОВА СВЕТЛАНА АРСЕНТЬЕВНА (Вăрăмхăва)

## УДМУРТ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔ

БЕЛЯЕВА АННА НИКАНДРОВНА (Елчĕк)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СЫВЛĂХА СЫХЛАС ĔҪĔН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ

КУЗНЕЦОВ АЛЕКСЕЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ (Патреккел)
КУШНИКОВА ГАЛИНА ПРОКОПЬЕВНА (Елчĕк)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ВРАЧĔСЕМ

БЕЛЯЕВА ЗИНАИДА СЕЛИВАНОВНА (Тӳскел)
ВОЛКОВ АНАТОЛИЙ НИКАНДРОВИЧ (Аслă Елчĕк)
ВОЛКОВ ЗИНОН НИКАНДРОВИЧ (Аслă Елчĕк)
ИЖЕДЕРОВА ЕВДОКИЯ ИВАНОВНА (Курнавăш)
КУЗНЕЦОВА АГАФОНИЯ ПЕТРОВНА (Вырăскасси)
КУРЧИН ИЛЬЯ ВАСИЛЬЕВИЧ (Курнавăш)
МАТВЕЕВА ЕВГЕНИЯ САВЕЛЬЕВНА (Аслă Елчĕк)
ПИРОЖКОВ АРКАДИЙ ПОЛИЕФТОВИЧ (Ҫĕнĕ Эйпеҫ)
ФИЛИППОВ ГУРИЙ ФИЛИППОВИЧ (Тăрăм)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ВЕТЕРИНАРИ ВРАЧĔСЕМ

КАЗНАЧЕЕВ ФЕДОР ИЛЬИЧ (Вăрăмхăва)
КНЯЗЕВ ПАНТЕЛЕЙМОН НИКОЛАЕВИЧ (Лаш Таяпа)
ПУПИН АРКАДИЙ ИВАНОВИЧ (Турхан)

## ТУТАР РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ВЕТЕРИНАРИ ВРАЧĔ

НИКИТИН ИВАН НИКОЛАЕВИЧ (Вăрăмхăва)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ЯЛ ХУҪАЛĂХĔН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ĔҪЧЕНĔСЕМ

АГЕЕВА ВЕРА ЯКОВЛЕВНА (Аслă Елчĕк)

АНДРЕЕВ ВАСИЛИЙ АНДРЕЕВИЧ (Кармал)
АРХИПОВ ПЕТР АРХИПОВИЧ (Тёмер)
БАКИН ИВАН МИТРОФАНОВИЧ (Кушкă)
БАСКАКОВА ЛЮДМИЛА ГЕОРГИЕВНА (Кушкă)
ВАСИЛЬЕВ ВАСИЛИЙ ИЗОСИМОВИЧ (Çěнě Пăва)
ВАСИЛЬЕВ ИВАН ВАСИЛЬЕВИЧ (Яманчӳрел)
ВАСИЛЬЕВ ИВАН ПАВЛОВИЧ (Лаш Таяпа)
ГАЛКИН АЛЕКСАНДР ИВАНОВИЧ (Тӳскел)
ГОРШКОВ ВАСИЛИЙ АНДРЕЕВИЧ (Аслă Елчěк)
ДАНИЛОВ АРДАЛИОН ЕГОРОВИЧ (Тӳскел)
ДЕНИСОВ ИВАН ЯКОВЛЕВИЧ (Шăмалак)
ДМИТРИЕВА ЕЛЕНА НИКОЛАЕВНА (Патреккел)
ДОБРОХОТОВ ПЕТР ЛЕОНИДОВИЧ (Патреккел)
ЕВПОЛОВ ВЛАДИМИР ИЛЬИЧ (Çěнě Эйпеç)
ЕМЕЛЬЯНОВА ЮЛИЯ АНДРЕЕВНА (Элпуç)
ИВАНОВ ВАНИФАТИЙ МИХАЙЛОВИЧ (Энтепе)
КАЗНАЧЕЕВА ЕЛИЗАВЕТА ДЕОМИДОВНА (Шăмалак)
КАРАМАЛИКОВ АМПЛИЙ ГЕРМАНОВИЧ (Вăрăмхăва)
КАРПОВ ХРИСТОФОР ДМИТРИЕВИЧ (Тип Тимеш)
КИРИЛЛОВ ВАЛЕРИЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Тăрăм)
КИРИЛЛОВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Яманчӳрел)
ЛАПШИНА РАИСА МИХАЙЛОВНА (Элпуç)
ЛИСОВА ЗИНАИДА АНАТОЛЬЕВНА (Шăмалак)
МИЛЛИНА КЛАВДИЯ ЕГОРОВНА (Патреккел)
МИЛЛИН НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Патреккел)
МИЛЛИН ПЕТР ВАРСОНОФЬЕВИЧ (Патреккел)
НОВИКОВ НИКОЛАЙ ТИМОФЕЕВИЧ (Кавал)
ПАВЛОВ ВАСИЛИЙ СЕРГЕВВИЧ (Кавал)
ПАВЛОВ ГЕОРГИЙ ОСИПОВИЧ (Çуткӳль)
ПАНКРАТЬЕВ ИВАН ИЛЛАРИОНОВИЧ (Кěçěн Таяпа)
ПАНКРАТОВ НИКОЛАЙ ИВАНОВИЧ (Кивě Эйпеç)
ПЕТРУШКИНА ВАЛЕНТИНА ПЕТРОВНА (Аслă Елчěк)
ПЕТРОВ ГЕРМАН АРКАДЬЕВИЧ (Яманчӳрел)
РАЗУМОВ МИХАИЛ ИЛЬИЧ (Тӳскел)
РАХИМЗЯНОВ ХАСЯН РАХИМЗЯНОВИЧ (Сăрьел)
РЫБКИН ГУРИЙ ПОРФИРЬЕВИЧ (Кушкă)
СВЕКЛОВ ВИТАЛИЙ ДЕОМИДОВИЧ (Питтěпел)
СИДОРОВ ВАСИЛИЙ НИКОЛАЕВИЧ (Тěмер)
СКВОРЦОВ ВАСИЛИЙ СЕМЕНОВИЧ (Патреккел)
СОЛИНА НИНА ВАСИЛЬЕВНА (Тěмер)

СУРКОВ АЛЕКСЕЙ ИГНАТЬЕВИЧ (Исемпел)
ФЕДОРОВ МЕФОДИЙ АЛЕКСЕЕВИЧ (Кавал)
ФИЛАТОВА МАРИЯ ФИЛИППОВНА (Елчĕк)
ХУШКИН НИКОЛАЙ ДМИТРИЕВИЧ (Аслă Елчĕк)
ЩИПЦОВ ВАСИЛИЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ (Таяпа Энтри)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔҪЛĔ АГРОНОМĔСЕМ

АХМЕТЗЯНОВ РИФКАТ ШАРИФЗЯНОВИЧ (Сăрьел)
ВОРОБЬЕВ ВЛАДИМИР ПЕТРОВИЧ (Ҫĕнĕ Эйпеҫ)
ИВАНОВ САВЕЛИЙ ИГНАТЬЕВИЧ (Лаш Таяпа)
ИЗМИН ВАСИЛИЙ ИВАНОВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
КУДРЯВЦЕВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
НАЧАРОВ ИВАН ВАСИЛЬЕВИЧ (Аслă Елчĕк)
СВЕКЛОВ ВАСИЛИЙ ГРИГОРЬЕВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
СОЧКОВ ВЛАДИМИР СЛАВЯНОВИЧ (Акчел)
ТЕПЛОВ ВАЛЕРИЙ НИКАНДРОВИЧ (Патреккел)
ТРЕМАСОВ ПЕТР ИВАНОВИЧ (Елчĕк)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ЗООТЕХНИКĔСЕМ

БАРАНОВА ГАЛИНА ГЕОРГИЕВНА (Елчĕк)
ВАСИЛЬЕВА ВЕРА ИВАНОВНА (Елчĕк)
НИКОЛАЕВ АНАТОЛИЙ КОРНИЛОВИЧ (Кавал)
ШАДРИКОВ ВАСИЛИЙ ЯКОВЛЕВИЧ (Таяпа Энтри)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔҪЛĔ ЭКОНОМИСЧĔСЕМ

АЛЕКСЕЕВА МАРГАРИТА ИВАНОВНА (Тăрăм)
ДМИТРИЕВ ПАНТЕЛЕЙМОН АНДРЕЕВИЧ (Лаш Таяпа)
КАРАМАЛИКОВА ЗИНАИДА ДМИТРИЕВНА (Ҫирĕклĕ Шăхаль)
КАРИНКИН ВЛАДИМИР ИВАНОВИЧ (Кĕҫĕн Патреккел)

МАРКОВ ПЕТР ДЕОМИДОВИЧ (Патреккел)
ПАВЛОВ НИКОЛАЙ ЛЕОНИДОВИЧ (Лаш Таяпа)
ПЕТРЯНКИНА ВАЛЕНТИНА АЛЕКСЕЕВНА (Аслă Елчĕк)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔСЕМ

АЛЕКСАНДРОВ ГЕННАДИЙ НИКИТИЧ (Вырăскасси)
АЛЕКСЕЕВ ГУРИЙ МИХАЙЛОВИЧ (Тăрăм)
АНИСИМОВ ЗИНОВИЙ АНИСИМОВИЧ (Кивĕ Эйпеç)
АНИСИМОВ ЭДИСОН ИЛЬИЧ (Шăмалак)
АРЕФЬЕВ ВАСИЛИЙ ИВАНОВИЧ (Лаш Таяпа)
БОГДАНОВ ВЕНИАМИН КСЕНОФОНТОВИЧ (Кивĕ Арланкасси)
ВАСИЛЬЕВ ВАСИЛИЙ ЗАХАРОВИЧ (Аслă Таяпа)
ВАСИЛЬЕВ НИКОЛАЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Лаш Таяпа)
ВАСИЛЬЕВ НИКОЛАЙ ГРИГОРЬЕВИЧ (Кармал)
ВЕНЕДИКТОВ ГЕОРГИЙ ПЕТРОВИЧ (Вырăскасси)
ГИЗАТУЛЛИН ЛЕТФУЛЛА САБИРОВИЧ (Сăрьел)
ГОРДЕЕВ ВИТАЛИЙ ЗИНОНОВИЧ (Хĕрлĕçыр)
ГОРДЕЕВ ЗИНОН ИЛЬИЧ (Хĕрлĕçыр)
ГРИГОРЬЕВ НИКОЛАЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Элпуç)
ДМИТРИЕВ АЛЕКСЕЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ (Лаш Таяпа)
ЕРЕМЕЕВ ПЕТР ИВАНОВИЧ (Аслă Таяпа)
ЗАББАРОВ ИМАМ ГИМАЛЕТДИНОВИЧ (Сăрьел)
ИВАНОВ ПЕТР АЛЕКСЕЕВИЧ (Кавал)
КАРЛИН ФЕДОР СЕМЕНОВИЧ (Аслă Елчĕк)
КОСТИН ВАЛЕРИЙ ПЕТРОВИЧ (Кивĕ Арланкасси)
КРАСНОВ АЛЕКСАНДР СЕМЕНОВИЧ (Шăмалак)
КУЗНЕЦОВ ВИКТОР АЛЕКСАНДРОВИЧ (Çирĕклĕ Шăхаль)
ЛАВРОВ СТЕПАН ИВАНОВИЧ (Тип Тимеш)
МАКСИМОВ ВЛАДИМИР СТЕПАНОВИЧ (Вырăскасси)
МИЛЛИН НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Патреккел)
МИРОНОВ АЛЕКСЕЙ ЕГОРОВИЧ (Таяпа Энтри)
МИХАЙЛОВСКИЙ ИВАН АЛЕКСЕЕВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
МУСТАЕВ НИКОЛАЙ НИКАНДРОВИЧ (Çĕнĕ Эйпеç)
МЫШКИН ВЛАДИМИР МАТВЕЕВИЧ (Кушкă)
ОВЧИННИКОВ НИКОЛАЙ ИВАНОВИЧ (Аслă Таяпа)
ПАВЛОВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Яманчурел)

ПАВЛОВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Яманчурел)
РАЙКОВ ВИТАЛИЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Аслă Елчĕк)
САПОЖНИКОВ АЛЕКСАНДР ВАСИЛЬЕВИЧ (Тĕмер)
СОЛОВЬЕВ НИКОЛАЙ ПАВЛОВИЧ (Кавал)
СОСНОВ СЕРГЕЙ ВАСИЛЬЕВИЧ (Аслă Елчĕк)
СУРКОВ АЛЕКСЕЙ ЛЕОНИДОВИЧ (Хăвăлçырма)
УКАЗОВ АНДРЕЙ АЛЕКСЕЕВИЧ (Акчел)
ФАСХУТДИНОВ ФЕРИД РАХИМОВИЧ (Сăрьел)
ФИЛИМОНОВ НИКОЛАЙ ВЛАДИМИРОВИЧ (Патреккел)
ЧЕРНОВ ГЕННАДИЙ ЗИНОНОВИЧ (Патреккел)
ЯКОВЛЕВ ПЕТР ИВАНОВИЧ (Кивĕ Эйпеç)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ

ВАСИЛЬЕВ РОБЕРТ МИХАЙЛОВИЧ (Аслă Пăла Тимеш)
КОЖЕВНИКОВ НИКОЛАЙ ИВАНОВИЧ (Кивĕ Эйпеç)
КУДРЯШОВ СЕРГЕЙ АЛЕКСАНДРОВИЧ (Патреккел)
СТАНКОВ АЛЕКСЕЙ КОНСТАНТИНОВИЧ (Елчĕк)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔСЕМ

АРХИПОВ КОНСТАНТИН ЕВДОКИМОВИЧ (Çирĕклĕ Шăхаль)
БАГАДЕРОВ ВЛАДИМИР ИВАНОВИЧ (Тăрăм)
КИРИЛЛОВ НИКОЛАЙ ПЕТРОВИЧ (Яманчӳрел)
ЛАСТОЧКИН ПЕТР ВЛАДИМИРОВИЧ (Аслă Елчĕк)
МОРОЗОВ ВАСИЛИЙ ИВАНОВИЧ (Таяпа Энтри)
ПАВЛОВ АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ (Кавал)
СКВОРЦОВ АНАТОЛИЙ НИКИТИЧ (Тăрăм)
СМИРНОВ АРДАЛИОН ЕГОРОВИЧ (Акчел)
ЧЕРНОВ ВЛАДИМИР АЛЕКСАНДРОВИЧ (Тӳскел)
ЧЕРНОВ ЛЕОНИД МАКАРОВИЧ (Аслă Елчек)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СВЯЗИСЧĔСЕМ

БАГАУТДИНОВ АЗАТ МАРАТОВИЧ (Сăрьел)

КОНДРАТЬЕВ ПЕТР ЕФРЕМОВИЧ (Лаш Таяпа)
ПЕТРОВ ИЛЬЯ ЕГОРОВИЧ (Патреккел)

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ҪӖР ЙӖРКЕЛӲҪИ

ВАСИЛЬЕВ ГЕННАДИЙ АЛЕКСЕЕВИЧ (Питтӗпел)

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ХАЛӐХ ЫЙТӐВНЕ ТИВӖҪТЕРЕС СФЕРӐН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪЧЕНӖ

АГЕЕВА РАИСА ВАСИЛЬЕВНА (Аслӑ Елчӗк)

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ФИЗКУЛЬТУРӐПА СПОРТӐН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ӖҪЧЕНӖСЕМ

АТАМАНОВ БОРИС НИКОЛАЕВИЧ (Курнавӑш)
ИГНАТЬЕВ АРДАЛИОН ВАСИЛЬЕВИЧ (Ёнел)
УБАСЕВ АНАТОЛИЙ ПЕТРОВИЧ (Аслӑ Елчӗк)

## ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВӖҪЛӖ ТРЕНЕРӖСЕМ

ИЛЬИН ВИТАЛИЙ ГЕОРГИЕВИЧ (Элекҫей Тимеш)
ШЕПИЛОВ НИКОЛАЙ ГЕННАДЬЕВИЧ (Кӗҫӗн Таяпа)

## СССР ПАТШАЛӐХ ПРЕМИЙӖН ЛАУРЕАЧӖСЕМ

МИНАЧЕВ ХАБИБ МИНАЧЕВИЧ (Пикшик)
СУРКОВ АЛЕКСЕЙ ИГНАТЬЕВИЧ (Исемпел)

## ЛЕНИН ЯЧӖЛЛӖ ПРЕМИ ЛАУРЕАЧӖ

ПЕРЕПЕЛКИН ИВАН АЛЕКСЕЕВИЧ (Ҫирӗклӗ Шӑхаль)

## ТУТАР РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ ПРЕМИЙĔН ЛАУРЕАЧĔ

НИКИТИН ИВАН НИКОЛАЕВИЧ (Вăрăмхăва)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇАМРĂКСЕН ПАТШАЛĂХ ПРЕМИЙĔН ЛАУРЕАЧĔ

ТРОФИМОВ ВЯЧЕСЛАВ ВЛАДИМИРОВИЧ (Тăрăм)

## “КАПКĂН» ЖУРНАЛĂН ИВАН МУЧИ ЯЧĔЛЛĔ ПРЕМИ ЛАУРЕАЧĔ

МАРКОВ АНАТОЛИЙ ВЕНИАМИНОВИЧ (Ĕнел)

## С.ЭЛКЕР ЯЧĔЛЛĔ ЧР ЖУРНАЛИСЧĔСЕН ПĔРЛЕШĔВĔН ПРЕМИЙĔН ЛАУРЕАЧĔ

СМИРНОВА НАДЕЖДА ГЕОРГИЕВНА (Яманчӳрел)

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУЗЫКА ОБЩЕСТВИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ

ГОРШКОВА МАРИЯ ВАСИЛЬЕВНА (Энтепе)
ДАНИЛОВ ЛЕОНИД ИВАНОВИЧ (Елчĕк)
ЗАХАРОВ ВЯЧЕСЛАВ ГЕРМАНОВИЧ (Анатри Тимеш)
МИЛЛИН БОРИС АЛЕКСАНДРОВИЧ (Патреккел)
МОСКОВСКАЯ ГАЛИНА ТРОФИМОВНА (Аслă Пăла Тимеш)
ПАВЛОВА ЗИНАИДА ПЕТРОВНА (Елчĕк)
ПИТЕРКИНА АНТОНИНА ВАСИЛЬЕВНА (Аслă Пăла Тимеш)
ТЕРЕНТЬЕВА СЕРАФИМА АЛЕКСАНДРОВНА (Аслă Пăла Тимеш)
ЯСТРЕБОВА МАРИЯ ВАСИЛЬЕВНА (Акчел)

---

Асăрхаттарни: Тава тивĕçлĕ ят илнисене, маларах асăннă пирки, списока кĕртмен.

## ТУПМАЛЛИ


УМСĂМАХ ........ 4

**ÇЫРАВÇĂСЕМ** ........ 7
Алексеев Борис Алексеевич ........ 7
Андреев Олег Федорович ........ 9
Афанасьев Петр Онисимович ........ 11
Волков Геннадий Никандрович ........ 14
Доброхотов Николай Сергеевич ........ 17
Ефимов Антон Ефимович ........ 18
Ефимов Дмитрий Ефимович ........ 19
Жирнов Анатолий Васильевич ........ 21
Иванов Алексей Иванович ........ 23
Иванов Юрий Петрович ........ 25
Кадышев Михаил Семенович ........ 26
Кедров Николай Михайлович ........ 28
Комиссаров Валерий Петрович ........ 30
Кузнецов Григорий Иванович ........ 32
Кузнецов Иван Герасимович ........ 34
Кузнецов Иван Данилович ........ 35
Миллин Александр Георгиевич ........ 38
Молоствов Ефим Михайлович ........ 39
Николаева Антонина Арсентьевна ........ 41
Петров Валерий Михайлович ........ 43
Прокопьев Николай Алексеевич ........ 44
Разумов Алексей Емельянович ........ 45
Семенов Георгий Семенович ........ 46
Сидоров Василий Петрович ........ 47
Сидоров Петр Петрович ........ 49
Степанов Анатолий Игнатьевич ........ 51
Тимофеев Анатолий Артемьевич ........ 53
Тихонов Борис Леонтьевич ........ 55
Турхан Хĕветĕрĕ ........ 57
Турхан Энтри ........ 59
Турхан Яккăвĕ ........ 61
Чекушкина Елена Петровна ........ 63
Щипцов Павел Семенович ........ 65
Федорова Любовь Михайловна ........ 67

**СЦЕНА ĂСТИСЕМ** ........ 69
Адюков Виталий Иванович ........ 69

Бикулова Мария Григорьевна ........ 71
Борисов Геннадий Арсентьевич ........ 73
Голубева Вера Ивановна ........ 75
Горшкова Мария Александровна ........ 77
Димитриев Валерий Георгиевич ........ 78
Карлин Николай Сергеевич ........ 79
Корчакова Светлана Васильевна ........ 81
Молодов Игнатий Осипович ........ 83
Музыкантова Валентина Ивановна ........ 86
Павлов Сергей Александрович ........ 88
Стахеева Клавдия Стахеевна ........ 90
Шакова Лидия Александровна ........ 91
Щипцова Галина Васильевна ........ 93
Христофоров Вячеслав Васильевич ........ 94
Христофоров Иван Иванович ........ 95

**ӲНЕРҪӖСЕМ** ........ 97
Агеев Владимир Иванович ........ 97
Андреев Юрий Ананьевич ........ 100
Балтай Микуҫ ........ 102
Демидов Андрей Демидович ........ 103
Дмитриев Иван Васильевич ........ 105
Ксенофонтов Олег Иванович ........ 107
Ксенофонтов Юрий Иванович ........ 108
Максимов Николай Петрович ........ 110
Моисеев Борис Пименович ........ 112
Мясников Александр Федорович ........ 114
Петров Петр Варфоломеевич ........ 117
Питеркин Васиян Евстафьевич ........ 119
Пупин Георгий Степанович ........ 120
Пупин Петр Степанович ........ 121
Шаркова Татьяна Васильевна ........ 123
Ятманов Николай Осипович ........ 125

**ХАЛĂХ КОЛЛЕКТИВӖСЕМ** ........ 126
Патреккелӗнчи халăх хорӗ ........ 126
Районти культура ҫурчӗ ҫумӗнчи халăх театрӗ ........ 126
Елчӗк енӗн историпе тăван тавралăх халăх музейӗ ........ 127
Курнавăшри историпе тăван тавралăх халăх музейӗ ........ 127

**Хушса пани** ........ 128

## АВТОРТАН

Паянхи ахăр самана нумайăшĕн ыр кăмăллăх туйăмне сивĕтмен-ха. Пултарулăх ĕçне парăннисем, культура аталанăвĕшĕн ăнтăлакансем иксĕлменни чун-чĕрере шанăç хăварать. Çак кĕнеке çавнашкаллисен пулăшăвĕпе тухрĕ. Ырă ĕç тăвакансене кулленхи пурнăçра çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп. Ĕмĕтленни, палăртни пурнăçланса пытăр.

**Вĕсем**:

АФАНАСЬЕВ Валерий Варсонофьевич (Елчĕк районĕ, Тăрăм) — предприниматель.

АХМЕРОВ Владимир Николаевич — Елчĕкри «Промсервиз» хупă акционерлă общество директорĕ.

ВАСИЛЬЕВ Геннадий Васильевич — Мускаври «Мосбетонстрой» фирма специалисчĕ.

ВАСИЛЬЕВ Роберт Михайлович — Шупашкарти тулли мар яваплă «Фирма Голд» общество директорĕ.

ГЕРАСИМОВ Владимир Семенович — Çĕрпӳри «Орбита» хупă акционерлă общество директорĕ.

КИРИЛЛОВ Валерий Васильевич — Елчĕк районĕнчи «Рассвет»ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи.

КНЯЗЕВ Николай Пантелеймонович — Елчĕк районĕнчи «Слава» ял хуçалăх производство кооператив ертӳçи.

КОЗЛОВ Владимир Никитович — Мускаври Бауман ячĕллĕ аслă техника училищин преподавателĕ.

КОМИССАРОВ Валерий Петрович — Чăваш Республикин Журналистсен пĕрлешĕвĕн председателĕ.

КУДРЯШОВ Сергей Александрович — Елчĕкри «Чувашьенкрахмал» предприятин генеральнăй директорĕ.

ПОРТНОВ Владимир Ильич — Елчĕк районĕнчи «Була» ял хуçалăх производство кооператив ертӳçи.

КОЗЛОВ Валерий Михайлович (Елчĕк районĕ, Çĕнĕ Тĕмер) — предприниматель.

САРДАЕВ Виталий Петрович (Елчĕк районĕ, Акчел) — предприниматель.

СКВОРЦОВ Михаил Никитич — Шупашкарти “Стройтрест» механизаци участокĕн начальникĕ.

СМИРНОВ Юрий Аврамович — «Елчĕкри сыр туса кăларакан завод» акционерлă общество директорĕ.

ТИХОНОВ Виталий Ильич — Елчĕк районĕнчи Тăрăмри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта ĕçлекен.

ФЕДОРОВ Гурий Иванович — Елчĕк районĕнчи «Комбайн» ял хуçалăх производство кооператив ертӳçи.

СОЛИН Геннадий Петрович — Чапаев фончĕн директорĕ.

ТРОФИМОВ Вячеслав Владимирович — Чăваш Республика Президенчĕн Администрацийĕн сотрудникĕ.

**Малышкин Н. Ф.**

**Елчӗк енӗн пултарулӑх ҫыннисем**

На чувашском языке

Редактор **А. А. Николаева**
Оригинал-макет **Л. С. Митрюхиной**
Корректор **В. П. Малышкина**

Сдано в набор 31.03.2000 г. Подписано в печать 28.04.2000 г.
Формат 60х84/16 Гарнитура Journal Chv. Печать офсетная.
Бумага офсетная. Усл. печ. л. 8,37. Уч.-изд. л. 5,77.
Тираж 1000 экз. Заказ № 798.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в РГУП «Цивильская типография»

## ТӲРЛЕТНИ

| Йӑнӑшсем | Страница | Йӗрке | Вуламалла |
|---|---|---|---|
| стаья | 24 | 11 ҫӳлтен | статья |
| республикӑра | 30 | 9 ҫӳлтен | республикӑри |
| мӗнлн | 36 | 17 аялтан | мӗнле |
| Хӳветӳрӳн | 57 | 4 ҫӳлтен | Хӗветӗрӗн |